# Сунтал



ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЙУЗĔН УЙĂХРА ПĔРРЕ ТУХСА ТĂРАКАН

ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂ, КРИТИКĂ *тата* ИСКУССТВĂ ЖУРНАЛĔ

12

ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1938

# „СУНТАЛ“

**Чăваш совет писателĕсен Сойузĕн уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литературă, критикă тата искусствă ЖУРНАЛĔ.**

# „СУНТАЛ“

Чăваш Республикинчи тата республикă тулашĕнчи мĕнпур литературă вăйĕсене пĕрлештерсе тăрат. Çамрăк писателсене сырма пулăшса, вĕсен произведенийĕсене хăйĕн страницисем çинче пичетлесе пырат.

***1939 çулшăн тухакан „СУНТАЛ“ журнала çырăнса илĕр!***

## „СУНТАЛ“ ХАКĔ:

Пĕр уйăха—1 тенкĕ
Виçĕ уйăха—3 тенкĕ
Ултă уйăха—6 тенкĕ
Вуникĕ уйăха—12 тенкĕ.

**„СУНТАЛ“** журнала республикăри пур почтă уйрăмĕсенче те çырăнса илме пулат. Республикă тулашĕнче пурăнакан подписчиксен подпискă укçине тÿрех çак адрĕспа куçармала:

*г. Чебоксары, Чувашская АССР,*
*Дом Связи, Чувашской конторе „Союзпечать“*

## Пирĕн журнала вулакансем!

„Сунтал“ журнала мĕнле лайăхлатассине, унăн тематикине аслăлатассине, унта мĕнле уйрăмсем тăвассине сирĕнтен ыйтса пĕлсе, сирĕн урлă кăна пурнăça кĕртме пулат.

Журнал пирки редакци сирĕн шухăшăра пĕлесшĕн.

1938 çулшăн тухнă „Сунтал“ номĕрĕсенче пичетленнĕ мĕнле калавсем, мĕнле пĭесăсем, мĕнле сăвăсем сире ытларах килĕшрĕç, „Сунталра“ мĕнле уйрăмсем кирлĕ,—çаксем çинчен редакцине çырса пĕлтерĕр.

Журнала лайăхлатас ĕçре сирĕн шухăшăрсемпе сĕнĕвĕрсем пирĕншĕн питех те хаклă пулĕç.

15-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Сунтал

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЙУЗĔН УЙĂХРА ПĔРРЕ ТУХСА ТĂРАКАН ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂ, КРИТИКĂ ТАТА ИСКУССТВĂ ЖУРНАЛĔ

№ 12 (164)

ДЕКАБĔР, 1938

# ССР СОЙУЗĔН СТАЛИНЛА КОНСТИТУЦИЙĔ—ОКТАБĔРТИ СОЦИАЛИСĂМЛА РЕВОЛЮЦИ КĔРЕШĔВĔПЕ ÇĔНТЕРĔВĔСЕН ИТОГĔ. СОЦИАЛИСĂМ ÇĔНТЕРĔВĔН ТАТА РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН ДЕМОКРАТИН КОНСТИТУЦИЙĔ СЫВĂ ПУЛТĂР!



Ӳкерчĕк çинче: Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сйесĕнче И. В. СТАЛИН йулташ ССРС Конституци проекчĕ çинчен доклад тăвать.

*Лоскутов фото-ӳкерчĕкĕ.*

врачсем—17 пин ҫын кӑна пулнӑ. Ун вырӑнне вара пупсемпе чиркӳ ҫыннисем кӗтӗвӗпех пулнӑ, вӗсен хисепӗ (295 пин ҫын) учитӗлсен йышӗнчен тӑватӑ хута йахӑн иртнӗ.

Телейлӗ совет ҫӗршывӗнче Партипе Правитӗлствӑ халӑха ҫутта кӑларассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗренӳ правине пурнӑҫа кӗртме кирлӗ условисене пирӗн ҫӗршывра пурне те тунӑ.

Чӑваш республикинчи шкулсенче халӗ 184,5 пин ача, тӗрлӗрен специалистсем хатӗрлекен училишчӑсенче 7,7 пин ҫын вӗренеҫҫӗ.

Ӗлӗкхи вӑхӑтра чӑваш ӗҫҫыннисем аслӑ шкулсенче вӗренесси ҫинчен ӗмӗтленме те пултарайман пулсан, халӗ Чӑваш республикинче кӑна аслӑ шкулсем виҫҫӗ.

„Рабочи класӑн культурӑлӑ-техникӑлӑ пӗлӗвне инженерла-техникла работниксен пӗлӗвне ҫити хӑпартас“ (Сталин) задачӑ пирӗн ҫӗршывра ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗрсе пырат. Ӗҫ—пӗтӗм совет халӑхӗ интеллигентлӑ пуласси патнеле пырат. Станок умӗнчи ӗнерхи стаханӑвӗҫ—пайан савӑт директӑрӗ, ӗнерхи комбайнер — пайан МТС механикӗ, ӗнерхи дойаркӑ—пайан аслӑ шкул студенчӗ.

Совет интеллигенчӗ тӗнчере нихӑҫан пулман вӗҫевсем тӑват, Арктикӑна ҫӗнтерет, куҫакан пӑр ҫинче ӑслӑлӑх ӗҫне туса пырат, Ӑслӑлӑх Академинче етем ӗмӗр не тӑсас проблемӑна тӗпчет, колхоз сатпахчинче ҫӗнӗ суртлӑ йӑвӑҫсем сыпса кӑларат, стратосферӑна хӑпарат, океан тӗпне анат, Верховнӑй Советра государствӑ ӗҫне тӑват. Совет интеллигенчӗн шухӑшӗпе ӗҫӗ пӗр-пӗринчен уйӑрӑлса тӑмаҫҫӗ. Унӑн фантазиле шухӑшӗсем большевикла ӑнӑҫлӑхпа пурнӑҫа кӗрсе пыраҫҫӗ.

Парти Тӗпкомӗ совет государствинче интеллигенци мӗн пек пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартса парса, хамӑр интеллигенци ҫине йӗрӗнсе пӑхасси халӗ те пӗтменнине хыттӑн асӑрхаттарса паллӑ тӑват.

Чӑваш республикинче нумай ҫулсем хушши пуҫ пулса тӑнӑ халӑх тӑшманӗсем—троцкистсемпе бухаринецсем, буржуалӑ националистсем интеллигенцин чӑваш халӑхӗнчен тухнӑ кадрӗсене пӗтерес тесе сахал мар сӑтӑрла ӗҫсем тунӑ. Писатӗлсен Сойузне ҫав ирсӗр сутӑнчӑксем аркатса йарас патнех илсе ҫитернӗ.

Писатӗлсем хушшинче политикӑла ӗҫе йапӑхтарни ӗнтӗ идейӑлӑ воспитанисӗр йулнӑ писатӗлсенчен пӗр пайне политикӑран пӑрӑнса кайасси патне, йутҫӗршыв разведкисемпе вӗсен троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ-националисла агентурин аллине лекесси патне илсе пынӑ.

ПСК(б) Парти Тӗпкомӗн постановленийӗ интеллигенци ҫине ҫакнашкал „махайевла“, Ленина хирӗҫле пӑхассине пӗтерме хушат.

Совет интеллигенцине, совет писатӗлӗсене марксисла-ленинла ҫирӗп воспитани пани кирлӗ.

Парти Тӗпкомӗ ку задачӑна питӗ пысӑк вырӑна хурса, ҫапла кӑтартса парат:

„Парти организацисен пропагандӑ йенӗпе тӑракан пӗрремӗш черетри тата тӗп задачи тесе — партире тӑракан тата партире тӑман интеллигенци теорипе политикӑ тӗлӗшӗнчен кайа йулнине пӗтересси пулат тесе шутлас, совет интеллигенцине большевисӑма вӗренсе аллӑ илес, ПСК(б)П историне тата марксисӑм-ленинисӑм классикӗсен произведенийӗсене вӗренес ӗҫре пур майсемпе те пулӑшса пымала“.

Пирӗн парти пире вӗренме пулӑшат. Пирӗн писатӗлсен „ПСК(б)П Историн Кӗске курсӗпе“ Маркс—Енгӗльс—Ленин—Сталин произведенийӗсене тытса, алла кӑрандаш илсе, большевисӑм теорине большевикла тимлӗхпе вӗренме пуҫламала.

Пирӗн писатӗлсенчен кашни харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренме пултарат. Писатӗлсен Сойузӗн правленин писатӗлсем вальли сойузра лайӑх консультаци организацилемеле, йӗркелӗн лекцисем туса иртермеле. Уйрӑм писатӗлсем хулара пулса иртекен лекцисенчен пӑрӑнма пӑхаҫҫӗ, ку йӑлана пӑрахӑҫа кӑлармала. Чӑннипех те вӗренме ҫунакан писатӗл вӗренӳре пур майсемпе те усӑ курма тӑрӑшат.

„ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсне“ вӗренсе, епӗр марксисӑм-ленинисӑм теорипе хӗҫпӑшалланапӑр, хамӑр произведенисен философиле тарӑнӑшне аслӑлатӑпӑр, художествӑлӑ пахалӑхне ӳстерӗпӗр.

Пирӗн литературӑра совет государствин культурӑлӑ пуйанлӑх фондне кӗме тивӗҫлӗ пулакан произведенисемшӗн кӗрешмеле. Марксисӑм-ленинисӑм идейипе пӗтӗҫсе пулнӑ произведенисем ҫеҫ пирӗн совет халӑхӗн аллинче чӑн-чӑн ҫивӗчӗ хӗҫпӑшал пулса тӑрӗҫ.

Епӗр хамӑрӑн произведенисемпе совет халӑхне коммунисӑм тума пулӑшмала, коммунисӑмла обшчӗствӑ членне пӑхса ҫитӗнтерессишӗн ӗҫлемеле.

● ◆ ●

*АЛЕКСАНДР АЛКА*

## *Ман чӗрере чи ырӑ йурӑ*

Ҫанталӑк тумӗ ҫурхи сат пек шурӑ,
Хӗвеллӗ йур йӑлтӑртатат умра,
Ман чӗрере халь чи илемлӗ йурӑ,
Чи капӑр ҫуркунне ман чунӑмра.

Пайан еп ҫирӗм пиллӗкре, атсемӗр!
Ӑста пӑхам: хыҫа-ши, йе мала?
Ҫук, шӗл-кӑвар чӗрелӗ ҫамрӑк ӗмӗр
Ӗмӗтленме кӑна хушат мана.

Тавах, Октябӗр—ӑраскаллӑ шуҫӑм!
Мухтав сана, йӑлтӑр хӗвеллӗ ир!
Ес халалланӑ пурнӑҫпа ҫеҫ уҫҫӑн
Хайлатпӑр савӑк йурӑсем епир.

Йурланӑ йурӑ хӗмленсе шӑрантӑр!—
Тейетӗп епӗ, витерсе хама,—
Ҫӗршывшӑн тивӗҫ пултӑр, ан вӑтантӑр
Илемлӗ пурнӑҫ умӗнче тӑма.

Йурланӑ йурӑ пултӑр ҫӗнтерӳлӗ.
Маттур вӗҫевҫӗ-тантӑшпа пӗрле
Вӑл пӗрлӑ тусем урлӑ ҫӳлӗ
Ҫӗклентӗр хурҫӑ кайӑк йӗвӗрлех!

Йурланӑ йурӑ кӗвввипе мӑнаҫлӑ,
Вайхаллӑ тинӗсре хускалтӑр хум.
Ун кӗвввине илтсе, ҫӗршывӑн аслӑ
Уйхирӗ тӑхӑнтӑр чи чаплӑ тум.

Пӑчӑ ҫулла та, шартлама хӗлле те
Сӳнмест никам ҫӗнми кӑварлӑ сас.
Йурланӑ йурӑ тӑшмана тӗллетӗр,
Хӗрлӗ Армейӗн ҫумӗнче тӑрса.

Ей, ӗмӗт, ӗмӗт! Ес ытла та шух-тӑр.
Кам каламасӑр йулӗ ҫаксене:
Йурланӑ йурӑ йуратмашкӑн хуштӑр
Чунсавнисен вӗри чӗрисене.

Пайан еп ҫирӗм пиллӗкре, атсемӗр!
Нумай-ха тумали, ӗҫсем нумай.
Ей, ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсем, ҫитсемӗр!—
Тейетӗп еп хама ӗненнӗ май.

Ҫампа та чӗремре—чи ырӑ йурӑ,
Чи капӑр ҫуркунне ман чунӑмра.
Ҫанталӑк тумӗ ҫурхи сат пек шурӑ,
Хӗвеллӗ йур йӑлтӑртатат умра.

1938 ҫ.

# ВАЛЕРИЙ ПАВЛĂВИЧ ЧКАЛĂВ



## *ПРАВИТĔЛСТВА ПĔЛТЕРНИ*

ССР Сойузĕн правитĕлстви епĕр пурăнакан вăхăтри Аслă лӗотчик, Совет Сойузĕн Геройĕ ВАЛЕРИЙ ПАВЛĂВИЧ ЧКАЛĂВ çĕнĕ самолӗота сăнанă чухне çак çулхи декабĕрĕн 15-мĕшĕнче вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

---

**ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ хурланса пĕлтерни**

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ ВАЛЕРИЙ ПАВЛĂВИЧ ЧКАЛĂВ йулташ çемйине Совет Сойузĕн Геройĕ Чкалăв йулташ вилнĕ пирки хуйхăрни çинчен пĕлтерессĕ.

## *Чкалăва асăнса*

Хумханчĕ, хускалчĕ халăх,
Хурлăх кашнин чĕринче:
Пиртен уйăрлаӗ Чкалăв
Декабĕрĕн хĕл сиввинче...

Пиртен уйăрлаӗ Чкалăв—
Боец, гражданин, командир.
Мĕн-ши пайан еп калăп
Шартлама хыпар илтнĕ çак ир?

Мĕн-ши пайан еп калăп?..
Сĕм хуйхă ăшне еп путап.
Çук пирĕнпе тек Чкалăв—
Вĕçевçĕ, герой, депутат.

Çук пирĕнпе тек Чкалăв—
Сталин ӳстернĕ йулташ...
Хуллен усăнаӗ алă.—
Йалавсем усăнаççĕ йăлтах.

Хуллен усăнаӗ алă,
Хуллен еп усап пуçăма.
Сан пек пулмашкăн, Чкалăв,
Епĕр паратпăр сăмах.

Сан пек пулмашкăн, Чкалăв,
Тупа тăватпăр пайан.
Манмĕ сана пирĕн халăх,
Асăнĕ ĕмĕр, йалан.

Манмĕ сана пирĕн халăх,—
Сӳнмеççĕ хĕвеллĕ йатсем.
Малала епĕр утăпăр, Чкалăв,
Сан йатна та йалав пек йатса.

ИВАН ИВНИК.

---

## ВАЛЕРИЙ ЧКАЛĂВ

Атăл тăрăх чăрсăр çил йуртаӗ те,
Чĕтренетçке мĕскĕнĕн хăва.
Çил йуртаӗ, анчах та вăл туйаӗ-и,—
Мĕнле хуйхă тиврĕ çĕршыва?

Ирхи сывлăшпа сывларĕ уççăн
Йурпала пасарнă Шупашкар.
Çак ирпе салхулă кăвак шуçăм
Илчĕ-килчĕ хуйхăлă хыпар.

Ман çĕршывăм, тĕнчипе вăл паллă,
Хисепре ун ывăлĕ ку чух.
Епĕр—вăй! Анчах Валерий Чкалăв,
Харсăр паттăр пирĕнпеле çук.

Йумахри герой, мухтавлă Чкалăв,
Мĕлйунсемшĕн унăн ĕçĕсем.
Ун çинчен хулан, колхозлă йалăн
Хĕрĕсем хываççĕ йурăсем.

Манмĕ ĕмĕрне телейлĕ халăх
Хаклă та тăванлă çак йата.
Тухмĕ манăçа мухтавлă Чкалăв—
Пирĕнтен пĕррĕмĕш депутат.

**В. ЙЕРЕМЕЙĔВ.**

ДЕКАБĔРĔН 1-МĔШĔНЧЕ ФАШИСТЛА ШПИОНСЕН ТРОЦКИСЛА-БУХАРИЛНА БАНДИ КОММУНИСĂМШĂН ХĔРŸЛĔ КĔРЕШЕКЕНЕ ТАТА ХАЛĂХ ТРИБУННЕ ÇЕРГЕЙ МИРОНĂВИЧ КИРĂВА ТИСКЕРРĔН ВĔЛЕРНĔРЕНПЕ ТĂВАТĂ ÇУЛ ТУЛТАРЧĔ



**ÇЕРГЕЙ МИРОНĂВИЧ КИРĂВ**

*Зверĕв художник картинĕ. Секке Йанов фото-ÿкерчĕкĕ.*

*Леонид Агакăв*

# ÇУНАТЛĂ ХĔР

— Еппин, сирĕн еп йепле майпа пилот пулни çинчен пĕлес килет?..

Горькинчен Мускавала кайакан пуйăс çинче манпа пĕр куппере пыракан пĕчĕкрех пÿлĕ, тулли питлĕ хĕр, аллинчи хулăм кĕнекене айаккала хучĕ те, ман куçран пăхрĕ.

— Вăл питĕ интереслĕ пулмала,—терĕм епĕ.— Йепле пулсан та, пайан куна сывлăшра вĕçекен хĕрарăмсем нумайах марçке... Çитменнине... (еп кăштах чарăнса тăтăм) ес чăваш хĕрĕ...

Хĕр кăмăллăн кулса илчĕ.

— Ну, вырăсĕ-чăвашĕ вăл пурĕпĕр, мĕншĕн тесен халĕ расналăх çук, анчах вĕçекен хĕрарăмсем халлĕхе пит нумайах марри çинчен есĕр тĕрĕс каларăр...

— Ÿркенместĕр пулсан, каласа кăтартсамăрччĕ еппин.

Ку хĕрпе епĕр Шупашкартан пăрахутпа хăпарнă чухнех паллашрăмăр. Иккĕмĕш клас салонĕнче вăл пианино çинче выљаса ларатчĕ. Еп ун патне пырса тăтăм. Пĕр-ик кĕвĕ выљаса илсен, вăл манран Горькирен Мускавала пуйăс хăш вăхăтра кайасси çинчен ыйтрĕ. Пирĕн паллашу çавăнтан пуçланса карĕ те вара.

— Есĕр Мускава кайатăр-и?

— Мускава мар та, Мускав урлă... А есĕр?

— Çавăнта...

— Ну, апла пулсан—пĕрле.

Сăмах хыççăн сăмах; ку хĕр чăваш иккен (куна вăл хăй каларĕ, калаçнинчен пĕлме май çукчĕ), йачĕ—Настă, комсомолкă, вĕренме кайат. Кăвак берет, вĕçевçĕ гимнасторки тăхăннă, хурарах сăнлă, кăшт каççăртарах сăмсала, пит çивĕч калаçакан хĕрача. Еп йепле пулсан та ун çинчен ыйтса пĕлес,

терĕм, анчах пăрахут Горькине çитсе тухнă пирки, пирĕн хушăмăрта пуçланнă калаçу татăлчĕ. Пуйăс çине вырнаçса ларсан вара еп хамăрăн калаçăва каллех тапратрăм. Кăштах турткаланса тăнă хыççăн (хĕрсен вăл йăла пурах ĕнтĕ), Настаç хăй çинчен каласа пама килĕшрĕ. Ун калавне епĕ хаҕ вулакансене каласа парас тетĕп...

* * *

1929 çул... Çулла. Йанкăр уйар тӳперен хĕвел çунтарать. Пăчă, шăрăх. Хурăнкасси йалçыннисем çине тăрсах тырă выраççĕ. Тырри пулса çитнĕ ĕнтĕ, темиçе кун вăраха йарсан тăкăнма та пуçламала. Çавăнпа та çынсем васкаççĕ, йепле пулсан та часрах пĕтересшĕн...

Вăрман хĕрринчи пĕр ансăр ана çинче виççĕн выраççĕ: арçынпа хĕрарăм, тата пĕр вуникĕ çулхи хĕрача. Вырнăçемĕн арçынĕ час-часах мăкăртатса илет:

— Пайан ку анана пĕтересчĕ... Вара леш салтак варĕ пуçĕнчи çеç йулать. Васка, Настаç, васка, хĕрĕм...

Настаç ашшĕ каламасăрах васкать, амăшĕпе тан пыма тăрăшать. Вăл такçанах ывăннă ĕнтĕ, унăн пилĕкĕ ыратать, анчах вăл ун çинчен шарламасть, сайра ыраша касать те касать... Сасартăк вăл: ай!—тесе кăшкăрса йачĕ те, аллинчи çурлине пăрахрĕ ..

— Мĕн пулчĕ?—ыйтрĕç унтан ашшĕпе амăшĕ пĕр харăс.

— Пӳрнене...—макăрса йачĕ Настаç. Хăйĕн сулахай аллинчен шăпăртатса йун йухать.

Амăшĕ часрах çĕртен тăпра илсе хĕрĕн кача пӳрнине хупласа лартрĕ, унтан кипке çĕтĕкĕпе çыхма тытăнчĕ.

— Ан макăр, ан макăр, нимех те пулман ..

— Качча кайиччен тӳрленĕçке,—хушса хучĕ те ашшĕ, каллех вырма тытăнчĕ.

Амăшĕ хушнипе, пӳрне ыратни иртсе кайиччен Настаç йавăçсем айне кайса ларчĕ. „Мур.. —шухăшларĕ вăл,—еп пӳрнене касман пулсан хăвăртрах пĕтерсе кайаттăмăр“... Унтан хĕрача пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем шума тытăнчĕç. Акă, пĕр-ик кунтан ыраш вырса пĕтеретпĕр, вара авăн çапатпăр. Вăл тĕле сĕлĕ пулса çитет те, ăна вырмала, аштармала... Çавăнтах аннепе иксĕмĕрĕн кантăр татмала, çапмала, хутмала... Мĕн чухлĕ ĕç! Каллех тата паранкă та кăлармала пулать. Ах, хăçан шкула каймали вăхăт çитĕ-ши?.. Часрах çиттĕрччĕ вăл вăхăт!

... Настаç кăçал шкула тăваттăмĕш çул кайать ĕнтĕ, амăшĕ хĕл кунĕсенче час-час чирленĕ пирки килте ĕç нумай пулин те, ытти ачасенчен йулма мар—малта пырать вăл, учитĕлницă вара ытти ачасем умĕнче йаланах мухтать ăна:

— Есĕр Настаç çине пăхăр, йепле тăрăшса вĕренет вăл. Уроксене вăхăтра хатĕрлет, хăйне тирпейлĕ тыткалать...

Çапла мухтанă хыççăн Настаçăн вĕренес кăмăлĕ татах çĕкленет, вăл татах примерлă пулма тăрăшать.

— Ăслă сан хĕрачу, пысăк çын пулать пуҕ-ха,—теççĕ Настаç ашшĕне кӳршĕсем.

— Е-е, хĕрачаран тем пулмала пит!—тет куна хирĕç ашшĕ, аллипе сулса. Анчах Настаç пĕлет: ашшĕ ку сăмахсене çынсем умĕнче йури калать. Хелле, Настаç ашшĕпе амăшне кĕнекесем вуласа панă каçсенче, вĕсем йаланах:

— Йалтан вĕренсе тухсан, малала вĕренме йарасах пулать сана, хĕрĕм,—тетчĕç.

Настаç хăй те çавнах ĕмĕтленет: йалта вĕренсе тухасчĕ те, пысăкрах шкула кайасчĕ. Учитлĕ пуласчĕ—Марийă Петровнă пек... Атту тухтăр пуласчĕ.. Йе агроном... Йе тата мĕн те пулин çавăн пекки пулас... Пулас та—йала килсе кĕрес... Çавăнтах Настаç куçне хупать те—хăйне курать: вăл ӳссе çитнĕ ĕнтĕ, тухтăра вĕренсе тухнă, хулари боҕницăра чирлисене емеллет. Хăй шурă халатпа, шурă тутăрне кăйала çыхнă (шăпах хулара хăй курнă майра тухтăр пек), ун патне хăйсен йалĕсем пыраççĕ. Настаç вĕсене кăмăллăн, йăвашшăн йышăнать, пăхать, итлет, кашнинех сывалса тасалмали емел парса йарать. Йалçыннисем ăна чĕререн тав тăваççĕ, Настаç вĕсене ăшă сăмахсем каласа ăсатса йарать...

Тепĕр чух ăна вăл хăйсен йалĕнчи шкулта ачасене вĕрентнĕ пек туйăнать. Клас тулли ача, пурте парттăсем хушшинче лараççĕ, Настаç доска умĕнче ачасене задачăсем шутлама вĕрентет... Тата хăш чух хăйне агроном вырăнĕнче курать, йалçыннисен пухăвĕ умĕнче йепле майпа вăйлă тырпул тăвасси çинчен доклад тăвать. Хресченсем унăн пĕр сăмахне ирттермесĕр итлесе лараççĕ...

Тепĕр тесен, хуть кам пулсан та аван. Ӳсесчĕ те, вĕреннĕ çын пуласчĕ. Ах, пуласахчĕ!

... Анчах та, çурлапа каснă пӳрне ыратма чарăнмасть, пĕрмай туртать. Кăшт кăна тĕлĕрсе кайма пуçланă Настаç куçне уçрĕ. Ашшĕпе амăшĕ те, çурлисене пăрахса, темшĕн пĕлĕтеле пăхса тăраççĕ.

Тĕлĕннĕ Настаç, хăмăл çийĕпе сиккелесе, вĕсем патнеле чупса пычĕ.

— Мĕн пулнă, атте?

— Авă, пăх-ха çӳлеле .. Ав çавăнтала,—терĕ ашшĕ, хĕвеланăç йеннеле кăтартса.—Куратăн-и?

Настаç ашшĕ кăтартнă çĕреле пăхрĕ те, темиçе самантран инçетре, пĕлĕт айĕнче пĕр ушкăн хура пăнчăсем курчĕ. Пăнчисем пысăк та мар—чана пысăкĕш çеç. Çав вăхăтрах унăн хăлхине темĕнле ĕрленĕ сасă пырса кĕчĕ:

— Ăр-р-ррр...

— Мĕн вăл?—ыйтрĕ Настаç, ашшĕ йеннеле çавăрăнса.

— Йарапплансем, хĕрĕм..

— Йарапплансем?!

— Ийă çав..

Настаç сасартăках хăй ывăннине те, суранлă пӳрни ыратнине те манса карĕ, вăл пĕтĕм куç вăйĕсемпе пĕлĕтри пăнчăсем çине тăрăнчĕ. Пăнчăсем çывхарнă çемĕн çывхарса килеççĕ, ĕрленĕ сас вăйлансах пырать... Йарапплан! Çавсем еппин вĕсем! Куранччен Настаç йарапплансене ӳкерчĕксем çинче çеç курнăччĕ, хаҕ хăйĕн куçĕсемпе чăн-чăн йарапплан курма тӳр килчĕ. Çитменнине, пĕрре кăна мар, ушкăнĕпе... Иккĕ, виççĕ... тата виççĕ... тата виççĕ... тăххăр! Йепле хăвăрт вĕçсе пыраççĕ вĕсем! Нумайах та пулмасть—чана пысăкĕш çеç курăнатчĕç, хаҕ ĕнтĕ хуртан та пысăкрах курăнаççĕ...

— Атте, кунта килеççĕ-и вĕсем?

— Куратăн пуҕ...

— Ăçта кайаççĕ?

— Пĕлместĕп, хĕрĕм...

— Унта çынсем нумайăн-ши?

— Кам пĕлет, тен нумайăн та-и...

— Вĕсем пĕчĕккĕçке?

— Çӳлте пирки çапла курăнать вăл.

Йарапплансем çинчен пĕлме тăрăшса ашшĕнчен темле ыйтсан та, Настаç нимех те пĕлеймерĕ. Йарапплансем çывхарса пысăкланса пычĕç. Тепĕр вунă

минутран вӗсем Хуранкасси тӗлне те ҫитрӗҫ. Пӗтӗм сывлӑш вӗсем хайаррӑн кӗрленипе тулса ларчӗ, хурҫӑ кайӑксем хӗвел ҫуттинче куҫпа пӑхмала мар вӑйлӑн йалтӑртататҫҫӗ, хӑйсем тип-тикӗс, пӗр сулкаланмасӑр пыраҫҫӗ. Настаҫ кӑнт хытса, пӑхма хӗн пулсан та, вӗсем ҫинчен куҫ илмесӗр, куҫран ҫухаличченех пӑхса тӑчӗ. Пайан вӑл нихҫан курманнине курчӗ, ҫавӑнпа та пайан курни унӑн ӗмӗрлӗхех асра йулчӗ.

... Каҫхине Настаҫсен умӗнчи каскасем ҫине, йаланхи пекех, йалҫыннисем пухӑнса ларчӗҫ. Пӗтӗм калаҫу пайан кӑнтӑрла курнӑ йарапланcем тавра ҫавӑрӑнчӗ.

— Китайсем пирӗн Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫула туртса илесшӗн тапӑнма тытӑннӑ, тет, ҫавӑнта карӗҫ пулӗ...

Унтан салтакра пулнӑ ҫынсем хӑйсем ӗлӗк вӑрҫӑра курнӑ йарапланcем ҫинчен, Роҫҫийӑ ҫарӗсене Германи йарапланӗсем йепле пысӑк сийен кӳни, патша Роҫҫийӗн йараплан тавраш̆ӗ сахал тата начар пулни ҫинчен каласа кӑтартрӗҫ. Ҫынсем килӗсене саланас умӗн пырса тухнӑ Хвеҭук—нумайах пулмасҭ Хӗрлӗ ҫартан таврӑннӑскер—халӗхи вӑхӑтра Совет Сойузӗн йарапланӗсем йепле йышли, вӗсем пӗрре ҫӗре лармасӑр пит те инҫе кайма, хуҭ йепле ҫанталӑкра та вӗҫме пултарни ҫинчен, йарапланcем вӑрҫӑра ҫеҫ мар, халӑх хуҫалӑхӗнче те пит пысӑк усӑ кӳни ҫинчен тӗлӗнмеле йапаласем каласа кӑтартрӗ...

Ашшӗ темиҫе хутчен те кӗрсе ҫывӑрма хушрӗ пулин те, урама тухнӑ Настаҫ ҫынсем саланиччченех итлесе ларчӗ мӑннисем калаҫнине... Нӳхреп ҫинчи чатӑр ӑшне кӗрсе выртсан та нумайччен шухӑшларӗ вӑл.

— Йепле-ха вӗҫеҫҫӗ? Кайӑк пек... Хӑйсене хурҫӑпа тимӗртен тунӑ, тет, анчах та ӳкмеҫҫӗ, темиҫешер ҫӗр пӑт та ҫӗклеме пултараҫҫӗ, тет... Тӗлӗнмеле... Хӑрушӑ мар-ши вара?.. Ҫынсем вӗҫеҫҫӗ пулсан—хӑрушӑ мар пуҭ ҫав.. Хӑҫан та пулин вӗҫсе курасчӗ пӗрре. Ҫук ҫав, пулас ҫук...

Ҫапла шухӑшсемпе ҫывӑрса кайса, Настаҫ тӗлӗкре те йарапланcемех курчӗ. Темӗн тӗрли те пур: курак пек пӗчӗккисем те, кӗлте пеккисем те... Кӗркунне чанасем йепле ушкӑнӑн-ушкӑнӑн ҫӳреҫҫӗ, йарапланcем те ҫавӑн пекех вӗҫеҫҫӗ, пӗтӗм пӗлӗте хупласа илнӗ...

Тепӗр вунӑ ҫултан, чӑнах та, Настаҫ йарапланcем пӗлӗтре кӗрхи чанасем пекех йышлӑн вӗҫнине курнӑ, анчах халӗ ку тӗлӗк ҫеҫ пулнӑ-ха...

* * *

Хурӑнкассинчи Хӗритун хӑйӗн ӗмӗрӗнче нумай хура-шур, нумай нуша курнӑ. Ашшӗнчен ултӑ ҫулта тӑлӑха йулса, вӑл вунтӑвагта ҫитиччен пӗр чӑлах старикпе кӗтӳ патӗнче вӑрӑм пушӑ сӗтӗрсе ҫӳренӗ, ӗҫлемелӗх вӑй кӗрсен Пуйан Макар арманӗнче тарҫӑра пурӑннӑ. Чӑннипех калас пулаҭ, йалта ӑна ҫын вырӑнне никам та шутламан. Ӑна йалҫыннисем хӑйӗн йачӗпе те чӗнмен, хӑй вӑрӑм пӳлӗ пулнӑ пирки такшин „Уртмах" тесе мӑшкӑллӑ йат кӑларнӑ та, вара ӑна пурте ҫапла чӗнсе пурӑннӑ. Хӗритун арманта кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленӗ, анчах унӑн ӗҫӗ хуҫана пуйтарнӑ ҫеҫ, хӑйӗншӗн, паллах, ним тупӑш та пулман, йалан выҫӑлӑ-тутӑлӑ, йалан ҫӗтӗкҫатӑк...

Вунтӑхӑр ҫулхи Хӗритуна пӗр тӑлӑх хӗрача патне киле кӳртнӗ, анчах та, лешӗн хӑйӗн те ик аллисӗр пуҫне нимӗн те ҫук пулнӑ пирки, пурнӑҫ йусанман. Выҭӑх тавраш̆ӗ ҫуккипе, ҫимели ҫӑкӑр ҫитменнипе, акмали вӑрлӑх ҫуккипе каллех Пуйан Макара тархаслама тӳр килнӗ, леш малтанхи пекех авнӑ Хӗритун ҫурӑмне. Авлансан ҫулталӑкран Хӗритунӑн йат тухнӑ. Унчухне тӗнче вӑрҫи иккӗмӗш ҫул пынӑ ӗнтӗ. Ытти некрутсене ашшӗ-амӑшӗсем, тӑванӗсем ӑсатнӑ, Хӗритуна ӑсатма ача ҫуратас патне ҫитнӗ арӑмӗ ҫеҫ тухнӑ. Арӑмӗ вилес пек макӑрса, ҫул ҫине тӑсӑлса ӳксе йулнӑ, Хӗритун куҫҫулӗсене палӑртас мар, тесе, тутисене ҫыртса лартса, лавсем хыҫҫӑн станцӑнала утнӑ...

Унтан икӗ ҫул ытла тӗрлӗ фронтсенче, сивӗ те йӗпе окопсенче, ҫурӑлакан шрапнелсемпе снарйадсем айӗнче, ҫӗр тӗрлӗ асап курса пурӑннӑ, хулпуҫҫийӗ суранланнипе ик уйӑх ҫурӑ лазаретра выртнӑ. Вунсаккӑрмӗш ҫул пуҫламӑшӗнче вӑл хӑйӗн мӗскӗн килне таврӑннӑ, йепле пулсан та хӑйӗн хуҫалӑхне йӗркелесшӗн пулнӑ, анчах темиҫе уйӑхранах, ҫамрӑк Совет Республикине тӑшмансенчен хӑтармашкӑн тухса кайнӑ. Килӗнче каллех пӗр арӑмӗпе пӗчӗк хӗрачи ҫеҫ йулнӑ (ӑна Настаҫ тесе чӗннӗ, вӑл халҭ виҫӗ ҫула кайнӑ ӗнтӗ). Граждӑн вӑрҫинчен Хӗритун 1921 ҫулта тин таврӑннӑ, анчах киле ҫитсенех чирлесе ӳксе ҫурҫул ытла выртнӑ, вилӗмрен аран ҫӑлӑнкаласа йулнӑ... Чиртен сывалсан вара, кил-ҫуртне йӗркене кӳртес, тесе, етемле пурӑнас, тесе, вӑйне хӗрхенмесӗр ӗҫлеме тытӑннӑ. Анчах та ним ҫук ҫӗрте пурнӑҫ тума питех те хӗн: вӑл ҫук та ку ҫитмест, ҫапах та, темле йӑвӑр пулнӑ пулин те, хӑй тӑрӑшнине пула, пулӑшу комитечӗнчен кивҫен илкелесе, 1927 ҫулсем тӗлнеле Хӗритун „етем ӗретне" кӗре пуҫланӑ. Лаша та, ӗне те туйаннӑ, кӑшт-кашт хатӗрсем те тукаланӑ. Йалҫыннисем йаланах ырласа калаҫнӑ ун ҫинчен:

— Хӗритун матур. Пуйан Макартан хӑтӑлчӗ вӗт, чиперех пурнӑҫ тӑваҭ.

— Хӗрачи те хӑй пекех ӑслӑ. Ӑна вӑл нумай вӗрентесшӗн тет-ха.

Настаҫ ун чухне вуннӑра пулнӑ.

... Пин те тӑхӑрҫӗр вӑтӑрмӗш ҫул пуҫламӑшӗнче пур ҫӗрте те колхоз ҫинчен калаҫма тытӑннӑ. Йала пӗрин хыҫҫӑн тепри агӗтатӑрсем килнӗ, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе пухусем пулнӑ. Йал халӑхӗ палӑрмалах икке уйӑрлса тӑнӑ: пӗрисем—колхозшӑн, теприсем—хирӗҫ. Никам та пӗлмен: таҫти хӑйамат шӑтӑкӗнчен хӑрушла сӑмахсем тухса, килтен-киле ҫӗленсем пек шуса ҫӳренӗ.

— Пурне пӗрле ҫывӑрмала тӑваҫҫӗ, тет...

— Ачасене туртса илсе кайаҫҫӗ, тет...

— Антихрис шухӑшласа кӑларнӑ йапала, тет, вӑл...

— Ҫамкасем ҫине шуйттан палли ҫапаҫҫӗ, тет... Тет, тет, тет...

Хӗритун пӗр пухуран та йулман. Колхозсем мӗн тума кирлине, чухӑнсемшӗн вӑл телейлӗ пурнӑҫ патне пымали пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул пулса тӑнине тавҫӑрса илсе, вӑл малтанхи пухусенчех колхоз майлӑ ҫаптарма тытӑннӑ. Йулашкинчен, пухура колхоз тӑвасси ҫинчен сасӑлама тытӑнсан, вӑл никамран малтан алӑ ҫӗкленӗ. Ҫав пухурах ӑна председателе уйӑрнӑ.

Хӑватлӑ кӗрешӳ пуҫланса кайнӑ ҫӗннипе кивви хушшинче. Ӗмӗртен ҫын ӗнси ҫинче тӑранса пурӑннӑ пуйансемпе куштансем урса кайсах колхоза пӗтерме тӑрӑшнӑ, пӗринче ӑна аркатса йарас пат-

нех ҫитернӗ, анчах та ӗлкӗреймен, вӗсене хайсене лапчӑта-лапчӑта лартнӑ. Нумайӑшне, пурлӑхӗсене туртса илсе, инҫетеле ӑсатнӑ. Колхоз йышӗ каллех ӳсме пуҫланӑ, анчах ҫав вӑхӑтрах тӑшмансен йулашкийӗсем пит те хӑрушла, тискер ӗҫ туса хунӑ...

Кӗрхи пӗр тӗттӗм, ҫиллӗ каҫ, Хӗритун хуларан таврӑннине вӑрманта сыхласа тӑрса, хыҫалтан пуртӑ тӑршшипе ҫапса вӗлерсе пӑрахнӑ ӑна. Ҫав каҫах унӑн хаљ ҫеҫ туса ҫитернӗ килҫуртне хараҫ ик ҫӗртен вут тӗртсе хыптарса йанӑ. Арӑмӗпе хӗрачи кӗпе вӗҫҫӗн ҫеҫ тӑрса йулнӑ, пӗр йапалине те ҫӑлайман...

Настаҫ унчухне вунвиҫҫӗре пулнӑ. Вӑл унчухне кӳршӗ йалӗнчи шкулта улттӑмӗш класра вӗренме тытӑннӑ мӗн.

Хӗритуна пит те чаплӑн пытарнӑ. Ун пек пытару Хурӑнкассинче нихҫан та пулман. Хуларан илсе килнӗ оркестр пӗрмай салху музӑк выљанӑ, тупӑк хыҫҫӑн таврари виҫ-тӑватӑ йал ҫыннисем пынӑ, масар ҫинче хӗрӳ сӑмахсем каланӑ.

Пуринчен ытла, Хӗритун масарӗ ҫинче йалти комсомол ҫекретарӗ Мишша калани халӑх чӗрине кӗрсе ларнӑ.

— Епӗр пайан хамӑрӑн чи хастарлӑ йулташа пытаратпӑр... Ӑна тискер тӑшмансем вӗлерчӗҫ... Вӗсем ӑна вӗлернипе пирӗн ӗҫ чарӑнса ларӗ, терӗҫ пуљ,—тесе пуҫланӑ вӑл хӑйӗн сӑмахне питех те пусӑрӑнчӑклӑн, лӑпкӑн. Унтан сасартӑк хыттӑн, пӗтӗм чӗререн калама тытӑнса кайнӑ...

— Ҫук, пире хӑратаймӑн! Епӗр нумайӑн, пӗр ҫын вырӑнне вуннӑн тӑрӑпӑр, вуннӑ вырӑнне пинӗн тӑрӑпӑр, пире нихҫан та никам та ҫӗнеймӗ! Хӗритун вилчӗ, анчах та акӑ тата Хӗритунсем тӑраҫҫӗ. (Мишша аллипе колхозниксемпе комсомолӗцсем ҫине кӑтартнӑ). Акӑ Хӗритунсем ӳсеҫҫӗ! (Мишша аллипе ӗретлӗн тӑракан пионерсем йеннеле сулса илнӗ, ҫав самантрах Настаҫа ик хул айӗнчен тытса пӗтӗм халӑха кӑтартнӑ...)

— Вӗсене вӗлерсе пӗтереймӗн, вӗсен вутлӑ чӗрисене сӳнтерейм ӗн, Ленинпа Сталин кӑтартнӑ ҫул ҫинчен пӑраймӑн!

Ҫил Мишшан кӑтра ҫӳҫӗсене, тумтир аркисене лӑсканӑ, унӑн пысӑк хура куҫӗсем хайаррӑн ҫутӑлнӑ, кӑкӑрӗ час-час сывланӑ...

— Тӗрӗс калатӑп-и еп?..

— Тӗрӗс!—ответ панӑ халӑх...

— Куҫҫуљ кирлӗ мар, йулташсем, епӗр ҫак масар ҫинче тӑрса, малашне хамӑрӑн телейлӗ пурнӑҫшӑн тата хӑватлӑрах кӗрешме, тӑшмансене пуҫӗпех пӗтерме сӑмах парса тупа тӑвар!

Музӑк „Интернационал" выљаса йанӑ, Хӗритун тупӑкне майӗпе шӑтӑка антарнӑ...

* * *

Пуйан Макар таврашӗсене йалтан хӑваласа кӑларса йарсан, унӑн ҫур пӳртне колхоз правленийӗ йышӑннӑ. Тепӗр ҫур пӳрчӗ пушах тӑрать мӗн. Йалсовечӗ Настаҫпа амӑшне ҫавӑнта вырнаҫтарнӑ. Пӗчӗкҫеҫ лутра маччалӑ пӳрт вырӑнне, Настаҫсем халљ пысӑк, ҫутӑ пӳртре пурӑнма тытӑнчӗҫ. Анчах та Настаҫӑн вӗренме кайасси пулаймарӗ.

— Пӑрахатӑн пуљ, хӗрӗм,—терӗ ӑна амӑшӗ,—еп пӗччен ҫеҫ ӗҫлесен пирӗн ҫимелӗх ҫӑкӑр та пулаймӗ, ҫийе тӑхӑнмалӑх тумтир те тӑваймӑпӑр...

Настаҫӑн куҫҫулӗсем шӑпӑрах йухса анчӗҫ, анчах ним тума та ҫук: амӑшӗ тӗрӗс калать.

Икӗ хӗл, икӗ ҫу Настаҫ килте пурӑнчӗ. Малтан йалти шкулта сторожихӑ пулса ӗҫлерӗ, пӗрмай комсомолӗцсемпе пӗрле пулса халӑх хушшинчи ӗҫе хутшӑнса пычӗ, ҫпектакљсенче выљарӗ; иккӗмӗш хӗлӗнче комсомола кӗчӗ, ӑна вуламали ҫурт пуҫлӑхӗ туса хучӗҫ. Хӑй ку вӑхӑтра нумай ӳсрӗ, тӗреклеҥчӗ, питҫӑмартисем тулса ҫавракаланчӗҫ, хӗрсемпе вӑййа ҫӳреме тытӑнчӗ.

— Настаҫ хӗр пулчӗ санӑн, качча памала ҫеҫ ӗнтӗ,—теме пуҫларӗҫ кӳршӗ хӗрарӑмӗсем унӑн амӑшне.

Чӑнах та, пӗринче, Настаҫ хӑй килте ҫук чухне, Анаткасран йевчӗ пынӑ иккен, анчах амӑшӗ ӑна тӳррӗнех татса каласа йанӑ:

— Кун ҫинчен манпа мар, хӑйӗнпе калаҫӑр, вӑл хӑйшӗн хӑй хуҫа.

Настаҫӑн пуҫӗнче урӑх шухӑш пулнӑ вӑл вӑхӑтра: „Вӗренесчӗ... йепле пулсан та вӗренесчӗ"... Ку ӗмӗте вӑл нихҫан та, пӗр самантлӑха та пӑрахман, комсомолти тантӑшӗсемпе те ун ҫинчен йаланах калаҫнӑ.

— Йурӗҫке, йурӗ,—лӑплантарнӑ ӑна Мишша-ҫекретар,—май килсенех йарӑпӑр... Кӗт пӗртак!

... 1933-мӗш ҫулта, ҫурхи ӗҫсене пӗтернӗ хыҫҫӑн, Хурӑнкасси улӑхӗнче пысӑк ӗҫ уйавӗ пулчӗ. Темиҫе кун малтанах улӑхра йӗркипех лавкасем, театр валљи пысӑк естрадӑ, каруҫҫел—тем те пӗр ӳссе ларчӗҫ. Уйав кун улӑха ирпе ирех пур йенчен те халӑх ҫавтери йышлӑн пухӑнма тапратрӗ. Машинӑсемпе, урапасемпе, йуланутпа, ҫурран... Ватти, вӗтти, хӗрӗ, каччи,—пурте хӑйсен чи лайӑх тумӗсене тӑхӑннӑ... Ирпе ирех улӑх каласа памала мар пысӑк хурт вӗлли пек сӗрлеме пуҫларӗ. Мӗн тӗрлӗ сас кӑна ҫук пуљ унта!..

Настаҫ та улӑха хӗвел тухнӑ-тухманах чупрӗ, апат ҫисе те тӑмарӗ, мӗншӗн тесен ӑна уҫӑ сывлӑшра читаљнӑ тума хушнӑ: колхозник пур ҫӗрте те курса ҫӳрет-ҫӳрет те, уҫланкӑ хӗрринчи „читаљнӑра", йӑвӑҫсен хӳттинче хаҫат-журнал вуласа канса ларать...

Пит те шавлӑн, савӑнаҫлӑн иртсе пычӗ уйав. Мӗн кӑна пулмарӗ пуљ унта! Мӗн курас тетӗн—ҫавна кур, хӑш кӗтесселе ан пыр—пур ҫӗрте те хаваслӑхпа савӑнӑҫ пӗрхӗнсе тӑрать.

Кӑнтӑрла иртсен пӗр сехетре сасартӑк таҫтан, хӗвелтухӑҫ йенчен мотор кӗрлени илтӗнсе карӗ. Малтан хуллен, унтан вӑйлӑрах, вӑйлӑрах... Улӑхри мӗнпур халӑх сасӑ илтӗннӗ йеннеле пӑхма тытӑнчӗ.

— Самољот! Самољот!..

— Йараплан киле-еет!

Унччен те пулмарӗ, вӑрман ҫийӗпе хурҫӑ кайӑк йарӑнса тухрӗ. Халӑх тӗлне ҫитсен вӑл темиҫе хутчен сывлӑшра кутӑн-пуҫӑн чӑмкаласа илчӗ, унтан улӑх тавра виҫӗ хут ҫаврӑнчӗ те, майӗпе анса пырса, вӑрман хӗрне ларчӗ. Халӑхсем тӗркӗлтипе ун патнелле ыткӑнчӗҫ.

„Читаљнӑра" ларакан Настаҫ чӗри кӑкӑртан сиксе тухас пекех тапма тытӑнчӗ.

„Самољот... Йараплан... Пирӗн йалта!.."

Вӑл унтала пӑхрӗ, кунтала... Йӑвӑҫ айӗнче чӗлӗм туртса ларакан старике курчӗ те, ун патне чупса пычӗ.

— Итле-ха, мучи, ес ҫав хаҫатсем патӗнче кӑштах сыхласа лар-ха, еп йапӑрт пӗр ҫӗре чупса кайса килем.

Старик килӗшрӗ; Настаҫ ҫав самантрах халӑх хушшинче ҫухалчӗ.

Вăл самолет патне хĕсĕнкелесе тухна çĕре летчиксем çĕре анма ĕлкĕрнĕ те мĕн. Пĕри арçын, тепри хĕрарăм,—иккĕшĕ те çамрăк, иккĕшĕ те пĕрешкел кăвак комбинезонсемпе, пуçĕсенче пысăк куçлăхлă сăран çĕлĕксем. Вĕсемпе ялсовет председателĕ калаçса тăрать.

— Пысăк тав сире пирĕн уйава килнĕшĕн! Епĕр сире пайан иртенпех кĕтетпĕр... Тен, сирĕн канас килет пулĕ, тен çиес килет?

Летчиксем иккĕшĕ те пуçĕсемпе сулчĕç.

— Çук, нимĕн те кирлĕ мар. Пирĕн халех ĕçе тытăнас пулать. Осоавиахим лоторейĕ пирки. Унтан хăш-пĕрисене сывлăша çĕклесе кăтартас. Ес хăвăн чи лайăх ударниксен спискине туса хатĕрле.

Председатель хăйĕнпе йунашар тăракан Настаçа курчĕ:

— Халех спискă ту.

Пăлханса кайнă Настаç унăн куçĕнчен çавтери ыйтулăн пăхса илчĕ:

— Хама та çырам-и, Хветĕр пичче?

— Малтанах çырса хур, иксĕмĕр вĕçĕпĕр.

Настаç çунатлансах карĕ. Акă ĕнтĕ, тинех унăн тахçанхи ĕмĕчĕ тулать. Тинех вăл йараплан çинче вĕçсе курать...

Летчиксем митинг турĕç. Тăван çĕршывăн сыхлăхне çирĕплетмели, тăшмана хирĕç тăма йаланах хатĕр пулмали, çар ĕçне вĕренмели çинчен калаçрĕç. Осоавиахим лоторейĕн билечĕсене кашни ĕççыннине илме сĕнчĕç. Унтан темиçе çамрăк çавăнтах халăх хушшинче билетсем салатма пуçларĕç.

Самолет патĕнчен уйăрăлма пĕлмен Настаç летчикпа калаçса тăракан председатель çине куç илмесĕр пăхрĕ: „Вĕçтерессĕ-ши?"

— Айа,—терĕ çавăнтах председатель, Настаç йеннеле çавăрăнса.—Кĕрсе лар!

Настаç çакна çеç кĕтнĕччĕ. Вăл самолет çине председатель хыççăн йапăр-йапăр хăпарса кĕрсе ларчĕ. Чĕрийĕ танать, хăй темле тикĕс мар сывлать, йĕри-тавра халăх пăхса тăрать.

— Хăрамастăн-и?—ыйтрĕ председатель.

— Çук...

Çав самантрах мотор ĕçлесе йачĕ. Настаç кăртах сикрĕ, анчах, хăй шикленнине палăртас мар, тесе, председателе чавсипе тĕксе илчĕ те,—йури кулнă пек турĕ:

— Ес ху хăратăн пулмала!

Самолет тикĕс улăх тăрăх чупса карĕ... Темиçе самантран вăл çĕртен уйăрăлчĕ те, хăвăрттăн çӳлеле хăпарма тытăнчĕ. 200, 300, 400 метр... Настаç, малтанах хытнă пек ларса пынăскер, майĕпе кăна айалала пăхса илчĕ. Улăхри çынсем пуканесем пек çеç курăнаççĕ, йалти пӳртсем—пĕчĕкçеç йешчĕксем пек... Авă, вăрман симĕс кĕççе йевĕрлĕ... Лере, вăрман пуçĕнче, Айхал шывĕ çутăлса выртать... Тăсти те курăнатьçке!

— Аван-и?—кăшкăрчĕ председатель Настаçăн хăлхинчен, мотор шавне çĕнтерме тăрăшса.

— Пит аван... Шеп!

Тепĕр вун-вунпилĕк минутран самолет малтанхи вырăна пырса ларчĕ. Настаç самолетран сиксе тухсанах, ăна çынсем çавăрса илчĕç:

— Ну, мĕнле?

— Хăрушă-и? Пуç çаврăнмасть-и?

— Ним те хăрушă мар, çунапа пынă пекех,—терĕ кусене хирĕç тулли кăмăллă Настаç.—Хăвăр вĕçсе курăр-ха.

Летчиксем уйаври çынсене лартса пĕр вуна-вуникĕ хут хăпарса анчĕç. Унтан председатель вĕсене апатланма чĕнчĕ. Шкулти пысăк та çутă класра хисеплĕ хăнасене валли ĕçмели те, çимели те тĕрлĕренех хатĕрленĕ иккен. Шап-шур скатĕртсем витнĕ вăрăм сĕтелсем хушшине пĕр аллă çын таран вырнаçрĕç.

Настаç йурийех, йатарласах хĕр-летчик çумне кĕрсе ларчĕ. („Мĕнле çын-ши вăл, йепле майпа летчик пулнă-ши?").

Председатель пĕрремĕш куркана телейлĕ те çутă пурнăçшăн, çав пурнăçа туса паракан аслă Сталиншăн çĕклерĕ. Иккĕмĕш куркана вăлах Совет авиацийĕшĕн, хамăрăн паттăр летчиксемшĕн çĕклерĕ. Вара хăнасем хушшинче шавлă калаçу, шӳтсем, кулă пуçланса карĕ...

Настаçпа хĕр-летчик пĕр-пĕринпе часах паллашрĕç те, вĕсем хушшинче хĕрӳ калаçу тапранчĕ. Настаç вырăсла ытлашши ăстах пĕлеймен пулин те, хĕр-летчик çавтери кăмăллине кура, хăйулăнах калаçрĕ. Майĕпе, айаккăн ыйтса пырса, Настаç хăйĕн çĕнĕ йулташĕ çинчен пĕлме тытăнчĕ.

— Калăр-ха, Фридă... (летчица Фридă йатлă, йеврей хĕрĕ пулнă),—есĕр вĕçме тытăнни нумай пулать-и?

— Нумай мар-ха, иккĕмĕш çул çеç...

— Йепле шут тытрăр-ха есĕр летчик пулма?

— Еп вăл ĕçпе такçанах интересленнĕ... Пирĕн Одессăра самолетсем пит нумай вĕçеççĕ, еп мĕн пĕчĕкренпех мотор сассине илтсе ӳснĕ. Ну, вара вĕренме карăм. Малтан производстварăн уйăрлмасăрах, унтан техникума...

— Есĕр савăтра ĕçленĕ-и?

— Тăватă çул...

... Сĕтел хушшинчен тухсан вĕсем чылай вăхăт вăрман хĕррипе уçăлса çӳрерĕç. Настаç Фридăна хăй çинчен, хăйĕн вĕренме кайас ĕмĕчĕсем çинчен каласа пачĕ. Фридă унăн шухăшĕсене пит те ырларĕ. Йулашкинчен Настаçа асăнмалăх хăйĕн сăнне парса хăварчĕ. Каçалапа, пĕр ултă сехет тĕлнеле, Фридăсен самолечĕ сывлăша çĕкленчĕ те, улăх тавра каллех икĕ хут çавăрăнса, вăрман хыçĕнче çухалчĕ.

Настаç самолет хыççăн хиреле чупса тухса, аллинчи тутрипе такçанччен сулса тăчĕ. Хĕр-летчицăпа калаçнă хыççăн унăн пуçĕнче пысăк шухăш, пысăк ĕмĕт çуралчĕ, анчах ун çинчен вăл халлĕхе Фридăна та, йалти йулташĕсене те нимĕн те каламарĕ-ха.

* * *

Кĕркуннеччен Настаç йалтах пурăнчĕ. Çавтери вăйлă ĕçлерĕ çу каçа: „анне валли ĕçкунĕсем ытларах туса хăварас та, хамăн кайас, вĕренес"...

Пĕрре вăл хиртен Мишша çекретарпе таврăнчĕ. Çула май каллех (миçемĕш хут-ши ĕнтĕ!) хăйĕн вĕренме кайас кăмăлĕ çинчен сăмах хускатрĕ.

— Вĕренесех терĕн еппин? Еп сана каччă кайать тенине илтрĕм пайан,—терĕ Мишша, куларах.

— Кам илтĕр ман пек хура чикана?—çавнашкалах кулса каларĕ ăна хирĕç Настаç.

— Илекенни тупăннă тет-ха...

— Кам калать?

— Хуть кам каласан та, тĕрĕс вĕт вăл.

— Кирлĕ мара ан калаç-ха. Еп ыйтни пирки кала. Ăçта кайма пулать-ши?

— Хаçатра пайан фелдшĕр шкулне илесси çин-

чен çырнăччĕ, йарапар çавăнта—кăмăлна кайаť пулсан. Ыранах çырса йар. Кирлĕ хучĕсене туса парăпăр. Кайран тухтăра та тухма пултаратăн!

— Темлеçке...

Настаçăн—малтанах каласа патăмăр—пĕчĕк чухнех тўхтăр пулас килнĕ. Хаљ ĕнтĕ çав ĕçпе вĕренме кайма май килет. Анчах та иртнĕ çуркунне, уйав кунĕ самољотпа вĕçнĕ хыççăн, хĕр-љотчица Фридăпа курса калаçнăранпа унăн урăх ĕмĕт пулнă. Настаçăн љотчицă пуласси килнĕ. Ку шухăш унăн пуçĕнче çавтери çирĕп ларнă, анчах çав вăхăтра темскер шиклентернĕ, иккĕлентернĕ, çавăнпа та Настаç ун пирки никама та шарламан.

Хиртен таврăннă чух Мишша-çекретар калани суйа пулман. Мĕн çуркуннеренпех Настаç кўршĕ йалĕнчи Никанор йатлă пĕр çамрăк бригадирпа кăмăллăн килĕштерсе пурăннă. Лешĕ Настаçпа пĕрлешесшĕн пулнă, ку çеç тытăнса тăнă. Вĕренес ĕмĕт пулман пулсан Настаç килĕшнĕ те пулĕччĕ, анчах унăн çамрăк чух вĕренсе йуласси килнĕ..

... Каçхи апат хыççăн Настаç, йăпăртлăха, тесе, урама тухрĕ. Хăйсен çумĕнчи тăкăрлăк тĕлне çитсенех, палланă çăра сасса илтрĕ:

— Настаç...

Ку Никанор иккен. Вăл хăйĕн лайăх коçтумне тăхăннине, галстук çакнине асăрхасан Настаç кулса йачĕ:

— Ай-уй, ăçта кайма тухнă ес капла?..

— Сан патна çеç, -терĕ лешĕ, ун патне пырса тăрса.

— Асту, ан варлан, еп анчахрах хиртен таврăнтăм...

— Йурĕ сана кулма.

Вĕсем тăкăрлăкри пĕренесем çине ларчĕç. Никанор пирус чĕртсе йачĕ те, тарăнăн сывласа илчĕ. Пĕр çур минут пек чĕнмесĕр çĕреле пăхса ларсан тин сăмах хушрĕ:

— Ну, мĕнле пурнан?..

— Йаланхи пекех—аван. Есĕ ху мĕнле?

— Начар.

— Ма апла?

— Так, ахалех, начар.

— Сăлтавĕ пулĕ-ха вĕт.

— Пур ара.

— Каласамччĕ ĕнтĕ...

Настаç Никанорăн пуçне ик аллипе тытса хăй йеннеле пăрчĕ те, куçĕсенчен пăхрĕ. Çапла темиçе самант иртрĕ.

— Кала ĕнтĕ,—ыйтрĕ Настаç кăмăллах.

— Еп...—терĕ те Никанор, малали сăмахне çăтрĕ.

— Мĕн?

— Каламалине калаиă ĕнтĕ, хаљ санăн çеç каламала.

Настаç ун шухăшне ăнланчĕ, анчах пĕлмĕш пулса тепĕр хут ыйтрĕ.

— Мĕн çинчен çак ес?

— Пĕлместĕн пулаť?

— Пĕлместĕп пулаť çав.

— Ну, иксĕмĕр пĕрле пурăнасси çинчен. Пултараймастăп урăх сансăр пуçне пурăнма. Татса кала кĕçĕр уççăн...

Настаç аллисем Никанорăн хулпуççийĕсем çине ўкрĕç. Вăл çемçен кăна кулса илчĕ:

— Ытла васканçке ес...

— Апла пулсан ес манран сивĕннĕ.

Сасартăк Настаç шухăша кайнă пек пулчĕ. Пĕр вăхăт вăл анкартисем урлă таçтала, пĕлĕт хĕрнеле пăхса ларчĕ, унтан каллех тусĕ çинеле пăхса:

— Çук, апла мар,—терĕ ĕнентерўлĕн.—Сивĕнни çинчен сăмах вакламăпăр. Ман сăмаха итле-ха есĕ...

— Кала ара.

— Ес мана ун çинчен пĕртте шухăшламасť, тетĕн пулĕ. Çук, тусăм, апла мар. Нумай шухăшларăм епĕ те. Шухăшларăм-шухăшларăм та, çапла шут турăм: епĕр хаљ иксĕмĕр те,—еп те, ес те çамрăк-ха, пирĕн пурнăç пĕтĕмпех малта. Пĕрлешес тесен, пĕрлешсе пурăнма вăхăт нумай, ĕмĕре аттеаннесем иртернĕ пек иртермеле мар. Хăвах ăнланатăн пуљ мана... Хаљ вĕт ĕлĕкхи мар, етемĕн мĕнле ĕмĕт пур, вăл çавна тума пултараť (кусем љотчицă Фридă сăмахĕсем пулчĕç).

— Вăл çапла ĕнтĕ...

— Ман хамăн та такçантанпах ĕмĕт пур... Еп кăçал вĕренме кайас тетĕп... Кайа йулсан—кайу шăтаť, теççĕ, ахаљ те вăхăт нумай иртрĕ ĕнтĕ,—атте вилнĕ хыççăн еп вĕренмен вĕт...

Нумайччен каласса ларчĕç вĕсем иккĕш. Хăйсен çамрăклăхĕ, шухăшĕ-ĕмĕчĕ, пуласлăхĕ çинчен. Тул çуталас умĕн уйăрлнă чух вара—пĕр-пĕрин аллисене нихçанхинчен хытă чăмăртарĕç. Никанор хăйĕн савнине хулпуççинчен хуллен кăна ыталаса илчĕ те:

— Аван, Настаç...—терĕ ачашшăн.

* * *

Тепĕр уйăхран Настаç Шупашкарта, фељдшĕрсен шкулĕнче вĕренме пуçларĕ. Темиçе çул хушши вĕренмесĕр пурăннă пирки ăна малтанхи вăхăтра вĕренме йăвăртарах пулчĕ. Анчах Настаç пĕтĕм вĕри чĕринчен тăрăшрĕ. Общежитинче пĕр пўлĕмре пурăнакан хĕрачасем пурте Настаç пекех колхозсенчен пынăскерсем пулнă: хăшĕ фермăра, хăшĕ йаçлĕре, хăшĕ куљтурникре ĕçленĕ. Вĕсем часах пит çывăх туслашрĕç, пĕрне-пĕри такçантанпа палланă пекех, тăвансем пекех пурăнма тытăнчĕç. Настаçа вĕсем кирлĕ чух йаланах пулăшса пычĕç.

Часах хăнăхрĕ Настаç шкулти пурнăçа. Кăнтăрла—уроксенче, каçхине—тĕрлĕ кружоксенче. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе йулташĕсемпе пĕрле кинона, театра çўрерĕ. Кашни пурăнса иртернĕ кун Настаçа мĕнле те пулин çĕнĕ йăпала çинчен пĕлтерсе пычĕ, мĕнле те пулин çĕнĕ савăнăç пачĕ. Килтен йаланах кăмăла уçакан çырусем илчĕ вăл—амăшĕ аван пурăнаť, хуйхăрмали çук еппин. Амăшĕ патне хăй те пĕрмай çырса тăчĕ—ăçта пулнă, мĕн курнă, вĕренесси мĕнле пыраť... Темиçе хутчен Никанортан çыру килчĕ, ун патне те хаваслăн çырчĕ Настаç, анчах кайран лешĕ, темшĕн çырма пăрахрĕ.

Пĕр каçхине вăл общежитине çавтери савăнăçлăн чупса пычĕ. Йулташĕсем ăна тўрех асăрхарĕç: питçăмартисем хĕрелсе кайнă, куçĕсем хаваслă çуттăпа йалкăшаççĕ... тумтирне хăварт хывса çакрĕ те, кăсйинчен хаçат туртса кăларчĕ.

— Итлĕр-ха, хĕрсем,—терĕ вăл, хаçачĕпе сулса,—еп сире пĕр савăнăçлă хыпар пĕлтерем...

— Мĕнле хыпар?

— Мĕн çинчен?—сике-сике тăчĕç хĕрсем.

— Ак, пăхăр...

Настаç хаçата сĕтел çине сарса хучĕ те, пўрнипе љотчик тумĕ тăхăннă пĕр илемлĕ, кăмăллăн кулса ларакан хĕр сăнĕ çине кăтартрĕ.

— Вулăр-ха, айала мĕн çырнă! Летчица гражданского воздушного флота, комсомолка Фрида Ра-

бинович, совершившая выдающийся скоростной полет Москва—Одесса...

— Мĕн вара?—ыйтрĕ хĕрсенчен пĕри, Настаç мĕншĕн çавтери саваннине ăнланмасăр.

— Ман йулташ вăл, ăнланатни? Ман тус!—терĕ Настаç, хаçата силлесе.—Вăл мана самолетпа вĕçтерсе! Акă, ĕненместĕр пулсан...—Йапăр-йапăр арчине уçрĕ те, пĕр фотографи картăчки туртса кăларчĕ.—Танаштарса пăхăр, çав мари-мĕн?

Хĕрсем тем самантчен пăхрĕç Настаç тусĕ çине... Унтан Настаç Фридăна мĕнле курни, мĕнле вĕçни, мĕн-мĕн калаçни çинчен каласа пачĕ.

— Ну, çавтери кăмăллă çав хăй, çавтери çепĕç калаçать, ытармала мар,—тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн калавне.

— Пĕлетĕр-и мĕн, хĕрупраç,—терĕ хĕрсенчен пĕри, Ларис йатли.—Ун патне саламлă çыру çырса йарас пулать Настаçăн, рас вĕсем туслă.

— Ăçта çыратăн? Адрĕсĕ çук вĕт.

— Адрĕсĕ... Ак, çак хаçат йачĕпех йарас, вĕсем унта тупса параççĕ...

— Чăнах та!—килĕшрĕç хĕрсем.—Чăнах та!

— Çырас пулсан еп пĕччен мар, пурсăмăр пĕрле çырăпăр,—хушса хучĕ Настаç.

Каланă—тунă. Çав каçах 12-мĕш пÿлĕмри тăвата хĕр Фрида Рабинович патне чи ăшă, чĕре патне пымали сăмахсем суйласа пысăк çыру çырчĕç. Çыру вĕçĕнче хăйсем патне те çырса йама ыйтрĕç.

— Халлĕхе никама та шарламăпăр,—канаш турĕç вĕсем, йулташсене кайран, ответ килнĕ хыççăн каласан, авантарах пулать...

Нумай вăхăт кĕтрĕç хĕрсем Фридăран ответ килессе, унтан кĕтме те пăрахрĕç. Ответ килмерĕ.

— Çитмерĕ ĕнтĕ пирĕн çыру, çавăнпа çырмарĕ, атту пулсан çырмалахчĕ вăл,—терĕ Настаç, хĕрсене те, хăйне те лăплантарса. Анчах йăнăш пулчĕ ку. Шăп çĕнĕ çул умĕнхи каç, хĕрсем вечĕра кайма хатĕрленнĕ чух, вĕсен алăкĕнчен такам хыттăн шаккарĕ.

— Харитонăвă Анастаççи кунта-и?

— Кунта! Кĕрĕр.

Пÿлĕме сумкăллă почтальон кĕрсе тăчĕ.

— Сире валли çыру пур... Ал пусăр çакăнта.

— Аннерен ĕнтĕ ку!—савăнса чупса пычĕ Настаç почтальон патнеле. Вăл кăтартнă тĕле хăварт ал пусрĕ те, çырăва илсе пăхрĕ. Унтан сасартăк:

— Хĕрсем!.. Фридăран!.. Мускавран!!.—тесе кăшкăрса йарса пÿлĕм тăрăх пĕчĕк ача пек сикме тапратрĕ. Хĕрсем ăна сырăнса илчĕç.

— Уç! Вула!

Саваннипе чĕтрекен аллисемпе Настаç сенкер канверта уçрĕ. Çырăва кăларчĕ. Унпа пĕрле канверт ăшĕнчен пысăк фотографи картăчки тухрĕ. Хĕрсем ун çине касса кайса пăхма тытăнчĕç...

Самолет. Ун умĕнче сăран тумпа Фридă кулса тăрать.

Фотографи картăчкин тепĕр йенче: „Хамăн йуратнă чăваш хĕрĕсене“, тенĕ.

Çырăвĕнче Фридă çапла çырнă:

„Манăн инçетри çывăх тусăмсем!

Чăн малтан, еп сире Çĕнĕ Çул йачĕпе саламлатăп!

Сирĕн çырăва анчах илтĕм, вăл мана нумай вăхăт шыраса çÿренĕ, çавăнпа та еп йури ответ çырмасăр тăнă тесе ан шутлăр.

Питех те савăнтарчĕ мана сирĕн ăшă, кăмăллă, чĕререн çырнă çыру. Уншăн пысăк, хĕрÿлĕ тав сире. Çавнашкал пĕр-пĕрин çитĕнĕвĕсемшĕн савăнни, ÿсĕмсемшĕн саламлани пирĕн совет çĕршывĕнче çеç пулма пултарать çав вăл, ма тесессĕн, пирĕн пурин те пĕр ĕмĕт, пĕр ĕç, пĕр задачă—хамăрăн çĕршыва чечеклентересси, унăн тĕрекне ÿстересси. Есĕр ман вĕçев ăнăçлă иртнĕшĕн саваннă пекех, епĕ те сирĕншĕн—есĕр вĕренме пуçланăшăн чĕререн саванатăп. Вĕренĕр, тусăмсем, пĕлÿсене ытларах илме тăрăшăр. Пирĕн телейлĕ çĕршывра епĕр, хĕрарăмсем, арçынсемпе пĕр тан, епĕр ăçта ĕçлес тетпĕр—çавăнта ĕçлеме пултаратпăр,—çавă пире тата ытларах хаваслантармала... Паллах, чăн-чăн ăста пулас тесен нумай вĕренмеле, тăрăшса ĕçлемеле. Акă, епĕ хам вĕçев умĕн нумай тренировкă турăм.

Мана хăвăрăн пурнăçпа вĕренÿ мĕнле пыни çинчĕн çырсах тăрăр. Кĕнекесем кирлĕ пулсан—ыйтса йарăр, Мускаври тупма çăмăлтарах.

Пурсăрăн аллăрсене те хытă чăмăртатăп. Фотокартăчкă йарап, хăвăрăнне кĕтетĕп.

Сирĕн тусу Фридă“.

Ку çыру хĕрсене вĕçĕмсĕр савăнтарчĕ. Çав каçах, çĕнĕ çул вечĕрне кайсан, вĕсем ăна хăйсен нумай йулташĕсене вуласа пачĕç. Тепĕр кунне ун çинчен пĕтĕм шкул пĕлчĕ. Пурте хавасланса калаçрĕç вăл çыру пирки.

Анчах пуринчен ытла вăл Настаçăн чĕрине хыттăн кĕрсе ларчĕ, унăн летчик пулас ĕмĕтне тепĕр хут хăпартса йачĕ. Вечĕртан таврăнса саланса выртсан, вăл такçанччене сыврса кайаймарĕ, унăн пуçĕнче шухăш çавăн çинчен çеç пулчĕ. Майĕпе, пĕрин хыççăн тепри, асаилÿсем шуса иртрĕç. Ача чухне пĕрремĕш хут самолетсем курни, йалти çынсем калаçни, унтан пĕлтĕрхи уйав, вĕçев, колхоз хăналани, Фридă...

Ах, Фридă, Фридă, йепле манăн та сан пек пулас-ши?

* * *

Хĕлле, пĕр шартлама сивĕ ирхине, радио инçетри çурçĕрте, пăрлă океанра „Челюскин“ йатлă пăрçĕмĕрен путни çинчен пĕлтерчĕ. Çĕр те вунă совет çынни пăр çине тухса йулнă... Ку хăрушла хыпар пĕтĕм совет халăхне пăлхатса йачĕ. Партипе правителствă челюскинцăсене çăлас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене чĕререн ырласа, вăл ĕçсем мĕнле пынине часрах пĕлмешкĕн кашни çын ирпе ирех репродуктăрсем умне туртăнчĕ, хаçат киоскисем патне чупрĕ...

Настаçпа унăн йулташĕсем те вăл кунсенче пĕр челюскинцăсем çинчен интересленнипе çеç пурăнчĕç.

„Йепле-ши, çăлма ĕлкĕрĕç-ши? Вĕт вĕсем пирĕн, пирĕн совет çыннисем, унта вĕсене совет халăхĕ йанă!“

Анчах пÿлĕмри репродуктăр куллен кун лăплантаракан хыпарсем каласа пычĕ.

„Пăрçĕмĕренсем тухаççĕ... Дирижаблĕсем вĕçсе тухнă... Çавăн чухлĕ звено айероплан кайнă...“

Çăлаççех! Çăлаççех!

Унтан сасартăк чĕресене калама çук çĕклenteрекен хыпар йанăраса çитрĕ:

„Летчик Ляпидевский Шмидт лагĕрĕнчен вуникĕ çынна илсе тухнă, вăл шутра икĕ ача...“

Ку хыпар килнĕ кун Настаçпа йулташĕсем çĕрĕпех çывăрмарĕç, çавăн çинчен çеç калаçса выртрĕç.

— Йепле матур вăл пирĕн летчиксем!..

— Тĕнче курманнине кăтартаççĕ вĕт!

— Çăлнисем мĕнешкел савăнçĕ пулĕ.

— Ара, ĕнтĕ...

— Ляпидевский мĕнлескер-ши хăй? Хăрах куçпа та пулин пăхса илесчĕ ун çине!

— Е-е, ес тата! Ăçтан куратăн? Шупашкара килес çук ĕнтĕ вăл!

— Еп ăна, хĕрсем... çавтери йуратса чуптăваттăм çакăншăн.

— Кирек кам та çавах пулĕ...

Радио татах савăнăçлă хыпарсем илсе килсе тăчĕ.—Водопйанăв, Доронин, Каманин, Леваневский, Молоков, Слепнĕв лĕтчиксем пăрлă океан тыткăнĕнчи çынсене материк çине турттараççĕ... Ĕнтĕ, нумай йулман... пайан йулашкисене илсе тухнă... йыттисене те хăварман... Мухтав совет лĕтчикĕсене!

Каллех çĕрĕпе хавасланса калаçрĕç 12-мĕш пÿлĕмри хĕрсем... Каллех малтан калаçни патне çавăрăнса тухрĕç:

— Курасчĕ вăл паттăрсене хăçан та пулин!

... Хĕрсем кун çинчен шанчăксăр ĕмĕтленнĕ пулсан та, сасартăк вĕсем ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитрĕ... Хĕллехи сивĕ кунсем иртрĕç, шавлăн йухса карĕç çурхи чарусăр шывсем. Анлă Атăл та хăйĕн çыранĕсене кĕчĕ.

— Челюскинцăсем килеççĕ!—çиçĕм пек сарăлчĕ хула тăрăх хыпар.

Пирĕн хĕрсем малтанах куна ĕненмерĕç, анчах Шупашкарваскасах хăнасене кĕтсе илме хатĕрленнине кура ĕненчĕç... Хăйсем те хатĕрленме пуçларĕç.

— Темле пулсан та, еп хăш Геройне те пулин пĕр букет чечек тыттаратăпах,—терĕ Настаç.

— Еп те, еп те, еп те...—шавласа карĕç унăн йулташĕсем. Икĕ кунтан:

— Пайан çитеççĕ!—терĕç.

Çанталăкĕ вăл кун уйар та ăшă пулчĕ, тÿпере пĕр пĕлĕт татки те çук. Йешĕрекен сатсем хускалмаççĕ, Атăл тĕкĕр йевĕрлĕ, хăйĕн аваллăхĕ çинчен шухăша кайнă пекех лăпкă... Ирхи апатсем хыççăнах пĕтĕм Шупашкар халăхĕ колоннăн-колоннăн çыран хĕрнеле туртăна пуçларĕ. Йурăсем йанраççĕ, музыкă кĕрлет, пур çĕрте те савăнăç пĕрхĕнет, кашнин аллинче тенĕ пекех—чечексем: пирĕн пата геройсем килеççĕ!

Кăнтăрла тĕлнеле Атăл хĕрри лăках тулса ларчĕ — çыран патнерех пыма та май çук. Пакша пек çивĕч ачасем йăвăç тăррисене хăпара-хăпара ларнă (унтан аванрах курма пулатĕçке).

Чылай вăхăт кĕтрĕç геройсем килмели пăрахута. Анчах пĕр çын та кайала каймарĕ. Тен, пĕр талăк кĕтмеле пулнă пулсан та, никам та кайман пулĕччĕ.

Сасартăк, çыран хĕрринчи тополĕн чи çÿлти туратти çинче ларакан ача:

— Атăл тăрăх самолĕтсем килеççĕ! Вĕсен айĕнче пăрахут килет!—тесе çухăрса йачĕ.

Халăх кар-р!.. шăвăнчĕ çыран хĕрнеле. Нумайăшне хĕстерсе лартрĕç, шайи-шайи çуйăхкалама тапратрĕç. Анчах темле тăвăр пулсан та, Настаçпа унăн йулташĕсем хăйсен айăкпĕрчисене хĕрхенмесĕрех, чавсисемпе тĕрткеленсе, çыран хĕрринчи карлăк патне тухрĕç...

Ача суйман иккен. Моторсем ĕрленĕ сасă илтĕнсе кайрĕ, унтан кăшт тăхтасанах Иурату сăмсахĕ хыçĕнчен тăвата самолĕт чăмса тухрĕç. Пристăнь патнерех çитсен, вĕсем трук кайала çаврăнчĕç те—каллех тăвала кайса çухалчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ—самолĕтсем тепĕр хут кайала килни курăнчĕ. Анчах кунче вĕсем сăмсах хыçĕнчен хăйсем çеç мар, палубăран пуçласа мачтăсем тăрне çитийех илемлетсе пĕтернĕ пĕчĕкрех пăрахутпа пĕрле курăнчĕç.

Музыкă йанратса йачĕ... Халăх тăвăллăн алă çупма тытăнчĕ... Настаç, çухалса кайнă пек пулса, йулташне аллинчен ыраттармалах чăмăртаса илчĕ.

— Çавăнта ĕнтĕ вĕсем, пăх-ха ес, пăх!..

— Еп ахаль те санран кайа мар пăхатăп...

Самолĕтсем сывлăшра каллĕ-маллĕ хурчăкасем пек йавăнчĕç, музыкă таттисĕр йанрарĕ, халăх ал çупрĕ, савăнăçлăн шавларĕ, çав вăхăтра пăрахут пристăнь çумне пырса тăчĕ.

Пĕр минут. Иккĕ. Виççĕ...

Ах, вăрăмçке ку минутсем!

Анчах та... акă ĕнтĕ, пăрахут çинчен тухнă çынсем курăнчĕç. Вĕсем хисеплĕ хурала чеçт парса тăвала хăпара пуçларĕç. Музыкă татах та хытă йанратса йачĕ:

— Все выше, и выше, и выше...

Настаçпа йулташĕсен чĕрисем чăннипех кăкăртан сиксе тухасшăн пулас! Вĕсем çула ик йенпе тăрса тухнă пионерсенчен чечексене йышăнса, майĕпе хуланала хăпаракан çынсене сăнĕсенчен палласшăн карлăк урлă уртăнсах пăхрĕç.

—Ну, пăхăр ĕнтĕ, пăхăр,—терĕ Настаç, йулташĕсене хăвăрттăн.—Ав, пысăкки, картусли—Доронин... Сарăрах пиншакли Ляпидевский! Атăр, тĕлпулмали çĕре кайса тăратпăр!..

Çав самантрах çаврăнчĕ те, чечек тытнă аллине çÿле çĕклесе, тепринпе хăйне валли çул уçса, халăх хушшине хирĕнсе кĕрсе карĕ. Ун хыççăн унăн йулташĕсем те. Тĕккеленĕшĕн вĕсене темиçе çын та вăрçса йулчĕç, анчах хĕрсем ун çине пăхмарĕç, часрах çул сăртран тÿреме тухнă çĕре чупса пырса тăчĕç.

— Чечексене хама парăр,—хушрĕ Настаç, йулташĕсене васкаса.—Пурсăмăра та чупса тухма аван мар... Часрах, çитеççĕ!

Хĕрсем букетсене пачĕç. Настаç халь тата ытларах пăлханса карĕ. Чĕри нийепле те итлемест—сикет те сикет. Алăсем те темле чĕтренĕ пек...

Акă ĕнтĕ, хаклă хăнасем сăрта хăпарса çитрĕç. Настаç, пăлханса кайнипе, ним астумасăр çул варнеле чупса тухрĕ те, аллинчи букета Ляпидевскине тыттарчĕ. Лешĕ ун çине кăмăллăн кулса, йăвашшăн пăхса илчĕ те пуçĕпе тайса:

— Спасибо, спасибо!—терĕ.

Настаçпа унăн йулташĕсен ĕмĕчĕ тинех тулчĕ...

Марш кĕвви майĕпе, Атăл хĕрринчи халăх площăтĕле утрĕ. Пысăк, хĕрÿлĕ митинг пулса иртрĕ кунта. Çĕршыв паттăрсене тивĕçлĕн чысларĕ...

Каçхине киле таврăнсан, Настаç Фридă патне пысăк çыру çырчĕ. Унта вăл пĕрремĕш хут хăйĕн лĕтчик пулас ĕмĕчĕ çинчен каласа пачĕ.

„Манăн вĕçекен пулас килет, хаклăран та хаклă тусăм Фридă, анчах та мĕнрен пуçламалине, ăçта каймалине, кампа калаçмалине пĕлместĕп. Хамăн ĕмĕте нумай вăхăт еп пытарса пурăнтăм, ун çинчен никама та каламарăм, анчах та тек тÿсейместĕп шарламасăр. Пулăш мана, чунăм! Тÿррипе çырса йар, май пулĕ-ши, çук-ши? Тен, еп пустуй ĕмĕтленетĕп пулĕ...

* * *

Тепӗр кунне Настаҫ киле карӗ те, ҫу каҫах йалта пурӑнчӗ. Ӗлӗкхи пекех колхозра ӗҫлерӗ, амӑшне пулӑшса хӑварма тӑрӑшрӗ. Амӑшӗ хӗрӗ ҫине пӑхса савӑнса та ҫитерейместь: ашшӗ ҫук пулин те, ҫын пулчӗ вӗт! Хулара вӗренет, хаљ акӑ пулӑшма килчӗ... Пурӑна-киле хвершӑл пулаҭ, тет-ха... Йепле ан йӑпантӑр ӗнтӗ амӑшӗн чӗри?

Йала ҫитсенех, Настаҫ Никанор ҫинчен ыйтса пӗлчӗ. Ӑҫта кайса кӗнӗ-ха вӑл, мӗншӗн ҫыру ҫырма пӑрахрӗ? Йуратнах пулсан йепле-ха пит час манса кайнӑ? Анчах ун ҫинчен йӗркелӗ каласа паракан пулмарӗ.

— Таҫта вӗренме кайнӑ, теҫҫӗ...

Каҫ-каҫ Настаҫ малтанхи пекех хӗрсемпе вӑййа тухрӗ, шӑпчӑк йевӗр сассипе йалти ҫӗнӗ йурӑсене шӑрантарчӗ, ҫамрӑк савӑнӑҫпа савӑнса ташларӗ. Ҫапла ҫу иртсе кайни те сисӗнмерӗ, вӗренме каймали вӑхӑт килсе те ҫитрӗ. Йапалисене, кӗнекисене пухрӗ те, амӑшӗпе, кӳршисемпе сывпуллашса, каллех хӗл каҫмалӑх тухса карӗ.

Шкула пынӑ кунах Настаҫӑн пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ: кунта ӑна такҫантанпах Фридӑ ҫырӑвӗ кӗтсе выртнӑ иккен. Фридӑ Настаҫӑн ыйтӑвӗсем пирки ҫырнӑ: кӑмӑл пулсан, сывлӑх пулсан, авиаци техникумне кайма пулаҭ... Зайавленисене августӑн 15-мӗшчен илеҫҫӗ, унтан испытанине каймала...

— Ех, каллех пулаймарӗ, кайа йулнӑ ӗнтӗ,—хуйхӑрса илчӗ Настаҫ, малтанах ҫырӑва ҫавтери хавасланса вуланӑскер.—Ну, килес ҫул хуҭ те тем пулсан та кайатӑп!..

Ҫавӑнтах хӑйӗн шухӑшӗ ҫинчен Фридӑна пӗлтерчӗ.

Пӗр-ик кунтан вӗренӳ пуҫланчӗ. Пурнӑҫ каллех йаланхи йӗркене кӗчӗ: уроксем, килти заљатисем, кружоксем, пухусем, хутран-ситрен кино йе театр. Ытлашши нимӗн те ҫук...

Пӗрре кӑна ҫавӑн пек йапала пулса иртрӗ. Октабӗр уйавӗ умӗн шкулта хор организацилеме шут тытрӗҫ. Ҫырӑнакансем пит нумай пулчӗҫ, Настаҫ та—йаланах йурлама йуратаканскер—ҫырӑнчӗ ҫавӑнта. Пӗр каҫхине шкула икӗ музыкант пычӗҫ те, хора ҫырӑннисен сассисене тӗрӗслеме тытӑнчӗҫ.

Майӗпе, черет Настаҫ патне те ҫитрӗ. Ку таранччен йурлани-йурламанни ҫинчен ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн, хура куҫлӑхлӑ музыканчӗ пианино клавишӗсем ҫине пусрӗ.

— Ҫак тона илӗр-ха...

Настаҫ ҫӑмӑллӑнах йурласа илчӗ.

— Хаљ ҫакна... (музыкант ҫӳлӗрех тон пачӗ).

Настаҫ каллех йурларӗ. Музыкант тонсене хӑпартнӑҫемӗн хӑпартса пычӗ, Настаҫ ҫаплах йурларӗ... Музыкантсем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ. Темскер калаҫрӗҫ хӑйсем хушшинче.

— Халӗ пӗр-пӗр йурӑ йурласа парӑр-ха,—терӗ вӗсенчен пӗри, Настаҫ ҫине куҫлӑх урлӑ пӑхса.

— Мӗнле йурӑ?

— Хуҭ те мӗнлине, пурӗпӗр...

Кӑштах пӑлханнӑ Настаҫ темиҫе самант тытӑнса тӑчӗ те, хӑйсен йалӗнчи хӗрсен йуррине, куккук ҫинчен йурласа йачӗ. Унӑн сасси анлӑн та уҫҫӑн, ҫавтери таса йанраса карӗ... Сыпӑк хыҫҫӑн сыпӑк,—вӑл пӗр виҫ-тӑват минут хушши йурларӗ, музыкантсем унӑн йуррине нихҫан йурӑ илтмен пекех итлесе ларчӗҫ.

— Аван! Пит аван!—сиксе тӑчӗ Настаҫ йурласа пӗтерсен куҫлӑхлӑ музыканчӗ.—Тӗлӗнмеле сасӑ! Сирӗн халех вӗренме тытӑнас пулаҭ, кун пек сасса сайа йама йурамасҭ!..

Кун пек мухтанипе Настаҫ нийепле мар пулса карӗ. Вӑл нимӗн те чӗнеймерӗ.

—Мӗнле шутлатӑр? Йурлама вӗренес кӑмӑл пур-и? Ну, каларсамччӗ ӗнтӗ! Ӗненӗр мана, сирӗн сасапа темиҫе ҫултан Мускавра йурлама пулаҭ!—ҫине тӑрсах калама тытӑнчӗ музыкант.

Вӑтанса кайнӑ Настаҫ:

— Пӗлместӗп,—терӗ те, пӳлӗмрен чупса тухрӗ.

Анчах ӗҫ кунпа пӗтмерӗ. Тепӗр куннех ӑна шкул директӑрӗн кабинетне чӗнтерчӗҫ. Унта, директӑрпа пӗрле, хайхи куҫлӑхлӑ музыкант лараҭ иккен. Вӑл Настаҫа каллех ӳкӗтлеме тытӑнчӗ.

— Ман ку шкултан вӗренсе тухас килет,—терӗ Настаҫ унӑн сӑмаххисене хирӗҫ.—Йурласси вӑл...

— Вӗренӗрех, вӗренӗрех, сире никам та чармасҭ, анчах та каҫсерен пирӗн техникума пӗрер-икшер сехетлӗхе пырӑр. Епӗр сире уйрӑм преподавателӗл паратпӑр!

Ҫавӑнтан вара Настаҫ йурлама вӗренме ҫӳреме пуҫларӗ. Анчах унӑн йаланхи ӗмӗчӗ—сывлӑшра вӗҫес ӗмӗт пӗртте вӑйсӑрланмарӗ уншӑн...

* * *

Хӗл аван иртрӗ. Вӗренӳ ҫулне Настаҫ премиллнипе вӗҫлерӗ. Кунпа пӗрлех вӑл куллен тенӗ пекех, куҫлӑхлӑ музыкант ырлланине итлесе пурӑнчӗ.

Йулашки зачотсене панӑ кунсенче Шупашкар илемленме тытӑнчӗ. Хула урамӗсене, ҫуртсене, сатсене кун пек чаплӑн илемлетнине Настаҫ хӑй пурнӑҫӗнче те курманччӗ-ха. Ӑҫтан кӑна шухӑшласа каларӑҫҫӗ!..

Унчухне Шупашкар Республикӑ вунпилӗк ҫул тултарнине уйавлама хатӗрленнӗ. Заљатисем уйав кунӗччен пӗр ерне малтан пӗтрӗҫ пулин те, Настаҫпа унӑн тусӗсем уйав иртмесӗр киле кайас мар, тесе шут турӗҫ. Праҫникӗ ытла та пысӑкҫке, ӑҫтан курмасӑр хӑваран ӑна йепле иртернине?

Уйав (хисеплӗ вулаканӑм, есӗ пулнӑ вӗт унта) чӑннипех те калама ҫук хӑватлӑ иртрӗ ӗнтӗ... Темиҫе ҫӗр хӑна, делегацисем, Геройсем, артистсем, писатӗлсем килсе тулчӗҫ Чӑваш хулине.

Парахутпа килеҫҫӗ. Машинӑсемпе килеҫҫӗ. Утпа. Самољотсемпе...

Виҫӗ кун кӗрлерӗҫ ватӑ Шупашкар урамӗсем, виҫӗ кун йанрарӗҫ сатсемпе театрсем, виҫӗ кун таттисӗр пӗрхӗнчӗ савӑнӑҫ...

Ним мар, ҫак уйав кунӗсенче Настаҫӑн пӗтӗм малашнехи пурнӑҫ ҫулӗ урӑх йӗр ҫине куҫрӗ.

Вӑл ак ҫапла пулчӗ. Уйав кун плошчӑтри митинг пӗтсен, пӗтӗм халӑх — темиҫе пин ҫын—хире, аеродрома карӗ. Унта Горькинчен килнӗ парашӳтистсем самољотсем ҫинчен сикеҫҫӗ, терӗҫ. Настаҫпа йулташӗсем те карӗҫ халӑхпа пӗрле. (Темле пулсан та, Настаҫ унпек ҫӗртен йулма пултарайман ӗнтӗ!)

Вӗсем аеродрома ҫитнӗ ҫӗре, унта халӑх темӗн чухлех пухӑнма ӗлкӗрнӗ иккен. Таҫтан килсе тулнӑ самољотсем ӗрлесе тӑраҫҫӗ... Унччен те пулмарӗ, пӗрин хыҫҫӑн тепри, сывлӑша виҫӗ самољот йарӑнса хӑпарчӗҫ те аеродром ҫинче ҫавӑрӑнма тытӑнчӗҫ.

— Сикеҫҫӗ...

— Халех сикеҫҫӗ...—тенине илтрӗҫ хӗрсем.

Чăнах та, сывлăша малтан хăпарнă самолѓотăн ҫунатти ҫине ҫын тухса тăни курăнчĕ.

— Сикет!

— Ай, ай...—шиклĕн ҫавăрса тытрĕ Настаҫа хулĕнчен пĕр йулташĕ.

Ҫын чăнах та самолѓот ҫунатти ҫинчен пĕррех сикрĕ. Пĕр ҫĕр метр чухлĕ вăл чул пек анчĕ айалала, унтан парашӳтне уҫса йачĕ те, йерипен анма пуҫларĕ... Ҫав вăхăтрах, тепĕр самолѓот ҫинчен те сикни курăнчĕ. Кĕҫ—виҫҫĕмĕшĕ ҫинчен те сикрĕ... Пăхса тăракансен куҫĕ-пуҫĕ салансах карĕ. Ҫынсене сиктернĕ самолѓотсем ҫавăнтах ҫавăрăнса ҫӳреҫҫĕ—сикнисене кайала лартасшăн тейĕн, пурҫăн парашӳтсен ҫутă куполĕсем хĕвел ҫуттинче йăлтăртатаҫҫĕ.

Акă, малтан сикни ҫĕре анса ҫитрĕ. Дежурнăйсем ун патне чупса пырса, пиҫиххисене вĕҫертрĕҫ. Вăл хушăра кайрантарах сикнисем те анса тăчĕҫ. Ик минутран виҫҫĕшĕ те аэродром ҫинчи грузовик ҫине хăпарса тăчĕҫ. Халăх самантрах сырса илчĕ вĕсене. Настаҫпа йулташĕсем те чупса пычĕҫ унта. Чупса пычĕҫ те—сикнине пăхса тăнă чухнехинчен те ытларах тĕлĕнсе карĕҫ: сикекенсенчен пĕри—хĕрача иккен! Сап-сар ҫӳҫлĕ, тулли ҫавракa питлĕ ҫамрăк хĕрача...

Кĕске митинг пулчĕ. Грузовик ҫинче тăракан ҫар ҫыннисенчен пĕри ҫав сар ҫӳҫлĕ хĕрачана сăмах пачĕ.

— Йулташсем! Чăн малтан, еп сире сирĕн Республикăн уйавĕ май авиацине хутшăннă хĕрсен йачĕпе саламлатăп!—терĕ вăл, аллинчи сăран ҫĕлĕкĕпе сулса.—Пайан епĕ парашӳтпа ҫирĕмĕш хут сикрĕм, манăн ҫирĕмĕш сикӳ—сирĕн Республикăн уйавĕ йачĕпе пулчĕ...

Унтан сар ҫӳҫлĕ хĕр хăй парашӳтпа мĕнле сикме вĕренни ҫинчен, хĕрарăмсен те сыхлăх ĕҫне вăйлăн хутшăнма кирли, самолѓотпа вĕҫме вĕренмели ҫинчен каларĕ, хĕрсене авиаци ĕҫне чĕнчĕ.

Настаҫ унăнне пĕр сăмахне сиктермесĕр итлесе тăчĕ. Вăл каласа пĕтерсен, ывҫă тупанĕсем ыратакан пуличчен ал ҫупрĕ...

Сасартăк вĕсен тĕлĕпе, халăх хушшипе хĕсĕнсе, ҫар тумĕ тăхăннă виҫĕ ҫын иртсе карĕ.

— Водопйанăв.... Водопйанăв...

— Совет Сойузĕн Геройĕ...

— Хăшĕ?

— Ав, симĕс гимнаҫтйоркăли... Сарлаки...—пăшăлтатса илчĕ таврари халăх, ҫар ҫыннисем иртсе кайнă йеннеле пăхса.

Куна илтсен, Настаҫ кăмăлĕ татах хăпарса карĕ. Йулташĕсене ҫаннисенчен кăрт-карт! туртрĕ:

— Айăр, кайса куратпăр!

— Кама?

— Водопйанăва!

— Айăр...

Уйава Водопйанăв хăйĕн самолѓочĕпе пынă иккен. Халѓ вăл хăй йачĕпе тăракан колхозри хĕрарăмсене сывлăшра йарăнтарма шут тытнă. Пирĕн хĕрсем пынă чух вăл хĕрарăмсене самолѓот ăшне кӳртсе тăрат мĕн. Пĕрин хыҫҫăн тепри—темиҫе хĕрарăм кĕрсе ларчĕҫ.

— Еще одно место!—терĕ вăл, йулашки хĕрарăм кĕрсе вырнаҫсан. Ҫавăнтах хăйĕн ҫине пăхса тăракан Настаҫа курчĕ те:—Хотите, девушка, покатаю?—тесе ыйтрĕ.

Хĕр именсе тăнине кура, вăл татах чĕнчĕ:

— Ну, чтож вы... Садитесь!

Настаҫ пĕрре йулташĕсем ҫине, тепре Водопйанăв ҫине пăхса илчĕ те, палханнипе хĕп-хĕрлĕ пулса кайса, самолѓот патне чупнă пекех пычĕ. Водопйанăв ăна сылтăм хулĕнчен тытса, хăпарма пулăшрĕ.

Икĕ минут та иртмерĕ—Герой самолѓочĕ ҫĕртен уйрăлса ҫӳлеле хăпарса кайрĕ. Аэродром тавра пĕрре ҫаврăнсан, вăл Шупашкар урлă кайса Атăл леш йенчи вăрман ҫинче вĕҫрĕ, унтан, пĕр вунă минутран, аэродром ҫине кайала пырса, ҫемҫен кăна анса ларчĕ.

— Ну, мĕнле, кăмăла кайрĕ-и?—ыйтрĕ Водопйанăв самолѓот ҫинчен тухакан колхозницăсенчен.

— Пит аван, пит аван...

— Хăрамарăр-и?

— Ара, кăштах пур ĕнтĕ...

— Сире тата?—уйрăмăнах ыйтрĕ вăл Настаҫран.

— Аван...

— Аван пулсан, хăвăрăн вĕҫме вĕренес пулат!

Ку ĕнтĕ Настаҫăн шухăшне вулана пекех пулчĕ.

— Епĕ... епĕ ун ҫинчен темиҫе ҫул ĕмĕтленсе пурăнатăп та, май ҫук,—терĕ вăл пăлханнипе тутисене ҫырткаласа.

— Ма май ҫук пултăр?—тĕлĕннĕ пекрех ыйтрĕ Водопйанăв.—Кăмăлу пулсан, майне тупма пулат ăна. Халѓ вĕҫме вĕренекен хĕрсем пит нумай. Ĕҫлеҫҫĕ, ҫав хушăрах вĕренеҫҫĕ...

— Вăл кунта марҫке...

— А кунта ма йурамаст? Сирĕн те аэроклуб уҫăлнă вĕт халѓ, ҫавăнта чиперех вĕренме пулат!

Самолѓот патне автомобил пырса тăчĕ.

— Михаил Ваҫилйĕвич, епĕр сире илме!—терĕ машинăра ларакансенчен пĕри, алăкне уҫса. Водопйанăв ăна пуҫĕпе сулчĕ те, Настаҫ аллине тытса чăмăртарĕ:

— Ҫапла, хуракуҫ! Вĕренĕр вĕҫме. Кам пĕлет, тен хăҫан та пулин сывлăшра тĕлпулăпăр... Сывă пулăр!

Автмобил ҫине ларчĕ те кайрĕ. Настаҫ часрах йулташĕсене шыраса тупса, вĕсене халѓ ҫеҫ пулнă калаҫу ҫинчен каласа пачĕ.

— Мĕнешкел телей, хĕрсем! Мĕнешкел телей! Водопйанăв манпа хăйĕн тăван йăмăкĕпе калаҫнă пек калаҫрĕ! Вĕҫме вĕрен, терĕ...

— Ес мĕн шутлатăн?

— Епĕ тахҫанах шутласа хунă ĕнтĕ ун ҫинчен, сире каламан ҫеҫ... Киле кайса килеп те, вĕренме пуҫлатăп!

Хĕрсем хуланала утрĕҫ. Шашкă сарнă урай пек тикĕс ҫул тăрăх анатала аннă чух, сасартăк хыҫалтан тахшин сас пачĕ вĕсене:

— Ытла хыт утатăрҫке, хăваласа та ҫитме ҫук сире...

Ҫапла каласанах, вĕсемпе темле ҫамрăк ҫар ҫынни танашса йунашар утма тытăнчĕ. Шухăша кайса пыракан Настаҫ ун ҫине ни ăшшăн мар, ни сиввĕн мар, ытахалѓрен тенĕ пек пăхса илчĕ ҫеҫ. (Сахал-и ҫĕр ҫинче хĕрсемпе калаҫма тăрăшакан каччă!)

— Йепле пурăнатăр, Наҫтă?—терĕ ҫар ҫынни, темиҫе утăмран, ун ҫине хулпуҫҫи урлă чалăшшăнтарах пăхса.—Паласшăн та марҫке...

Настаҫ, куна илтсен, ун ҫине шăтарас пек пăхрĕ. Ҫар ҫынни те ун ҫине пăхса кулса йачĕ.

— Никанор!..

— Епĕ ҫав...

— Йепле майпа ес кунта? Хăҫантанпа? Хĕрсем, паллашăр, ку Никанор... Айăр, сата кĕрсе ларăпăр.

Ман санран ыйтса пĕлмелисем пит нумай-ха. Ăста хăйаматне çухалтăн ес, мур пуçĕ?.. Килте пултăн-и? Еп ыран кайас тетĕп ĕнтĕ...

Настаçăн Никанор çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлесси килнипе, вăл ăна ыйту çине ыйту парса пычĕ, хăшне лайăххăн калама та памарĕ. Сата пырса пĕр тенкел çине, халăх сахалтарах çĕре вырнаçса ларсан вара, вĕсем каç пуличченех, тăраничченех калаçрĕç пĕр-пĕринпе. Никанор йалтан тухса кайсан В... хулине çар шкулне вĕренме кĕнĕ иккен, хаљ кĕçĕн командир йатне илсе, темиçе кунлăх отпуска килнĕ. Сăн-пичĕ темле кăшт улшăнарах панă, шăмшакĕ ĕлĕкхинчен нумай тĕрекленнĕ. Кăкри тулли тĕрлĕ значок. Унччен те çăра пулнă сасси татах çăраланнă, васкамасăр, сăмахĕсене татса калаçаť...

Настаç та çак икĕ çул хушшинчи пурнăçĕ çинчен йĕркипе, ним сиктермесĕр каласа пачĕ. Йулашкинчен, пайан мĕн пулни çинчен те, хăйĕн ĕмĕчĕ çинчен те каласа пачĕ.

— Мĕнле шутлатăн ес? Ырлатни ман шухăша, хурлатни?—ыйтрĕ йулашкинчен Настаç.

— Аван, Настаç, пит аван, — терĕ ăна хирĕç Никанор икĕ çул ĕлĕкрех, йалта, уйăрлас умĕн калана пекех.

Вĕсем сак çинчен тăчĕç те, пĕр-пĕрине хулĕсенчен тытса, ăшшăн та йеринпен калаçса Атăл хĕрнеле, илемлĕ те хаваслă музыкă илтĕннĕ çĕреле утрĕç. Вĕсен кăмăлĕсем вăл каçхине уйăрма çук пĕрешкел пулчĕç, чĕрисем—икĕ çамрăк телейлĕ чĕре—пĕрпек тапрĕç...

* * *

... Кĕркунне çитсен Настаç хăйĕн чĕринче таxçантанпа ларнă ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕ. Вăл аероклубра вĕренме пуçларĕ. Мĕнешкел савăнăç, мĕнешкел пăлханатарулă вĕри савăнăç пачĕ ăна вĕренме илнисен йачĕсем хушшинче хăйĕн йатне курни!

Унтан вара...

* * *

— Чиперех вĕрентĕм,—терĕ Настаç, вакун чӳречи тĕлĕпе вĕлтлетсе иртекен йăвăçсем, телеграф йуписем çине пăхса.—Йулташсенчен йулни пĕрре те пулман манăн. Çапла... Хаљ малала вĕренме йачĕç...

Настаç хăйĕн вăрăм калавне каласа пĕтерсен, еп темиçе минут хушши ун çинчен куç илмесĕр шухăшласа пытăм. Ака ĕнтĕ ман умра чăваш хĕрĕ, таçти инçетри пĕчĕк йалта, нумай хурапа шурă курса ӳснĕскер. Тен, унăн асламăшĕ те, амăшĕ те, Настаç çулĕнче чух хăйсен йалĕнчен вунă çухрăмран айакка кайман пулĕ, хăйсен пурнăçĕнче, паллах, ырлăх курман ĕнтĕ вĕсем, ухватпа çурласăр пуçне нимĕн те пĕлмен пулĕ, тен, вĕсем... Анчах ку... танаштарма пулаť-и ăна вĕсемпе? Çук, танаштараймастăп еп вĕсене!.. Ун умĕнче—уçă та такăр çул, çав çулпа вăл хăйĕн ĕмĕчĕсем чĕннĕ çĕреле ним шиксĕр, тулли кăмăлпа, пĕтĕм кăкрипе çăмăллăн сывласа утаť... Телейлĕ ĕмĕр, телейлĕ çамрăклăх! Мĕн çинчен шухăшлаť-ши хаљ вăл? Паллах, хăйĕн пуласлăхĕ çинчен ĕнтĕ, малала йепле вĕренесси çинчен... Тен, хăйне хăй лейтенант пулнă пек те кураť пулĕ. Ун пирки иккĕленмелийех те çук çав,—лейтенант та пулма пултараť...

Вакунри халăх сасартăк унтала-кунтала хускалма тапратрĕ. Пĕрисем тумлана пуçларĕç, теприсем йапалисене пухса çыхаççĕ.

— Мускав, Мускав!..

— Çитетпĕр...

Çулăн икĕ йенĕпе те тирпейлĕ шурă дачă çурчĕсем йулса пычĕç, пуйăс пĕлĕте хура тĕтĕмпе тĕтĕрекен вăрăм тăрпалă савăтсем тĕлĕпе иртсе пычĕ... Темиçе минутран вăл çавтери хыттăн çухăрса ыткăнма тытăнчĕ. Çуртсем, вăрăм пуйăс составĕсем, будкăсем, тĕрлĕ сăрпа сăрланă йупасем вĕлт те вĕлт çеç туса йулаççĕ...

Ака, вăхăт нумай та иртмерĕ, пуйăс хăйĕн урнă пек чуппине майĕпе чакарса пырса, чарăнса тăчĕ. Буферсем пĕр-пĕринпе пырса тĕртĕнсе, чанкăлтатса илчĕç.

— Мускав!..

Халăх вакунсенчен тухма пуçларĕ. Епĕр те, Настаçпа иксĕмĕр, чăмадансене çĕклесе платформă çине тухса тăтăмăр. Настаç, халиччен Мускавра пулса курманскер, йĕри-таврала тĕлĕнсе пăхма тытăнчĕ... Хулана тухмали алăк патнеле кăшт çеç кайнăччĕ епĕр—сасартăк ирхи сывлăшра моторсен кĕвви илтĕнсе карĕ. Настаç тăпах чарăнса тăчĕ те, çӳлеле пăхрĕ. Епĕ те пăхрăм. Сенкер тӳпере пĕр ушкăн йăвăр самољотсем вĕçеççĕ. Йĕркелĕн, стройпа, виçшерĕн-виçшерĕн йарăнса пыраççĕ... Çунаттисем çинче ирхи хĕвел выљаť.

— Пăхăр-ха, йепле илемлĕ...—терĕ Настаç, куçне самољотсем çинчен илмесĕрех мана хулран тытса.—Иепле хăватлă вĕсем!.. Çавăн пеккисем çинче вĕçесчĕ.

— Вăхăчĕ çитсен вĕçĕр-ха,—терĕм епĕ.

— Вĕçесчĕ çав. Вĕçесехчĕ!..

Самољотсем çуртсем хыçĕнче курăнми пулчĕç. Епĕр пĕрне-пĕри алран тытрăмăр та, хуланала утрăмăр.

*НЕСТЁР ЙАНКАС*

# ÇĔНĔ СĂВĂСЕМ

## ЙУРĂ ПУÇЛАМĂШĔ

Çап-çут сенкер-кăвак ирпе
Еп Атăл хĕррине тухам-и.
Телейлĕ халăх йачĕпе
Чи хÿхĕм йурă пуçарам-и.

Хĕвелĕн ылттăн шевлине,
Савни пек, ытама илем-и.
Илемлĕ çĕрĕм-шыв сăнне
Пин-пин сăрпа еп ерешлем-и.

Ирхи саркайăк кĕввине
Чĕрем валĵи илтсе йулам-и.
Хаваслă пурнăç йуррине
Хам та саркайăк пек йурлам-и.

Кĕмĕл пек йанракан йурра
Çут Атăл тăрăх йухтарам-и.
Телейлĕ, тулăх çĕршывра
Асран кайми йурăç пулам-и!

○ ◇ ○

## КУРСАТТĂМ ЕП...

Курсаттăм еп Карелире
Шап-шурă çурçĕр хурăнне,
Çурта пек тÿрĕ ÿснине!
Çав хурăнран илемлĕрех
Сан кĕлеткÿ, савниçĕм!

Курсаттăм еп Ливадире
Илемлĕ розă чечекне,
Кăвар пек çунаканнине!
Çав розăран чипертерех
Сан сăн-питÿ, савниçĕм!

Курсаттăм епĕ тухăçра
Казах пушхирĕн кăлканне,
Сап-сарă пурçăн пеккине!
Çав кăлканран та сарăрах
Сан çÿçусем, савниçĕм!

Курсаттăм епĕ тайгара
Çурçĕр çĕмĕрчĕн çырлине,
Агат пек çиçекеннине!
Çав çырларан та хурарах
Сан куçусем, савниçĕм!

Хура çунатсене авса,
Чĕкеç вĕçет ак улăхра...
Чĕкеç вĕçмест мĕн улăхра,—
Чĕкеç çуначĕ пек мĕн сан
Куçхаршисем, савниçĕм!

Пăхатăп та еп сан çине:
Курап çĕршывăн илемне,
Курап çĕршывăн телейне,
Курап çĕршыв пуласлăхне,
Ман тантăшăм, савниçĕм!

○ ◇ ○

## ТАВТАПУÇ!

Тавтапуç сана, çулпуçĕ,
Тавтапуç, тăван атте!
Ес çĕнетрĕн, илемлетрĕн
Ман çĕршыв сăн-сăпатне.

Ес, çурхи хĕрÿ хĕвел пек,
Ăшшăн-ăшшăн пăхнипе
Йешĕрет çĕршывăм манăн
Тулăх чечек сачĕ пек!

Илтĕнмест тек салху йурă
Аслă Атăл çийĕнче.
Халĵ йурлать унта ман халăх
Телейне тупни çинчен!

Ун йурри хаваслă, ирĕк!
Хăйĕн ăшă йурринче
Вăл йурлать телейлĕ пурнăç
Çимĕçне пани çинчен!

Тавтапуç сана, çулпуçĕ,
Тавтапуç, тăван атте!
Ес çÿлтен-çÿле çĕклерĕн
Манăн халăх хăватне.

Пирĕн телейе илмешкĕн
Ал тăссассăн фашиссем,—
Çилхи витĕр çил вĕçтерĕç
Атăл урхамахĕсем!

Вутлăн-çиçĕмĕн çиçтерĕç
Маттурсем хĕçĕсене.
Хурçă кайăксем пиншерĕн
Сарĕç çуначĕсене.

Пĕр çĕкленĕ вăйлăн Атăл,
Пĕр çĕкленĕ Дон, Кубанĵ...
Ăçтан килнĕ—çавăнтах та
Тупĕ вилĕмне тăшман!

## ХАКЛĂ ÇЫВĂХ ÇЫННĂМ ПУЛ

Çутçанталăк тĕлĕретчĕ,
Анаслатчĕ уйăхĕ.
Епĕр, тусăм, иккĕнехчĕ...
Чечексем ăшне чĕнетчĕ
Аслă Атăл улăхĕ...

Çăлтăрсем те тĕлĕретчĕç,
Тĕлĕретчĕç чечексем.
Лăпкă кÿлĕ хĕрринче,
Лăпкă хĕр пек, пуç пĕксе
Хăмăшсем те тĕлĕретчĕç..

Ес манпа унчух ăсатрăн
Чи телейлĕ çут ире,—
Ăша ĕмĕтсем вăратрăн,
Çутă ĕмĕтсем çуратрăн
Ес вăл каç ман чĕрере!

Ырлăха те хурлăха—
Тунсăхларăм ку-тăруçăн
Сансăр епĕ, хура куçăм!
Кĕтрĕм—ес тухмарăн, тусăм,
Кĕçĕр йешĕл улăха.

Йешĕрет ак, аслă улăх...
Çакă улăх пек ку-чух
Пирĕн пурнăç аслă, тулăх!
Йуратмасăр чăтма çук,
Савнă тусăмçăм, ку-чух!

Чĕрене çунтарчĕ, тусăм,
Ес вăратнă йурату.
Еп сана йуратрăм, тусăм...
Сав мана та, савнă тусăм,
Хаклă çывăх çыннăм пул!

○ ◇ ○

## КРЫМРИ КĂМĂЛ

1.

Çĕрле... Ĕнтĕ гаванĵеле васкать
Шап-шурă парăс лăпкă тинĕспе.
Ĕнтĕ тĕтре те çăралса йухать
Асамлăн тĕлĕрен ту хушшипе...

Çак лăпкă самантра, ман çывăх тусăм,
Ман савнă пĕчĕк ывăлăм, сире
Асаилетĕп епĕ... Тунсăхларăм,
Савнă тăванăмсем, сирĕнсĕр еп!

Шухăшăмпа сире тытса илейрĕм
Йалтах еп хамăн ăшă ытама;
Сăртран та çÿлерех йатса çĕклерĕм,
Йуратнă пĕчĕк ывăлăм, сана!

2.

Ĕнтĕ тавралăх шăп... Шап-шур тĕтре
Канса выртать сăрт кăкăрĕ çинче...
Ман çывăх тусăм, ес манран инçе...—
Çывратăттăм хам та çак сехетре
Сана еп ăшă аллăмсем çинче!

*М. КИПЕК*

# КУРСАНТ ЦЫГАНОК

— Полк шкулĕ, смирно!—пурне те илтĕнмеле уçă сасăпа командă пачĕ дежурнăй. Унтан вăл алăкран тин çеç кĕрсе тăнă шкул начальникĕ патне çирĕппĕн утса пырса, сылтăм аллипе честь парса рапăртларĕ:—Аслă лейтенант йулташ, епĕ дежурствăра пулнă вăхăтра чрезвычайлă происшестви пулчĕ: курсант Цыганок ĕнер каçхине хăй ирĕкĕпе таçта кайса çухалчĕ. Ăна пайан ирхине тин тупса килчĕç. Шкулти дежурнăй кĕçĕн командир Астафйĕв.

— Цыганок миçемĕш взводра?—ыйтрĕ начальник.

— Виççĕмĕш взводра.

— Лейтенант Докуко йулташа халех ман пата чĕнĕр.

— Йеçт!—пĕр утăм айаккала утса, аллине татах çĕклерĕ дежурнăй.

— Вольно!—терĕ те аслă лейтенант Гаршин,—канцелярине кĕрсе кайрĕ.

Тепĕр виçĕ минутран ун патне виççĕмĕш взвод командирĕ кĕчĕ.

— Аслă лейтенант йулташ, есĕр хушнипе лейтенант Докуко килчĕ,—терĕ вăл.

Шкул начальникĕ, сĕтел хушшинчех тўрленсе тăрса, взвод командирне пĕр кана ним чĕнмесĕр пăхса тăчĕ.

— Цыганок татах хăй ирĕкĕпе хулана кайнă,—шăппăн каларĕ Гаршин.

— Çапла, аслă лейтенант йулташ,—терĕ Докуко. Унăн сасси сисĕнмелех чĕтренчĕ.

— Бойец çавăн пек пысăк проступăк тунăшăн командир айăплă иккенне каласа тăмăп епĕ. Ăна хăвăр та аван пĕлетĕр. Епĕ кунта çĕнĕ çын-ха, мĕнпурĕ те виçĕ кун кăна ĕçлетĕп. Курсантсене палласа çитереймерĕм. Цыганок çинчен те сахал пĕлетĕп. Епĕ кунта киличчен дисциплинарлă взысканисем пулнă-и унăн?

— Журнал çине çырнийех ултă. Малтанах кĕçĕн командирсемпе тавлашнăшăн, кайарахпа хушнă ĕçсене туманшăн выгăвăрпа икĕ нарйад, унтан йулташĕсемпе çапăçнăшăн, хулана никамран ыйтмасăр кайнăшăн, тата винтовкине йапăх пăхса усранăшăн сирĕн умĕн пулнă шкул начальникĕ капитан Вершков виçĕ хутчен арест панă.

— Сакăр çул Хĕрлĕ Çарта пурăнтăм, анчах кун пек çынна пĕрремĕш хут тĕлпулма лекрĕ. Епĕр ăна ултă взысканиран ытла пама пултарайmastпăр. Малашне ĕç ревтрибунал аллине каймала. Анчах кун пирки тĕплĕн шухăшласа пăхмала. Тен, ăна арĕсленипе мар, урăх майпа йусама май килĕ...

— Иккĕленетĕп епĕ, аслă лейтенант йулташ. Ун пек çынсем çинчен ĕлĕкех „курпуна тупăк çеç тўрлетет", тесе каланă. Цыганок хăйĕн „çивĕч" чĕлхипе кĕçĕн командирсене кун кăтартмасть. Кашни стройа тăмассерен ăна замечани пáраççĕ. Вăл тўрленме пултарайман етем...

— Йанăшатăр, Докуко йулташ! Пирĕн Хĕрлĕ Çартан киле никам та пăсăлса таврăнман. Есĕр ăна апат çинĕ хыççăн ман пата йарăр, епĕ унпа калаçса пăхăп. Халĕ кайма пултаратăр.

— Йеçт!—тесе варт! çавăрăнчĕ те Докуко, канцелйаринчен тухса кайрĕ.

Гаршин Кийĕвра çĕнĕ çын-ха, ăна кунта Инçетри Хĕвелтухăçĕнчен куçарнă. Шкулти йĕркесене, курсантсем хушшинчи çирĕп дисциплинăна курса вăл малтанхи кунсенче питĕ савăннăччĕ. Цыганок тунă проступăк самайах салхулатрĕ ăна.

— Мĕнле майпа йусама пулĕ-ши ăна?—шухăшларĕ вăл пĕччен йулсан. Унтан пĕчĕккĕнех хăй икĕ çул хушши красноармейĕç пулса пурăннă вăхăта аса илчĕ. Унăн пуçне бойецсемпе командирсем хушшинче пулнă тĕрлĕ çыхăнусем аса килчĕç. Вăл пайтах çынсен характĕрĕсене сăнанă. Красноармейĕç пулнă чух командирсем бойецăн кăмăлне сасартăк взыскани парса çапса хуçнине те темиçе хутчен курнă вăл. „Çапла пулман-ши Цыганокпа та? Ман ун кăмăлĕпе тĕплĕн паллашмала, вара тин ĕçе тытăнма пулĕ".

Çак шухăшпа вăл алăка уçрĕ те дневальнăйа хăй патне шкулти комсорга чĕнме хушрĕ. Комсорг нумай кĕттермерĕ, тепĕр самантранах алăка шаккаса канцелярине кĕчĕ.

— Ларăр,—терĕ Гаршин, хыçлă пукан çине кăтартса,—епĕ сирĕнпе Цыганок пирки калаçасшăнччĕ. Есĕр ăна лайăх паллатăр-и?

— Епĕ пур курсантсене те пĕлетĕп.

— Вăл мĕншĕн çарти йĕркесене пăхăнман пек туйăнать сире?

Комсорг кăшт шухăшласа ларчĕ.

— Татса калама пултараймастăп, анчах вăл хăйне ирĕксĕр полк шкулне йанăшăн командованипе килĕшмен пек туйăнать мана. Малтанах вăл автовзвода кайса шофĕра вĕренесшĕнччĕ. Хăйне унта йаманшăн пăшăрханса йурийех пур йĕркесем çине те алăпа сулчĕ пулĕ. .

— Шофĕра вĕренес текенсем урăх та пур-и?

— Пĕр вăхăтра шкулта автокружок уçасси çинчен калаçнăччĕ, анчах малтанхи начальник ĕçе темшĕн тытса тăчĕ...

— Ку кружок пирки епĕ штабра калаçса пăхăп-ха. Урăх нимĕн те пĕлместĕр-и Цыганок çинчен?

— Çакна пĕлетĕп: вăл тăлăх ўснĕ. Тĕрлĕ ача çурчĕсемпе колонисенче пурăннă. Çав вырăнсенчен тарса çўрени çинчен каласа пама питĕ йуратать. Ĕлĕкхи йăлипе шкултан тарса хулана хăй ирĕкĕпе кайать пулас.

— Пулма пултарать. Епĕ ун пирки шухăшласа пăхăп-ха. Есĕр пайанах Цыганок койкипе йунашар комсомолĕç-активист койкине лартăр. Активлă комсомолĕç унпа туслашсан, ăна йусас ĕçре пире пысăк пулăшу парĕ.

— Йурать, епĕ унта Цукĕрмана вырнаçтарăп. Вăл пирĕн организацинче чи лайăх активистсенчен пĕри...

Комсорг тухса кайсанах политрук кĕчĕ. Гаршин ăна та Цыганок çинчен каласа пачĕ. Вĕсем пĕр сехет хушши тўрĕ çултан пăрăннă курсанта тепĕр хут çав çул çине кăларасси çинчен калаçрĕç.

Кăнтăр апачĕ умĕн Гаршин штаба кайрĕ. Строевой отделта Цыганокăн документчĕсемпе паллашрĕ. Хĕрлĕ Çара кайиччен ĕçленĕ савăтсенчен панă характеристикăсенче йаланах вăл ĕç дисциплинине пăсни çинчен каланă. Комсомолтан та ăна хулигансемпе çыхăнса киревсĕр ĕçсем туса çўренĕшĕн кăларнă.

„Йепле вара, ĕмĕрлĕхех пăсăлнă-ши çак çамрăк çын?—шухăшларĕ аслă лейтенант.—Çук, пирĕн

Хĕрлĕ Çар калама çук аван шкул. Унта пурăнакан çынсем нихăçан та пăсăк çынсен хисепĕнче тăма пултараймаççĕ. Йусатпăрах ăна".

Çак ĕмĕтпе Гаршин, полк командирĕ патне кĕрсе, курсантсем полк шкулĕнче автокружок уçассăнни çинчен каласа парĕ.

— Аван,—терĕ полк командирĕ майор Гаврилăв,—шофĕр ĕçне пĕлекенсем темĕн чухлех кирлĕ. Епĕ кружока йертсе пыма иккĕмĕш ранглă çар инженерне Васковский йултаща уйăрса парăп, есĕр ыранах штаба автокружока çырăннă курсантсен спискине илсе килĕр...

Ĕçе ăнăçлă татнишĕн савăнса таврăнчĕ Гаршин шкула. Вăл апат çинĕ хыççăн канцељарине кĕчĕ те пайан килнĕ хаçатсене вулама тытăнчĕ. Тепĕр сехетрен вăл, кăнтăр канавĕ пĕтнине кура, алăка уçса дневаљнăйа Цыганок курсанта чĕнме хушрĕ.

Çарти йĕркесене йурийех пăхăнма йуратман Цыганок,васкамасăр тумланса, канцељарине кĕчĕ. Сĕтел хушшинче ларакан çĕнĕ начаљнике курсан, унăн куçĕсем тăруках аташакан ачанни пек йалкăшса илчĕç. „Гауптвахтăра ларасси маншăн çĕнĕ мар,—шухăшларĕ Цыганок,—пурĕ-пĕрех, пилĕк тавлăкран кайа арĕслес çук мана. Апла пулсан ман начаљникрен шикленменнине кăтартас пулат".

Çак шухăшпа вăл, картусне чалăштарса лартса, пуçне пăрса хучĕ, аллисене шалавар кăсйисене чикрĕ, унтан сĕтел патне урисене чармакласа пырса тăрса, аслă лейтенант çине „ман пек паттăр каччăна хăçан та пулин курнă-и есĕ?" текен куçĕсемпе самайах мăшкăллăн пăхрĕ.

Начаљник хайне пăхăнса тăракан курсант йурийех уставра кăтартнă пек тăманнине курман пек пулчĕ.

— Есĕр Цыганок-и?—ыйтрĕ вăл тӳлеккĕн.

— Епĕ курсант Цыганок.

— Ларăр, еп сирĕнпе пĕр ĕç пирки калаçасшăнччĕ.

Начаљник сасси питĕ ăшшăн тухнине сиссе, Цыганок, вăтаннипе, хăмач пек хĕрелсе кайрĕ. „Мĕншĕн-ха тарăхтарасшăн еп ăна? Вĕт вăл мана нимпе те кӳрентермен", шухăшласа илчĕ вăл çак самантра. Çавăнпа вăл йаштах тӳрленсе тăчĕ, малтан йурийех вĕçерне кĕпе тӳммине те, начаљник ан куртăр тесе, вăрттăн тӳмелерĕ.

— Есĕр чармасан епĕ ура çинчех тăрăп,—улшăннă сасăпа каларĕ курсант.

— Çук, ларăр... Полк командирĕпе епĕр шкулта автокружок уçма шухăшларăмăр. Шофĕр ĕçне вĕренме килĕшекен курсантсем чылай пухăнаççĕ. Есĕр кĕретĕр-и çав кружока?

— Хавасланса килĕшетĕп!—савăннипе кăшкăрса йачĕ Цыганок.

— Епĕ те çаплах шухăшларăм. Сирĕн пек вăйпитти çамрăк çын техникăна вĕренес ĕçре йултащĕсенчен кайа йулас çукки пуриншĕн те паллă. Кружок ĕçе пуçламала ĕнтĕ, старăстă тупасси кăна йулнă. Вăтам командирсемпе канашланă чух лейтенант Докуко старăстă пулма сире, шанчăклă çын тесе, рекомендацилерĕ. Епĕ çавăн пирки сирĕнпе калаçасшăнччĕ.

— Лейтенант Докуко мана „шанчăклă çын" терĕ-и?—шалтах тĕлĕнсе ыйтрĕ курсант.

Аслă лейтенант ун çине пăхмасăр пуçĕпе сулчĕ. Пĕр кана иккĕшĕ те шăпланса ларчĕç.

„Йаланах епĕ çынсене хаклана чух йăнăшатăп,—шухăшларĕ Цыганок.—Малтанах кама та пулин, питĕ аван çын пулĕ, тесе, унпа туслашатăп. Анчах кĕске вăхăтрах вăл мана тĕрме алăкĕ патне илсе пырса пĕччен пăрахса хăварат. Докуко манăн çарти пурнăçа пăсса пыма çуралнă пулĕ, тесе шутланăччĕ,—вăл мана кружок старăсти пулма рекомендацилет. Гаршина та, устав буквисен тыткăнне лекнĕ педант пулĕ тесеччĕ,—вăл мана арĕслес вырăнне пĕртан пек лартса калаçат..."

— Тен, кун пирки есĕр тĕплĕнрех шухăшласа пăхас тетĕр пулĕ? Апла пулсан ответ ыран çак вăхăтра килсе пама та пултаратăр,—терĕ Гаршин, курсант çине пĕрремĕш хут сăнаса пăхса. Çамрăк каччăн тарăн шухăша путнă сăнне курсан, вăл мĕн çинчен шухăшланине часах тавçăрса илчĕ начаљник.

— Старăстă пулма хушнăшăн сире тем пекех тав тăватăп. Анчах ман пуçра урăх шухăшчĕ...

— Мана пĕлме йурат-и çав шухăша?

— Епĕ...—терĕ те Цыганок, куçĕсене çĕреле усса, тин çеç пуçĕнче пăтрашса иртнĕ шухăша каласа парĕ.

— Çамрăк чух епĕ те йăнăшкаланă. Ултă çул кайарах епĕ хам та сирĕн пек красноармейĕц пулса пурăннă. Унчух çавнашкал йăнăшсене хам та пайтах тунă. Кайарахпа тин командирсем бойеца хĕсĕрлесшĕн мар, ăна социалисăмлă тăван çĕршыва лайăх сыхлама пулăшасшăн тăрăшнине туйса илтĕм. Вара манпа командирсем хушшинче чи лайăх çыхăну пуçланчĕ...

— Пайантан пуçласа епĕ те командирсемпе хирĕçме пăрахăп. Ĕлĕк хам пĕлменнипе тунă айăпсемшĕн сирĕнтен каçару ыйтатăп,—терĕ Цыганок, шывланнă куçĕсене вăрттăн шăлса.

— Апла есĕр кружок старăсти пулма килĕшетĕр?

— Килĕшетĕп.

— Пит аван. Акă сире тетрат्сем, есĕр пайанах автокружока кĕме шухăшлакан курсантсен спискине туса пĕр екземпљарне мана парăр. Халĕ кайма пултаратăр.

— Йурат!—тесе Цыганок тетратсене алла илчĕ те алăкран тухса кайма пуçларĕ, анчах аслă лейтенант ăна чарчĕ.

— Цыганок йулташ,—терĕ вăл пĕрремĕш хут аслă начаљник сассипе,—хулана кайас килсен есĕр тӳрех ман пата килĕр, епĕ сире отпускной билет çырса парăп.

Савăннипе пĕр самантлăха устав çинчен маннă курсант, хайĕн йăнăшне Гаршин ăна алăк патĕнче чарсанах тавçăрса илчĕ. Çавăнпа вăл хăвăрт тӳрленсе тăрса аллине картус патне тытса „йеçт" терĕ те, сулахай хулпуççи урлă варт! çавăрăнса, коридора тухрĕ.

Çав каçах Гаршин лейтенант Докукона Цыганокпа тĕлпулса калаçни çинчен каласа парĕ.

— Анчах вăл ĕмĕрлĕхех йусанчĕ теме çук,—терĕ вăл.—Пирĕн ăна хайĕн ĕлĕкхи путсĕр йăлисене манса пыма кашни утăмрах пулăшмала...

* * *

Çак кунран пуçласа Цыганок пĕтĕмпех улшăнчĕ. Малтанах вăл хайпе йунашар выртма пуçланă Цукĕрманпа туслашрĕ. Аслă Цукĕрман çĕнĕ йулташне хамăр çĕршыври политикăлă пурнăçпа часах паллаштарма тытăнчĕ. Ик-виçĕ кунтан Цыганок хаçат вуласа ларнине пĕрремĕш хут курчĕç курсантсем,

Политвёренӳ урокӗнче пӗлӳлӗхе тӗрӗслемели журналта унӑн йачӗ тӗлне взвод командирӗ йаланах „плохо“ тесе ҫыраканччӗ, халӗ, виҫӗ ыйтӑва лайӑх ответленӗ хыҫҫӑн, ун йачӗ тӗлне Докуко „хорошо“ тесе ҫырчӗ.

Дисциплина тӗлӗшӗпе те хаљ вӑл улшӑнчӗ. Стройра тӑнӑ чух командирсене „вичкӗн“ сӑмахпа тӗртми пулчӗ, йулташӗсем хушшинче те хӑйне хӑй урӑхла тытма пуҫларӗ. Командирсемпе тавлашма пӑрахсанах, ӑна черетпе ҫеҫ ӗҫ хушакан пулчӗҫ.

Тин ҫеҫ уҫӑлнӑ автокружок ӗҫне пӗтӗм чунран парӑнчӗ Цыганок. Кашни заљати умӗнех урока лайӑх хатӗрленнӗ пирки вӑл чи лайӑх вӗренекен кружковӗцсен шутне кӗчӗ. Пӗр ерне кайарах ӑна ним вырӑнне те хуман курсантсемех халӗ ун патне пырса автомобил моторӗн тӗрлӗ деталӗсем йепле ӗҫленине каласа пама ыйтаҫҫӗ. Кашни ирӗклӗ сехетрех вӑл Ленин пӳлӗмне кӗрсе тӗрлӗ чертӧжсем йӗрлет, механикӑ кӗнеки ҫинчен ҫырса илсе задачӑсем шутлать.

Ҫапла пӗр уйӑх иртрӗ. Гаршин канцељарийе Цукӗрмана чӗнсе илсе Цыганок вӑхӑта мӗнле иртерннне, кун каҫиччен мӗн калаҫнине ыйтса пӗлсе тӑчӗ. Пурте аван пек туйӑнчӗ ӑна. Иртнӗ уйӑхра Цыганок пӗрре те хулана кайма отпуск ыйтманни ҫеҫ ун кӑмӑлне каймарӗ. Пӗре вӗреннӗ йӑлана часах пӑрахма кирлӗ мар пек туйӑнче ӑна.

Хӑйӗн шухӑшне шкул начаљникӗ комиссара каласа пачӗ.

— Да,—терӗ комиссар,—кун пирки тӗплӗн шухӑшласа пӑхмала. Йаланах никама пӑхӑнмасӑр ҫӳренӗ ҫын пӗр авӑк ӗҫе тытӑнсан та тепӗр хут пӑрахма пултарать. Епӗ сана вунӑ билет оперӑ театрне кайма парам. Есӗ театра йарас сӑлтавпа Цыганока отпуск пар...

Шкула таврӑнсанах Гаршин Цыганока канцељарийе чӗнчӗ. Вӗсем малтан автокружок ӗҫӗсем ҫинчен калаҫрӗҫ. Унтан начаљник оперӑ театрӗн репертуарӗнче ҫӗнӗ балет пуррине пӗлтерчӗ.

— Цыганок йулташ,—терӗ вӑл,—пӗр уйӑх кайарах епӗ сире хулана кайса ҫӳреме отпуск пама пулнӑччӗ, мӗншӗн ыйтмарӑр есӗр?

— Автокружок манӑн мӗнпур ирӗк вӑхӑта ӗҫпе тултарчӗ,—кулса каларӗ курсант.—Хӑшпӗр чух хулана кайас шухӑш пуҫа килсе кӗрет, анчах ыранхи уроксене хатӗрленсе ҫитменнине аса илсенех ҫав шухӑш сӳнет.

— Пӗр канмасӑр ӗҫлени сиенлӗ. Кӗҫӗр „Лебединое озеро“ балета курма каймали билетсем пур манӑн. Акӑ сире икӗ билет, халех хулана кайма хатӗрленӗр.

— Тепӗр билетне кама парас?—ыйтрӗ курсант.

— Ҫамрӑк ҫыннӑн театрта пӗрле йунашар ларма тивӗҫлӗ тусӗ пулаканччӗ,—терӗ аслӑ лейтенант, ҫтена ҫумӗнче ҫакӑнса тӑракан „Девушка на солнце“ йатлӑ ӳкерчӗк ҫине пӑхса.

Цыганок та ӳкерчӗк ҫине пӑхрӗ те шухӑшлӑн кулчӗ.

Каҫ Гаршин хӑй те оперӑ театрне кайрӗ. Унӑн Цыганок театра кампа пынине пӗлес килчӗ. „Тен, вуҫех килмерӗ пулӗ вӑл кунта. Ӗлӗк хулана никамран ыйтмасӑр ҫӳренӗ чух, паллах, ӑна Хӗрлӗ Ҫарти хурҫӑ дисциплинӑна йӑмтарма пӑхакан ҫынсен ӗретӗнчи хӗр илӗртнӗ ӗнтӗ. Ун пеккисем час-часах пулаҫҫӗ. Тен, халӗ те ҫав ӗлӗкхи „тусӗ“ патне кайрӗ пулӗ“, шухӑшларӗ Гаршин. Унтан вӑл, иккӗмӗш йарусри ложӑра хӑйӗн вырӑнне тупса, бинокӑљ витӗр пӑхса партӗрте хӑйӗн курсантне шырама пуҫларӗ. Кӗҫех вӑл улттӑмӗш ӗретӗн варринчи икӗ кресла ҫинче Цыганокпа Цукӗрман темӗскер калаҫса ларнине курчӗ.

— Вот кам иккен унӑн театрта ларма тивӗҫлӗ тусӗ. Маттур есӗ, Цыганок, унпек туспа ниҫта та инкек курмӑн,—пӑшӑлтатрӗ аслӑ лейтенант.

---

*А. КӐВИК*

## ХӖР ЙУРРИ

Епӗ утрӑм улӑх тӑрӑх
Шурӑ тутӑра сӗлтсе.
Шухӑшларӑм: тусӑм курӗ,
Килӗ ман пата, тесе.

Епӗ пӑхрӑм кантӑк витӗр,
Тусӑм иртрӗ пуљ, тесе.
Калас терӗм: савнӑ тусӑм,
Пуплемешкӗн кӗр, тесе.

Епӗ тухрӑм вӑрман витӗр
Савӑк йурӑ йурласа.
Шухӑшларӑм: тусӑм илттӗр,
Килтӗр, терӗм, шыраса.

Еп тытса вуларӑм „Правдӑ“,
Куртӑм савнӑ тус сӑнне.
Тусӑм илнӗ ман наградӑ—
Хаклӑ Ленин орденне.

Епӗ пӗлтӗм: тусӑм вӗҫнӗ
Сивӗ, пӑрлӑ ҫурҫӗре.
Ҫавӑнпа ҫав орден илнӗ
Мускавра—ҫут Кремӗлре.

*ГАВРИЛ МЫСКАР*

***

Уҫҫӑн вӗрчӗ ирхи ҫилӗ.
Сенкер ир таса, уйар.
Савни, ес-им илӗм-тилӗм
Васкаса чӗнен уйа?..

Авӑтмарӗ караш урӑх.
Жнейкӑ кӗҫӗр ҫывӑрман.
Анатран ҫӗкленчӗ йурӑ.
Хӗрпе тухрӑм тыр вырма.

Пуҫ пӗкет ак ылттӑн тулӑ.
Сывлӑм шывӗ кӗмӗл пек.
Савнинчен те шукӑљ пулнӑн
Туйӑнать алри кӗлте.

*АРКАДИ ĔÇХĔЛ*

# ÇĔНĔ СĂВĂСЕМ

## КĔРХИ СĂНСЕМ

Кун сулхăнланчĕ. Каскăн Атăл çилĕ
Хăй тĕллĕнех тĕпĕртетет хирте.
Кăйăк-хурсенĕн пысăк ескадрилйĕ
Кăнтăрала пĕр тикĕссĕн иртет

Кайри—мала! Кайнишĕн ан кӳренĕр,
Кăмăлăрпа ан хуçăлăр, тесе,
Сар пурçăн тутăр çăмăл вĕлкĕштернĕн
Вăрман çинчен ӳкеççĕ çулçăсем.

Кĕрхи калчан паха йешĕл кавирĕ
Çĕр кăкрине çемçен витсе тăрать.
Пирĕн колхозăн çамрăк бригадирĕ
Кăпка хир тăрăх савăнса пырать.

Çурăм хыçне вăл çĕн централкă çакнă
Сыхлан, мулкачă, пул кăшт чейерех!
Пăшалĕ унăн хăй пекех пит чаплă —
Пĕрре персессĕн иккĕ вĕлерет!

Утать сунарçă, шарт та шарт сикеççĕ
Чалăш куççем—хăравçă мулкачсем.
Пемессерен ура айне ӳкеççĕ,
Куççĕсемпе çухалнăн тĕлкĕшсе.

Çапла касчен куçса çӳренĕ хыççăн,
Русаксене пухать вăл пĕр çĕклем.
Çапла ĕçлет вăл пур çĕрте те уççăн,
Çапла маттур вăл ӳснĕ пĕчĕкрен.

Мухтав сана, ăста та паттăр каччă!
Ес ăнăçлă, таса ĕçленипе,
Нихçан пулман пуйанлăх леçсе пачăç
Ман аннене колхоз машинипе.

Тăрать анне, тĕлĕннипе, шалт хытнăн,
Кăвак çӳçне кĕр çилĕ вĕçтерет.

Кĕлет тулли выртать ун хаклă ылттăн—
Тивлетлĕ пурнăç, савăнăç, телей!

○ ◇ ○

## ПИРĔН ЙАЛТИ МИЧУРИНÇĂ

Чийелĕх айĕнче ларать пахчаçă,
Хăй ĕçĕпе тивлетлĕн килленсе.
Хаљ ун çине мĕнпур йенчен пăхаççĕ
Çăра сĕткенпе тулнă çимĕççем.

Çырла-куççен кулли таса та тăрă,—
Хĕвел выљать пин тĕрлĕ çулăмпа...
Вăл пурнăç курнă. Пурнăç çулĕ тăрăх
Вăл утса тухнă йăвăр утăмпа.

Ĕçленĕ вăл, ĕçленĕ ватăлмалăх,
Ӳсен-тăранăн аслă ашшĕ пек.
Ун пахчинче хаљ акă çутçанталăк
Чечекленет ун ырă ăшшипе.

Çырласене вăл тем çăмах каласшăн,
Çăмахĕ çук, куçри кăвар кăна...
Мичуринпа кăшт кайарах паллашнă,
Вăл çавăншăн питех пăшăрханать.

Анчах ăсталăх тупăнман сасартăк,—
Чийе çырли вăл чейеле пиçет.
Мичуринран пит айакра тăрса та
Хăй ăсĕпе вăл тунă çав ĕçех.

Хаљ ак ĕнтĕ ун сарлака кунçулĕн
Тупсăмĕсем мĕнпур йăвăç çинчен
Йăлтăртатса пăхаççĕ илĕртӳлĕн,
Йулнă пек туйнаççĕ пит çинçен.

Йурлана пек... Лаштра йăвăççем айĕн,
Хăй тĕллĕнех хаваслăн шавласа,
Чупса тухрĕ кĕтмен çавра-çил майăн
Пĕр кăвак куçлă шух ывăл ача.

Пахчаç патне сиккелесе вăл пычĕ:
—Сана пӳрте чĕнеççĕ, асатте!
Ура çине леш ним сисмен пек тăчĕ,
Чейе куçне хăй вăрттăн хĕсетех.

Утса кĕрет пӳрте вăлваскамасăр,
Анчах туйтаратех чĕре çунни.
Унтан курать: пӳртре пĕр шарламасăр
Кулса тăрать тĕреклĕ çар сынни.

Пĕрне-пĕри вĕсем куçран пăхаççĕ:
—Мĕнле пурнан, чĕр пурнăç ăстаçи?..

Пирĕн йалти ыра пĕлми пахчаçă
Çакăн йышши ӳстернĕ ултă сын.

...Тулли сат-пахчинче тăрать ăстаçă,
Хăй ĕçĕпе тивлетлĕн килленсе.
Мĕнпур йенчен ăна хаљ саламлаççĕ
Вăл çитĕнтернĕ ырă çимĕççем.

○ ◇ ○

## ТАРАН РЕЙД

*(Пулăс вăрçăн уйрăм картинисем)*

Кулленхи тӳпере
Кулленхи çăлтăрсем йалкăшаççĕ.
Çуталать чиперех
Уйăх çутнă таса çĕршыв касĕ.

Халлапри улăп пек,
Чикĕре тăрать хĕрлĕ хуралçă.
Анчах çутă тӳпе
Пĕр тĕлте тĕксĕмленчĕ, хуралчĕ.

Килсе тухрĕ тăшман,
Вăл пуçлап, терĕ пулĕ, сасартăк.
Анчах епĕр шанман
Нимĕнле ырă лăпкă каçа та.

Нихăçан лăпланман,
Ĕненмен нимĕнле шăплăха та.
Епĕр тăнă йалан,
Йаланах тăнă сыхă та хатĕр.

Акă вăл, хашкаса,
Вĕçсе çитрĕ фашисăм хăлачĕ.
Çухалмасăр, часах
Пирĕн хĕрлĕ хурал çигнал пачĕ.

Самантрах,
пур йенчен,
тăвăлри çиçĕм пек,
Истребителсем пирĕн çĕкленчĕç.
Тасалтăр!
Пĕттĕр урнă фашисăм! Тăхлан пуçĕпех
Хыпса çунтăр сасартăк!

Сывлăшра çапăçу...
Тăшман пурнăç ыйтать.
Анчах çак хушăра,
çĕр çĕмрен çавра-çил пек,
Пирĕн бомбовозсен ескадрилйĕ
Тухса вăркăнчĕ тарăн рейда.

Вăрçă çулĕ çинчи мĕнпур крепăççене,
Пур хура вăйсене тӳнтерсе айлăн-çийлĕн,
Çитрĕ пирĕн хайар ескадрилйĕ
Тăшмансен тĕп хулийĕ çине.

Вăл кĕтмен, вăл выртать сарăлса
çаплипех,—
Ĕçкĕ хатĕрĕсем лартса тухнă сĕтелĕн,
Акă вăл кисренет хаљ аçа çапнă пек—
Çын çийен тискерсен цитаделĕ.

Тĕпĕнчен чĕтренет вутпа хыпнă каç.
Тăшман чăрсăр сикет, йулашки хут вăл
урнă.
Пуçпа-пуç, хире-хирĕç тăрса çапăçас
Ирсĕр вилĕмпеле аслă пурнăç.

Çĕнтерет аслă пурнăç.
Таптанать ирсĕр вилĕм.
Ак татах çутатса
мĕнпур пек таврана,
Пирĕн бомбовозсен ескадрилйĕ
Паттăр тарăн рейдран таврăнать.

Ескадрилйĕ килет тĕнче урлă,
Йалавсем вĕçтерсе.
Çĕнтерӳлĕн йурлаççĕ пĕр йурă
Çыпсемпе моторсем.

Сивĕнми çалтăрсем йалкăшаççĕ
Тутăхми тӳпере.
Уйăх çутнă таса çĕршыв касĕ
Çуталать чиперех.

Пуранма питĕ аслă та ирĕк
Ман тăван çĕршыва.

Ескадрилйĕн маттур командирĕ
Ывăлне чуптăвать.

## Татах Мичуринсă ҫинчен

Пур тĕрлĕ йăвăҫа та ун хăвачĕ
Хаваслăн ташлаттарĕ ӳсĕртсе.
Вăл пĕтĕҫтерчĕ, вăл сыпса кăларчĕ
Тĕнче умне чи ăнăҫлă суртсем.

Хаҫ акă ун пахчи ҫĕклем-ҫĕклемĕн
Йăтса килсен чи тутлă ҫимĕҫсем,
Ултă ҫĕре посылкă хатĕрлерĕ,
Унтан вăл ҫырчĕ: „Хаклă ывăлсем,

Сирĕн аҫу, пĕлетĕр ĕнтĕ, ватă,
Пур шанчăкăм ӳкет сирĕн ҫине.
Аҫу йатне ниҫта та ан ҫухатăр,
Куҫ пек сыхлăр ҫĕршывăн пахчине.

Ăҫта ҫитсен те ҫын пулăр, пултарăр,
Хыҫра ан пырăр мĕскĕнĕн сĕнксе...“—
Ҫапла вăл ҫырчĕ. Шухăш пулчĕ тарăн.
Ҫирĕп халал пек пулчĕҫ сăмахсем.

Анчах ăна ҫапах та тем ҫитмерĕ...
Ҫырла пухаҫ, ĕҫлет вăл васкавар...
Вăл ҫиччĕмĕш посылкă хатĕрлерĕ—
Сталин патне—мухтавлă Мускава.

## Паттăрсен маршĕ

1.

Ҫĕршывăмăр, ес куртăн хурлăха,
Вутра ес ҫунтăн, ҫăвăнтăн йунпа,
Ҫил-тăвăл витĕр тухрăн улăха
Тулли чечеклĕ пурăнăҫ тума.

Епĕр вăйлă, хăйулăн пыратпăр,
Малалах тапаҫ пирĕн хăват.
Куҫ пек сыхă та улăп пек паттăр
Ӳстеретпĕр тăван ҫĕршыва.

2.

Ҫĕршывăмăр, ес пур ҫил-тăвăлра
Аркатса пытăн ирсĕр тăшмана.
Анчах манмастпăр: пирĕн таврара
Вилес тĕнчен шаккалĕ ашкăнаҫ.

Епĕр вăйлă, хăйулăн пыратпăр,
Малалах тапаҫ пирĕн хăват.
Куҫ пек сыхă та улăп пек паттăр
Ӳстеретпĕр тăван ҫĕршыва.

3.

Ҫĕршывăмăр, сан йалаву таса,
Санăн йату пур ылттăнран паха.
Ҫĕнтерĕве ес тĕп саккун туса,
Телейлĕ пурнăҫ патăн халăха.

Епĕр вăйлă, хăйулăн пыратпăр,
Малалах тапаҫ пирĕн хăват.
Куҫ пек сыхă та улăп пек паттăр
Ӳстеретпĕр тăван ҫĕршыва.

4.

Ҫĕршывăмăр, ес ҫĕнĕ ҫулсем уҫ,
Кĕреш, ĕҫле, йалан ҫĕнтерсе пыр.
Ҫапла чĕнет пире тăван ҫулпуҫ—
Мухтавлă Сталин—аслă командир.

Епĕр вăйлă, хăйулăн пыратпăр,
Малалах тапаҫ пирĕн хăват.
Куҫ пек сыхă та улăп пек паттăр
Ӳстеретпĕр тăван ҫĕршыва.

✪ ✪ ✪



**Ӳкерчĕк ҫинче:** Йетĕрне педучилишчинчи студенткăсем физкуҫтурă заҥатийĕнче.

*Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.*

*ИВАН МАЛГАЙ*

# ÇĔНĔ САВĂСЕМ

## *ПИРĔН ХĂВАТ*

Еп ӳснĕ аттесĕр, хĕн курнă нумай—
Пĕр кун сиктермесĕр асап курнă май.
Çирен хывăнмарĕ кивелнĕ сăкман,
Пуçа ăшă çĕлĕк лармарĕ нихçан.

Пулса еп йалта та, пулса хулара,
Аки-сухине хамах турăм уйра.
Телей тĕл пулмарĕ ниçта та мана,
Телейлĕх çинчен шухăшлаттăм кăна.

Нумай епĕ ларнă унчух хуйхăрса,
Нумай куççулђ анчĕ пит тăрăх йухса.
Анчах ыр курмарăм çавах çĕр çинче
Октăбĕр хĕвелĕ çунса тухиччен.

Çут шуçăм ытла та хитрен кăвакарчĕ,
Хĕвелĕ тата хитререхчĕн хăпарчĕ,—
Вăл пулчĕ çĕршыв пусмăртан хăтăлни,
Мĕнпур ĕççынни пусмăра çĕнтерни.

Октăбĕр йалавĕ çĕкленчĕ унчух—
Хăватлă та чаплă вунçиччĕмĕш çул.
Çĕршыв ман çĕнетрĕ çав çул ĕмрине,
Çав çул улшăнтарчĕ çĕршыв йуррине.

Кашни çын чунне çутатайрĕ хĕвел,
Кашни çыншăнах пĕрпек пулчĕ телей.
Уйсем, вăрмансем аслăланчĕç çав çул—
Хăватлă та чаплă вунçиччĕмĕш çул.

Çав çул йурă хыврăм еп хам пуçласа,
Тăван çĕршыва чĕререн ырласа;
Ун тарăн, таса, сарлака кӳллисем
Çуталчĕç умра илемне çĕклесе.

Унчух еп хавас кайăксен йуррине
Тăванлăн итлерĕм мĕнпур чĕререн.
Вĕсем те унчух, туйнă пек ирĕке,
Мана тĕлĕнтерчĕç хăйсен йуррипе.

Унчух пуçласа çаранри чечеке
Татса, умма лартрăм çĕршыв йачĕпе.
Октăбĕр йалавĕ çӳле те çӳле
Телейлĕх сĕнсе вăл çĕкленчĕ куллен.

Ăна пĕтĕм халăх аллийĕ тытса,
Хăйулăн та чаплăн пырат халђ йатса.
Çĕрçитмĕл мĕлйун алăра вĕлкĕшсе,
Пырат вăл мĕнпур тăшмана çĕнтерсе.

Çĕклен çӳлерех, пирĕн хĕрлĕ йалав!
Ес çĕнетрĕн тĕпрен хулана та йала.
Совет çĕрĕнче ес çитмен вырăн çук,
Ес пирĕн алра çирĕм иккĕмĕш çул.

Паттăрсем çурçĕре те çитерчĕç сана,
Çитерчĕç сана паттăрсем Тайгана.
Утатпăр епир санпала малала,
Çĕклен çӳлерех, пирĕн хĕрлĕ йалав!

Питĕ çуттăн çунат çут хĕвел тӳпере,
Кăмăла хăпартса ачашлат вăл пире.
Аслă Ленинпала аслă Сталин ăна
Çутса йанă пĕрле ĕмĕр-ĕмĕр çунма.

Çут хĕвел айĕнче пирĕн чаплă кунсем
Малала шăвăнса малала иртнĕçем.
Çĕнĕрен-çĕнĕ ӳсĕм тумашкăн чĕнеç.
Вăйхала кăтартатпăр епир тĕнчене.

Çут хĕвел айĕнче ачасем ман ӳсеç.
Хĕнхурпа мăшкăла курас çук ман вĕсем.
Саплăк лартнă сăкман пулас çук çийĕмре,
Пурнăç тулăх, аван! Савăнса еп çӳреп.

Тата тепĕр хут тăшмансем тапăнса,
Ман тăван çĕршывпа çапăçасшăн пулсан,
Епир кăтартса пултарулăх вăйне,
Каллех асилтерĕпĕр Хасан кӳллине.

Пирĕн йунăм вĕри, пирĕнте вăйхăват!
Пирĕн чун çĕнтерӳшĕн кăвар пек çунат.
Çĕнтерӳшĕн йурлап епĕ хам та пайан,
Йуррăм йухтăр инçе йанраса йан та йан!

Пирĕн сывăх атте Кремĕлте пурăнат,
Пирĕн сывăх атте йуратат йурăна,
Вăл чĕнсен тăшманпа çапăçмашкăн пире,
Епир тăшмана тĕп тума хатĕрех!

• ◆ •

# АМĂШĔ

Виç ывăлăн амăшĕ ларнă пӳртре,
Ун пичĕ çине хĕвел ӳкнĕ хитрен.
Вăл ларнă пӳртре хӳхĕм сӳс арласа,
Хăй саван йуррине сăвăлла йурласа.
Уçă кантăк ун çепĕç йуррин кĕввине
Илсе тухнă тула—урам йеннеле.
Çамрăк хĕр каччине кĕтнĕ пек вăхăтра,
Карчăк пăхнă час-час тулала кантăкран.
Пĕр майăн хуллен кăнтăрла иртнĕрен
Мĕлке вăрăмланнă тулта йерипен.
Вăл ларнă пӳртре хӳхĕм сӳс арласа,
Хăй саван йуррине сăвăла йурласа:

Çуратрăм виç ывăл, виç ывăл ӳстертĕм,
Пурне те инçе, кайăк йевĕр, вĕçтертĕм.
Кашни тав тăват ӳстернишĕн мана.
Ăçтан вĕсене ашшĕ-амĕш манат!
Пĕри Мускавра пурăнат йаланах,—
Еп куртăм, тет, пирĕн çулпуç Сталина.
Кăçал инженерăн йатне вăл илет,
Ăна илме унăн чи пысăк тивлет.
Кăçал вăл çитесшĕн курмашкăн киле,
Кăçал йанварте хăнана çитмеле.
Килсех-ха тăраççĕ унран çырусем,
Килсех-ха тăраççĕ унран парнесем.

Тепри пурăнат Хĕрлĕ çар ретĕнче,
Çут ордĕн çиççе йăлкăшат кăкринче.
Кĕртес çук, тет, епир тăшмана чикĕрен,
Пирĕн куç, тет, курат таврана витĕрех.
Йалтан вăл кайни тултарса пилĕк çул,
Тулчĕ шăп пилĕк çул кăçал—призыв чух,
Кăçал вăл çитесшĕн курмашкăн киле,
Кăçал йанварте хăнана çитмеле.
Манмаст вăл мана та манмаст ашшĕне,
Пире йуратса ырлăх-сывлăх сĕнет.
Килсех-ха тăраççĕ унран çырусем,
Килсех-ха тăраççĕ унран парнесем.

Кĕçĕнни пурăнат виçĕ çул Кавказра,
Вăл вĕçет хуларан хулана сывлăшра.
Питех çӳлĕ, тет, вăл Кавказ тăвĕсем,
Хăй вĕçеп, тет, йалан вĕсенчен те çӳлте.
Ак, халђ те умрах ун кăвак куçĕсем,
Умрах халђ, умрах ун манми ĕçĕсем,
Ăна асăнаççĕ колхоз хĕрĕсем,
Ун патне сӳретеççĕ йалтан çырусем.
Кăçал йанварте вăл килеп, тет, вĕçсе,
Килсех-ха тăраççĕ унран парнесем.
Кĕтетпĕр пурне те кăçал йанварте,
Кашнишĕн ман чунăм, чĕрем хĕпĕртет.

Виç ывăлăн амăшĕ ларнă пӳртре.
Ун пичĕ çине хĕвел ӳкнĕ хитрен.
Вăл ларнă пĕччен хӳхĕм сӳс арласа,
Хăй саван йуррине сăвăлла йурласа.
Кашни ывăлне аса илнĕ пĕччен,
Кашни ывăлне мухтаса йурринче.
Çамрăк хĕр каччине кĕтнĕ пек вăхăтра,
Карчăк пăхнă час-час тулала кантăкран.
Сасартăк пӳрте упăшки кĕрсе тăнă,—
Виç ывăлăн ашшĕ питех хавасланнă.
Ун çирĕп те ĕçлĕ чипер аллинче
Пулнă конвертсем, виç çыру виç йенчен

Вĕсем часах пĕлнĕ: пĕри Мускавран,
Тепри чикĕрен, инçетри тухăçран,
Кĕçĕн ывăлĕ çырнă татах Кавказран
Çыртăм, тенĕ, çыру вĕçнĕ чух сывлăшра,
Кашни çырунчех салам тупнă вĕсем,
Кашни тав тăваççĕ хаваслăх сĕнсе.
Мĕн пур пускилпе йал-йыша салам çырнă
Ашшĕпе амăшне ӳстернишĕн ырланă.
Кашни асăнат çырура Сталина,
Кашни тав туса сывлăх суннă ăна.
Кашни çитме пулнă кăçал йанварте,
Кашни мухтанат Сталинла ĕмĕрпе.



*Ӳкерчӗк ҫинче: Чӑвашсойузӑн Шупашкарти ҫӗнӗ ҫурчӗ.*
*Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.*

*Ф. ХӖЛКЕЙ*

# ҪӖНӖ ПУРНӐҪШӐН

I.

Ҫутӑ тӗкӗр пек тикӗссӗн сарӑлса выртатӑчӗ парк варринчи кӳлӗ. Унӑн йанкӑр тӑрӑ тӗпӗнче хумханатӑчӗҫ йаштака йӑвӑҫсен ӗмӗлкисем. Кӳлӗ таврала инҫене сарӑлатӑчӗ парк. Кунта йешӗрсе ӳсетчӗ улмуҫҫийӗ, пилешӗ, кавранӗ, топӑлӗ... Кӗҫҫеленсе выртатӑчӗҫ йӑвӑҫсем айӗнче чечеклӗ курӑксем. Кунӗпех сӗрлетчӗҫ вӗсем ҫинче вӗлле хурчӗсем.

Чӑн та, илемлӗччӗ хула паркӗ. Плошчадкӑсенче пӗрӗхетчӗҫ фонтансем. Йаланах уҫӑ сывлӑш тӑратӑчӗ. Ҫак илемлӗ паркри кӳлӗ хӗрринче ӗнтӗ уйӑрӑлтӑм епӗ ытарайми Наҫтӑ тусӑмран. Асӑмрах-ха пӗрле ларнӑ скамйе те. Пӗр сассӑр хумханатӑчӗ вӗтӗ те кӑтрашка хумсемпе каҫхи кӳлӗ. „Уйӑрӑлнӑшӑн кулянма кирлӗ мар, нихӑҫан та манмӑпӑр епӗр пӗрпӗрне“, тесеттӗм епӗ ӑна. Вӑл мана хирӗҫ сӑмах чӗнместчӗ, пӗрехмай шӑппӑн хуйхӑратӑчӗ, йе хыттӑн чӑмӑртатӑчӗ кӑна аллӑма.

Пӗрлех вӗренеттӗмӗр епӗр унпа йалхуҫалӑх институтӗнче. Унӑн пиҫнӗ ҫырла пек сӑнӗ, чӗкеҫӗнни пек чӗвӗлти чӗлхи, йӑрӑс хурӑн пек йаштака, тӑпӑлтӑпӑл кӗлетки йаланах илӗртетчӗҫ мана. Епӗ калаҫура час-часах ӑна: „Есӗ те, епӗ те тӑлӑххӑн ӳснӗ. Пӗрлештерӗпӗр хамӑр пурнӑҫсене. Совет ҫӗрӗнче пурӑнӑпӑр телейлӗн савӑнса“, тесе йӑпататтӑм.

Наҫтӑ пӗлместчӗ чӑвашла. Вӑл Пушкӑрт республикинче пурӑнакан вырӑс хӗрӗччӗ. Пӗрлех ирттересшӗнччӗ епӗр унпа хамӑр ӗмӗре. Анчах... уйӑрчӗ пире виҫӗ уйӑхлӑх йалсене кайни. Ҫавӑн пек пулчӗ ҫав вӑхӑчӗ унчух.

Ҫапла каларӗ пире институт директӑрӗ йала кайнӑ чух: „ӗҫхресченӗсен пурнӑҫне аванлатма парти пире колхозсем тума хушатӗ... Кулак колхозсене хирӗҫ. Ҫавӑнпа та йалта клас кӗрешӗвӗ ҫивӗчленчӗ. Сирӗн задачӑ йалти чухӑнсен, вӑтамсен массисемпе ӗҫлесе кулаксене хирӗҫ кӗрешесси. Виҫӗ уйӑхра хӑвӑрӑн пӗлӗвӗрсене практикӑпа ҫыхӑнтарӑр. Ҫӗрӗҫӗнчен пысӑк тупӑш илес тесен колхозсем тумала“, терӗ вӑл.

Ку вӑл 1930-мӗш ҫулта пулчӗ. Ҫавӑн чухне уйӑрӑлтӑм епӗ ытарайми Наҫтӑран. Ун Пушкӑрт республикине, ман Чӑваш республикинчи Севрен йатлӑ йала каймала пулчӗ. Ытти чылай студентсем те йалсене саланчӗҫ унчух.

Астӑватӑп: Наҫтӑпа уйӑрӑлнӑ чухне шӑпчӑксем йурлатӑчӗҫ паркра... Наҫтӑ тахҫанччен кӳлӗ ҫине тинкерсе пӑхса тӑчӗ. Вӑл ӑна аллипе сулса хӑварчӗ:

„Кайран те куратпăр урăх...“ тесе шутларĕ пулас. Çапла уйрăлтăмăр епĕр Наçтапа.

II.

Канаш станцинчен ансан, пĕр самантлăха ниçтала каймасăр пăхкаласа тăтăм. Бульварпа утса, хĕсĕк урамри райĕçтăвкома кĕрсе тухнă хыççăн, Севрен йалĕ инçех мар тенĕрен, тата лавĕ те тупăнманнипе, хам каймали йала çурранах утмала пулчĕ.

Чылайах утрăм епĕ Севрене çитиччен. Хĕвел анас умĕн йала çывхартăм. Йалала йешĕл ыраш пуссипе утса пыратăп. „Нумай ĕçлемеле-ха кунта“, шухăшлатăп хам вак йарансене курса. Иала тӳрĕрех кайас тесе, мăн çултан пăрăнтăм та, ыраш пусси урлă сукмакпа утрăм. Йал çине пăхатăп: пĕрисен çурчĕсене хĕрлĕ йе симĕс хĕçтимĕр витнĕ теприсенне, нумайăшне, улăм витнĕ.

Улăх хĕрринчи пĕчĕк сăрт çинче ларать Севрен йалĕ. Йалтан инçех те мар, сарлака улăх варрипе, Çавал шывĕ йухса выртать. Севрен йалĕ çумĕнчех пĕчĕк çатра-вăрман тĕмеленсе ларать.

Йал лаптăкĕ пĕчĕкех мар, йăмралă йал, вăрман пек курăнать хăй. Йалăн анкарти вĕçĕсем çырмана тăрăннă. Аслă урам тăвала тăсăлса выртать. Утса кăштах ывăннă май, ăçта та пулин ларса канасшăн пултăм.

„Нимех те тумĕç-ха çак пахча çеремĕ çине каçса ларсан“, тесе, пĕр пысăк улмуççи пахчинчен иртрĕм те, вĕрлĕк карта урлă каçса, такам анкартине кĕтĕм. Кăшт пăхкаласа илсен, карта çумĕнчи пилĕк таран ӳснĕ курăк ăшне тăсăлса выртрăм.

Анкарти хуçи вăтамрах пурнаканскер пулас: тăпăл-тăпăл çурт тăррисене улăм витнĕ. Унпа йунашарри—пуйан кил-çурт вара. Сарлака анкартинче çурри ытла улмуççи пахчи, чус витнĕ икĕ пысăк ампар, лупас; хӳмепе çавăрнă сарай тăрри урлă симĕс хĕçтимĕр витнĕ пысăк пӳрчĕ курăнать. Сат хĕрринче темле пĕчĕк пӳрт (вăл мунча пулас), ун çумĕнче кăвакалсем нăртлатаççĕ, унта шыв пулмала.

Пахчинчен улмуççи чечекĕсен шăрши килет. Сатра кĕçех шăпчăк хăйĕн илемлĕ йуррине шăрантарма пуçларĕ...

Аванçке çуллахи вăхăтра йалта! Йалти çак йешĕл илемлĕх мана Наçтăпа уйрăлнă сехете аса илтерчĕ. Акă, кăштах ывăннă шăм-шак та пачах ывăнман пек туйăнса кайрĕ. Наçтă шурă тутăрпа вĕлкĕштерсех ăсатса йани, унăн питĕнчен куççулĕсем йухса анни—халĕ те куç умĕнче пекех. Портфĕлтен Наçтă сăнне кăларсан, темшĕн ăна, нихçан курса тăранмас пекех, пăхса киллентĕм. Тутăр айĕпе кăларса йанă кăтра сарă çӳç вĕçĕсем, Наçтă умра пекех туйăнтараççĕ. Нимĕн те çук пек çĕр çинче унран хакли. Кайăк пулсан, вĕççе кайаттăм ун патне. Сăн-ӳкерчĕкĕн тепĕр йенчи адрĕсе те темиçе хут вуласа тухрăм епĕ. „Пушкăртстан, Бузулук“, йĕрленсе йулчĕç манăн асăмра.

Ним тăвайман йенне куççулĕпе йĕпеннĕ куççене алăсемпе тытса, çĕр çумнерех лăпчăнса выртрăм епĕ. „Хĕвел аначчен хватер тупас“ тенĕ çĕргех тĕлĕрсе кайнă мĕн. Çатан çумĕнчи курăк мана ним курмийех хăй ăшне пытарнă. Епĕ кĕçех йывăр ыйхăпа çывăрса кайнă.

...Нумайах çывăрнă пулас епĕ. Шăнса кайнипе вăранса кайрăм. Çанталăк тĕксĕм сăнсăпатланнă. Хĕвел анни чылай пулать пулмала. Çĕртен нӳрĕ сывлăш çапать. Ăçта выртнине тавçăрса илтĕм те, ура çине тăтăм. Таçта йунашарах мăкăртатнă сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Çаврăнкаласа пăхрăм: мунчаран инçех мар ик-виç ĕмĕлке мĕкĕлтетни курăнчĕ. Каллех çĕр çумне лăпчăнса лартăм. Чĕре хăвăрттăн тапма тытăнчĕ. Шухăшсем вĕçеççĕ. „Кам, мĕн ĕçлет капла çĕрле, ку вăхăтра?“ Хушăран шыв шăмпăртатса илни илтĕнчĕ. „Темскер йăраççĕ пулмала шыва?“

Акă, самайах уççăн илтĕнсе кайрĕ пĕр хулăн сасă:

— На пăрине, кĕреçе илсе кил хăвăртрах...

Тахăшĕ чупса кайрĕ.

„Мĕскер пăралаççĕ, мĕскер тăваççĕ?“

Чылай вăхăт иртрĕ: епĕ çаплах кукленсе ларатăп-ха.

— Давай, йар!—илтĕнчĕ паçăрхи сасах.

— Мăйăхĕпех-и?—ыйтрĕ хĕрарăм сасси. Хăма çине мăйăх пăрахнă сасă илтĕнчĕ. Малала та çавăн пек сасăсемех чылайччен илтĕнсе тăчĕç.

Чухласа илтĕм: „Тыр пытараççĕ иккен“.

Йалта труках автансем авăта пуçларĕç. Хыçалтан тул çутăлса килет. Сывлăм ӳкнипе çийĕлти тумтир пĕтĕмпех исленсе кайрĕ.

Йулашкинчен пĕри урапа туртса кайнă сасă хăварчĕ. Хĕрарăмĕпе арçынĕ турра кĕлтурĕç курăнать.

— Айда ĕнтĕ, арăм, турă сыхлатăр,—терĕ пĕри. Иккĕшĕ те киделе утрĕç пулмала. Урăх нимле сасă та илтĕнмерĕ. Епĕ ура çине тăтăм.

Тӳпери çăлтăрсем те сӳнме пуçланă ĕнтĕ. Хĕвелтухăç хĕрлĕ тĕспе йăмăхнă. Çуллахи хĕвел тухас пекех тăрать.

Епĕ васкаса хире тухрăм та анкарти хыçĕпе уй хапхи патнеле утрăм.

„Манмăп хăш тĕлтине“, темиçе хут çаврăнса пăхрăм епĕ мунча йеннеле, симĕс хĕçтимĕрлĕ пӳрт çине.

* * *

Епĕ Севрен йалне пыни часах пĕтĕм йалĕпех сарăлчĕ. Ирхинех йалсовет председателĕпе паллашрăм. Мĕн ĕçпе килнине тата пурăнмали вăхăта каласан, председател мана хватер тупса пачĕ.

Чăпăк Илли тесе чĕнеççĕ имĕш манăн хватер хуçине. Виççĕн çеç пурăнаççĕ хăйсем. Арăмĕ тата ывăлĕ Çергей. Вăтамран начартарах пурăнать Чăпăк Илли. Ĕне пур та, лаши çук.

Пире, Çергейпа, пӳртре пăчă та тата хăнкăла нумай пирки питĕркĕçлĕ нӳхрепçине куçарчĕç. Çергейпа часах туслашса кайрăмăр епĕр. Çергей мана тĕплĕн йал пурнăçĕпе паллаштарчĕ. Симĕс хĕçтимĕрлĕ çурт хуçи Шампа Трахвинĕ йатлă иккен, питĕ пуйан пурăнать вăл. Вĕсен ывăлĕ те пур. Йантуш теççĕ ăна. Вăл таçти аслă шкулта вĕренет тет. Анчах халĕ, те кăларса йанипе, те çуллахи каникула килнипе, килĕнчех пурăнать.

Шампа пек кулаксем татах та пур иккен: Унесĕм, Кăртăш Кавĕрли т. ыт. те.

Çергей хăй çинчен те тĕппипех каласа пачĕ мана. Вăл ултă класлă шкул пĕтерне. Литературăпа питех те интересленет. Йалти активлă комсомолĕцсенчен пĕри. Тата республикăри хаçатсем çине те çырса тăрать. „Унпа ĕçлеме май пур“, шухăшлаттăм епĕ йаланах Çергей çинчен. Йалта пĕрехине колхоз организацилеме тăрсан, „пуç çавăрăннипе“ тата кулаксем пăтратнипе вăл саланса кайни çинчен пĕлтерчĕ мана Çергей.

Йала килни икĕ кун иртсен, епĕр, йалти чухăнсене пухса, канашлу туса ирттертĕмĕр те, Шампа Трахвинĕ анкартине кайрăмăр. Унта çийелтен ним палăрми çĕр айне витсе лартнă лартан 500 пăт ыраш, мунча пĕрени пуçне пăраласа чикнĕ 3 пин тенкĕ ылттăн укçа тупрăмăр. Питех чейе иккен йун ĕçен кулакĕ. Ылттăнне пропкăпа питĕрсе илнĕ, лар вырăнĕнчен чавнă тăприне пĕтĕмпех кÿлле пытарнă.

Шампа Трахвинĕ патĕнче тупнă тырăпа ылттăн шалтах тĕлĕнтерчĕ йал халăхне. Кĕтмен хыпарпа кĕрлерĕ йал. Чухăнсем Шампа çине тем пек тарăхрĕç. „Çиелтен çу та, ăшĕпе кашкăр", терĕç вĕсем. Çав кунах тылла-пуççи йăмри айне пуху пуçтартăмăр. Епĕ тата Çергей колхоз уссине халăха ăнлантарса панă хыççăн, 23 хуçалăх колхоза çырăнчĕç. Чăпăк Илли темĕншĕн „тăхтас-ха", тесе çырăнмасăр тăрса йулчĕ.

Ку вара мана та, пуринчен ытла Çергейа питех те пăшăрхантарчĕ.

Шампана арĕслесе касхине района ăсатрăмăр. Ылттăнне патшалăх банкне патăмăр. Тыррине макаçей ампарне турттарса çирĕп хурал патăмăр.

III.

Касхине Чăпăк Иллин кил хапхине такам шакканă. Такăшĕ часах тухса уçнă та, шурă тутăр çыхнă хĕрарăм ĕмĕлки пÿрте кĕрсе çухалнă.

Ĕнтĕ сĕм-çĕрлех пулса çитнĕ: урамран хĕрсемпе каччăсем килĕсене кĕнĕ, йурă сасси те пасăрах лăпланнă.

Çергей ку вăхăтра урам леш йенчи йăмра айĕнче тин çеç хуларан килнĕ студенткăпа каласса тăнă пулнă. Вăл студенткăпа уйрăлнă та, тул çутăличчен çывăрса илес тесе, пÿртум хыçĕпе касса нÿхреп патнеле утнă. Шăпах пÿртрен икĕ çын каласса тухнă.

— Унеçĕм патне каларĕç-и?—илтĕннĕ ăна ашшĕ сасси. „Унеçĕм патне"—илтĕннĕ хирĕç хĕрарăм сасси. Çергей лăпчăнарах тăнă.

Ĕмĕлкесем васкаса тăвала утсан, Çергей та вĕсем хыççăнах йăпшăнса утнă. Лешсем Унеçĕм кулак патне кĕрсе çухалнă. Калинкке хапхи шăнкăрт! туни çеç илтĕннĕ хыçран.

Çергей кĕçех нÿхрепçине хашкаса чупса çитрĕ. Сывлăшне çавраймасăр, вăл мана хаљ кăна хăй мĕн курни çинчен каласа пачĕ.

— Атте çĕрле кулак патне çÿрени ыррах пулас çук. Вăт мĕншĕн колхоза кĕмест вăл, вăт мĕншĕн „тăхтаť" вăл! Тен, атте пирĕн тăшман,—вăрçаť Çергей ашшĕне.

— Кайар, аçу киле таврăннине сăнар,—терĕм епĕ хăвăрт тумланса.

Епĕр кĕçех тĕксĕм урампа пуйан Унеçĕм килĕ йеннеле йăпшăнса утрăмăр. Тĕлĕнмеле: Унеçĕм килĕнче çутă çук. Епĕр пÿрт умĕнчи ватă йăмра çумне йăпшăнса лартăмăр. Ним сас-чÿ те илтĕнмест Унеçĕм пÿртĕнчен.

Çергей мана шăппăн кÿршĕри Упи йалĕнче колхозшăн тăракан активиса кулаксем тасаранах вăрăпа тытни çинчен каласа пачĕ. Упи йалĕнчи колхоз организатăрĕ района устав çирĕплеттерме кайнă пулнă. Унтан вăл касхине тин таврăннă. Çĕрле вăл района кайса килнĕ трантас çине кулаксем пилĕк пăт çур ыраш майăхĕ пырса хунă. Пĕр вăтам хресчене: „Манăн тырра вăрланă, ку майăхĕ манăн", теме хушнă. Хайхисем ирхине пĕтĕм йал халăхне активис патне пуçтарса пынă, хăшĕсем активиса çапса та илнĕ тет. Çапах кайран ку ултава пĕлнĕ. Тĕрĕслĕх ниçта та путмасť çав. Унпек ĕçсем пирĕн йалта та пулма пултарассĕ, ахаљтен атте çĕрлехине кулаксем патне сĕтĕрĕнмĕччĕ. Ман шутпа Шампа йулашкисем—пирĕн тăшмансем,—вĕçлерĕ вăл хăйĕн сăмахне. Тул çутăлса килет ĕнтĕ. Епĕр çаплах Çергей ашшĕ тухасса кĕтсе тăратпăр. Анчах, малтанхи пекех ним сас-чÿ те илтĕнмест Унеçĕм килĕнчен

— Тул çутăлса килет, пире курма пултарассĕ, кайар,—терĕм епĕ Çергейа.—Пайан тĕпчесе пĕлĕпĕр аçунтан, хăратса та пăхăпăр ăна.

Кăнтăрла епĕр Çергей ашшĕнчен темĕн чухлĕ тĕпчесен те нимĕн те ыйтса пĕлеймерĕмĕр. Унтан пĕр ерех шăрши кăна çапаť. Ашшĕ йатлаçса çеç такаť: кĕраки тума лаша ыйтма кайнă, тет те урăх нимĕн те шарламасť.

Çергей ăна ку ĕç çинчен милицийе пĕлтермеле пулаť тесен, ача-пăчана пĕчĕклех вĕлерсе пĕтермеле çав,—тесе вăрçса тăкрĕ.

* * *

Тепĕр ернерен епĕр Унеçĕмпе Кăртăша раскулачиť турăмăр. Çакăн хыççăн колхоза çĕнĕрен тата 7 хуçалăх çырăнчĕç. Çергей ашшĕ çаплах колхоза çырăнмасť-ха. Калаçми пулчĕ вăл пирĕнпе. Епĕ Çергейсем патĕнчен урăх хватере куçса кайма шут тытрăм. Лайăх мар мана йал халăхĕ умĕнче манăн хватер хуçи колхоза кĕмесĕр тăни. Анчах Çергей мана хăйсем патĕнчех йулма хушрĕ.

— Колхоза кĕртетпĕрех ăна,—тетчĕ вăл,—кĕртетпĕрех! Хаљ Унеçĕмсене ăсатрăмăр ĕнтĕ, текех ăна астаракансем, колхоза кĕме тытса чаракансем пулмĕç.

Епĕ килĕшрĕм Çергейпа, вĕсем патнех йултăм пурăнма.

Пĕрре епĕр йалти комсомолĕцсемпе Çавал çине шыва кĕме антăмăр. Çуллахи кунсем шăрăх та пăчă тăраťчĕç. Çак вăхăтра чăтайман çав Çавал шывне чăммасăр. Кунĕпех шывран тухма пĕлместчĕç вара Севрен ачисем те. Ах, йепле хаваслă та чуна çĕклентеретчĕ çутă Çавал! Ишнĕ чухнех таçта çĕкленсе кайас килет. Çавтери пурăнас килет кунти илемлĕхе пăхсан.

Анлă та çутă Çавал! Хуллен хĕвеланăç çилĕпе хумханаťчĕç Çавал икĕ йенĕпе ÿсекен хăвасем. Ваљ-ваљ авăнса, йăпăрт чуптуса илетчĕç Çавал питне çил хускăтнипе вĕсем. Йе шăмпăрт! сиккелетчĕç шыв çийĕпе кĕмĕл пулăсем. Сиккелетчĕç те, йап! хыпса илетчĕç Çавал çийĕн вĕçекен лĕпĕшсене. Кунтах илемлĕ кĕвĕсемпе чĕнкĕлтететчĕç икĕ йенче ÿсекен хăвалăхра вĕт-шак кайăксем. Чăнах илемлĕ Çавал, илемлĕ!

Епĕр, Çергей тата студенткă, шывран тухнă хыççăн, çулман çаран урлах кил йеннеле утрăмăр. Темшĕн Çергей пайан питех хаваслă.

— Мĕнле сăвă та пулин каласа парăр-ха,—ыйтрĕ ун çумĕнче утса пыракан студенткă. Çергей хăлаçланса пырсах сăвă шăрçала пуçларĕ:

Улăх, улăх! Симĕс улăх!
Йешĕрессĕ чечексем.
Тĕслĕн-тĕслĕн, терлĕ тĕслĕн
Илĕртес пире вĕсем.

Анчах... йулашки хут шыва кӗрсе таврӑнчӗ ҫак кун Ҫергей, йулашки хут пирӗнпе саванса йулчӗ вӑл. Чӑнах та, аван ачаччӗ Ҫергей. Кӗтменччӗ епӗр вӑл тӑшман аллинчен вилессе, кӗтменччӗ... Пурӑнасшӑнччӗ, колхозри хаваслӑ пурнӑҫа курасшӑнччӗ Ҫергей. Йуратаҫчӗ ӑна студенткӑ, телейлӗччӗ вӗсем...

IV.

Каҫхине. Хӗвеланӑҫне ҫумӑр пӗлӗчӗ хупласа илчӗ. Хӑрушшӑн та тискеррӗн курӑнаҫ вӑл инҫетрен. Аслати авӑтни илтӗнсе кайрӗ.

Ҫергей ашшӗпе хирӗҫсе урамала тухса уттарчӗ. Ашшӗ, пӗрре нӳхреп ҫине, тепре ывӑлӗ ҫине пӑхса тӑрса йулчӗ. Урамра хавассӑн шӑранаҫ вӑйӑ йурри. Таҫта хайаррӑн анчӑк ӳлеме тытӑнчӗ. Епӗ ҫывӑрас тесе нӳхрепҫине кӗрсе выртрӑм.

Ҫумӑр вӑйлӑран вӑйлӑ килни паларать. Таврана хӑруш та хура пӗлӗт хупларӗ. Акӑ вӗсем пуҫ тӑрринчех йавӑнаҫҫӗ. Йамга тӑрри хуҫӑлас пек авӑнаавӑна илет. Таҫта, шӑтарса кӗрес пек, хайар ҫил улаҫ. Ҫанталӑка пӗтӗмпех сӗм-тӗттӗм ҫапрӗ. Малтанхи ҫумӑр пӗрчисем пӗрӗхе пуҫларӗҫ.

— У-у-у!—тискер те хӑрушшӑн улаҫ каҫхи ҫил. Ытти каҫсенче ку вӑхӑтра тулли уйӑх ҫуттине сапаланчӗ. А халӗ... тӗттӗм... тӗттӗм... Сивӗ те хайар ҫил тӑлӑххӑн улани чӗрене шиклентерет.

Анчах... урӑххи пулнӑ мӗн унран та хӑрушши. Ҫак каҫ ӗнтӗ тӑшмансем хӑйсен ирсӗр ӗҫне туса хучӗҫ..

Икӗ ӗмӗлке нӳхрепҫи патне йӑпшӑнса пынӑ. Вӗсенчен пӗри Йантуш, тепри Чӑпӑк хӑйех пулнӑ. Вӗсем шӑппӑн ҫеҫ темӗн ҫинчен калаҫнӑ сӑмаха ҫил таҫтала вӗҫтерсе кайнӑ.

Нӳхреп ҫумӗнче ларакан ватӑ йӑмра ҫеҫ, темӗнле хуйха сиснӗ йевӗр, куҫҫуль йухтарнӑ пек, ҫумӑр тумламӗсене ҫӗре тӑкнӑ. Вӑл, хайар ҫил тулланипе, тӑтӑшах нӳхреп ҫине туратисемпе ҫатӑлтаттарса илнӗ. Хайар ҫил улани ыйхӑ памасҭ.

Те ахаль, те чӑнах тахӑшӗ нӳхреп пӗренисем ҫине шыв сапнӑ пек туйӑнчӗ. „Чашлаттарса ҫӑвакан ҫумӑр пулас", шухӑшларӑм епӗ.

Ҫав вӑхӑтрах Ҫергей хӗрлӗ тутӑр ҫыхнӑ студенткӑпа пӗрле пахчара ларнӑ...

Сасартӑк пуҫ тӑрринче ҫӗр ҫурӑлас пек аслати авӑтса йачӗ. Ҫак вӑхӑтрах нӳхреп ҫатӑртата пуҫларӗ.

Епӗ, пӑлханса, самантрах вырӑн ҫинчен сиксе тӑтӑм. „Аҫа ҫапрӗ!"—кӑшкӑрса алӑка уҫса йатӑм. Нӳхрепҫи ҫатӑртатсах ҫунаҫ.

Малала нимӗн те астӑваймастӑп. Пӑшал сасси кӗрслетни, тахӑшӗ тапланттарса чупса кайни, Ҫергей сасси пулмала, кӑшкӑрни хӑлхара илтӗннипех епӗ ҫӗр ҫине тӗшӗрӗлсе аннӑ...

Мана тахӑшӗ ҫулӑм ӑшӗнчен сӗтӗрсе кӑларчӗ. Унчух епӗ хайаррӑн кӑшкӑрса йанӑ пулмала, ҫав ҫеҫ вилӗмрен хӑтарнӑ мӗн мана.

Ӑн килчӗ. Пӗҫӗре суран пӗҫерсе ыратаҫ. „Тӑшмансен ӗҫӗ ку!"—пыр тӑвӑнҫа килчӗ манӑн...

Ҫухӑру-кӑшкӑрашу йанраса тӑраҫ таврара. Пушар йал халӑхне пӗр самантрах пуҫтарнӑ мӗн.

Ман пата чупса пынӑ студенткӑ ман сурана ҫыхса йачӗ. Епӗ унран Ҫергей ӑҫтине ыйтрӑм. Вӑл пахчаран, вут ҫутине курсанах, кунта чупса килнине пӗлтерчӗ.

Нӳхрепҫи ҫунса пӗте пуҫланӑ. Унӑн ҫулӑмӗ, ҫӑмӑр ҫӑваҫ пулин те, пӗрре айалала, тепре ҫӳлеле улӑхса илет.

„Аҫа ҫапнӑ", халапласҫӗ халӑх хушшинче, хӑшӗсем сӑхсӑха-сӑхсӑха илеҫҫӗ. Теприсем: „Аҫа ҫапнине сӳнтерме йурамасҭ", тесе ӗҫсӗрех хӑраса тӑраҫҫӗ.

Пушар лӑпланса пычӗ. Халӑх пушара ытти ҫуртсене тивме памарӗ. Самантрах нӳхрепҫи ҫунса та пӗтрӗ.

Халӑх хушшинче Ҫергей амӑшӗ ӗсӗклесе йӗрни илтӗнет. Чӑпӑкӗ паҫӑртанпах пӗр вырӑнта, хытнӑ пек, тӑраҫ.

Халӑх шавӗ лӑпланҫах пычӗ. Нӳхрепҫи вырӑнче сӳнсе пыракан шӗлкӑвар ҫеҫ тӑрса йулчӗ.

Ҫак вӑхӑтра анкартипе такамсем шавласа килни илтӗнчӗ. Ҫунса пӗтнӗ нӳхреп патне вараланса пӗтнӗ пуҫне ҫӗреле уснӑ Ҫергейа ҫаватса пычӗҫ. Епӗ вӑл пире пӑшалпа пенӗ ҫын хыҫҫӑн хӑваласа кайнине чухласа илтӗм. Унӑн пылчӑкланса пӗтнӗ хул хушши айӗнчен йун тӑмласа тӑраҫ. Ӑна майласа ҫӗр ҫине вырттарчӗҫ.

„Кам хӑтланнӑ ку ирсӗр ӗҫе?"—пӑтранса илчӗ хумханакан халӑх.

Труках ҫанталӑк уйартса кайрӗ. Хура хайар пӗлӗтсем таҫта ҫухалчӗҫ те, кӑнтӑрлахи пек уйӑх ҫутатса йачӗ.

Таҫти пахчара шӑпчӑк йурлани илтӗнет. Сывлӑшӗ те уҫӑ. Тӗнче илемлӗ пек... Пурӑнас килет...

Ҫергей тавра сырса илнӗ халӑх, такам ҫине ҫиллине шӑнараймасӑр, тӗлӗнсе тӑраҫ. Амӑшӗ, йӗреймипулса, Ҫергей пуҫӗ умне пырса ӳкрӗ. Студенткӑн шывланнӑ куҫӗсенчен уйӑх ҫутинче куҫҫуль йухса анни курӑнчӗ. Вӑл хӗрлӗ тутӑрне ҫурса Ҫергей суранне ҫыха пуҫларӗ.

Ҫергей куҫне уҫрӗ. Йулашки хут ҫӑлтӑрсемпе ҫунакан тӳпе ҫинеле тинкерсе пӑхрӗ. Вӑл тӑрасшӑн пулчӗ. Унтан каллех лӑпланчӗ.

— Ах, Ҫергей! Мӗн пулчӗ сана?..—студенткӑн йӗрес пек тухакан сасси илтӗнчӗ.

— Вилетӗп... Йантуш.. Йантуш печӗ... Атте... тӑш-ман...—тесе хучӗ вӑл аран, тытӑнкаласа. Халӑх, чӗрине хытарса, итлесе тӑчӗ.

— Паллах, ку тӑшмансен ӗҫӗ!—илтӗнчӗ халӑх хушшинчен такӑшӗн сасси.

— Йантушне кайса тытас!..

— Вилӗм ӑна!..

Халӑх хумханса кайрӗ. Унтан часах шӑпланчӗ.

Ҫак вӑхӑтра Ҫергейӑн чӗри тапма чарӑнчӗ. Манӑн, хамшӑн мар, Ҫергей йулташӑма хӗрхенсе, питӗм тӑрӑх икӗ йӗнӗпе те вӗри куҫҫуль тумламӗсем йухса анчӗҫ. Ку самантра епӗ Ҫергей ҫине пӑхнипе, хам суранӑм ыратнине те йалтах манса кайнӑ.

Чӑпӑк, чӗтресе, ывӑлӗ патне утса пычӗ. Унӑн хӑйӗн те тинех хытӑ чӗри ҫемҫелсе кайрӗ пулас. Ирӗксӗрех куҫӗсем шывланчӗҫ.

— Халӑх,—терӗ вӑл чӗтрекен сассипе. Пурте ун ҫинеле пӑхрӗҫ. Чӑпӑкӑн куҫҫулӗсем йухса анчӗҫ.—Мӗнпурӗ те епӗ ҫеҫ айӑплӑ ҫакӑнта. Ҫак ӗҫ ҫинчен Шампа ӑраттисем тахҫанах шутлаҫчӗҫ. Епӗ вӗсемпе ҫыхланса ҫемйери лӑпкӑлӑха пӑсрӑм. Вӗсем активиссене вӗлерес тесе йури аслати вӑхӑтне кӗтрӗҫ... Йантушӗ, тарса ҫӳрекенскер, пӑшалпа печӗ... Савнӑ ывӑлӑма та вӑлах...—Чӑпӑк сасӑпах ӳлесе йӗрсе йачӗ.

Халӑх шавласа кайрӗ. Тахӑшӗ шава чарчӗ. Манӑн йун сӑрхӑнса тухнӑ ура ҫывӑрса хытнӑ.

Халӑх лӑпланчӗ.

Чӑпӑк Илли татах, ӗсӗкленипех, калама пуҫларӗ:

— Тытӑр мана, халӑх, ҫыхӑр! Мана айӑпласа хупчӑр. Хӑҫан та пулин йала таврӑнӑп. Унчух тӳрех

колхоза кĕрĕп. Çав кулаксем хыççăн нихăçан та кайассăм çук... Ерех пĕтерчĕ мана...

Çавăн хыççăн Чăпăк çĕре ӳксех ĕсĕклерĕ.

Халăх пĕрерĕн-пĕрерĕнех саланса пĕтрĕ... Тепĕр ирхине мана хула больницине ăсатрĕç. Амбулаторине кĕрес чух, урам тăрăх икĕ милиционер Йантуша тытса пынине куртăм.

* * *

Тепĕр кунне мана, больницăра выртнă çĕрех, Пушкăрт республикинчен килнĕ çырăва пачĕç.

Çырăва вуласан куç хуралса, пуç çаврăнса килчĕ манăн, чышкăсем çилĕпе чăмăртанчĕç. Урăх ĕнтĕ еп ăна кураймăп...

Çырура Настă Ивановнăна кулаксем шыва путарса вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Çыруне Настă йулташĕ çырса йанă пулнă. Йĕрсе йатăм епĕ..

— Йурат... Сывалам... Виличченех тискер тăшмансемпе çапăçăп!—терĕм епĕ ку çырăва вулана хыççăн.

...Тăста каллех шăпчăксем йурлаççĕ. Таврана чечексен тутлă шăрши сарăлат. Больницă пахчинчи сенкер кӳлĕн кăтрашка хумĕсем кассăн-кассăн çырана пыра-пыра сĕртĕнеççĕ...

---

*НИКОЛАЙ МИШЕН*

## УЙРĂЛУ КАÇĔ

Ыран ирех хĕвел хăпарĕ
Сапаласа хĕрӳ хĕмне.
Колхозпала ес, çывăх тусăм,
Мана ăсатăн чикĕне.

Унта мана кĕтет застава,
Кĕтеççĕ йулташсем мана.
Еп пĕлĕп йумахри пек савăк
Телейлĕ пурнăçшăн тăма.

Еп чикĕне тухса кайнишĕн
Йĕместĕн есĕ—савăнан!
Кулатăн ес, хĕрӳ кăвар пек
Сан ăшă куçусем çунаç.

Йулашки хут вĕсем калаççĕ:
„Сывпул, манмастпăр пĕр-пĕрне!“
Саламлă çырупа калаçăп
Санпа еп, тусăм чикĕрен.

Мана курас килсен, пăх есĕ
Епир çуратнă хĕр çине.
Ав, вăл кулат—пĕчĕк пепкесĕм,
Выльантарат тапписене.

Çак çĕн тĕнчешĕн сывă, çирĕп
Ӳсет вăл паттăр çитĕнет!
Ун телейнеçке сыхламашкăн
Ыран кайап еп чикĕне.

*АРÇ. ОРЛОВ*

* * *

Сывă пул, йуратнă тусăм,
Сывă пул та паттăр пул!
Хатĕр вăйлă пăравусĕ,
Умăнта сан çутă çул.

Сарлака тăван çĕршывăм,
Çул—инçе, анчах асту—
Хăт ăçта та маншăн çывăх
Ес, чĕкеçĕм, çамрăк тус!

Пирĕн кунçулсем телейлĕ:
Ĕçлесен—канма кал-кал.
Кан ес, савнăçлă чĕкеçĕм,
Ĕçлемешкĕн пух вăйхал!

Ес вăйхал пухса килсессĕн,
Алла-алăн тытăнса,
Епĕр ĕçлĕпĕр, чĕкеçĕм,
Ăмăртса, хавасланса.

Асăмран сăну сан тухмĕ,
Манмăп ăш сăмахсене.
...Кашлатса шур пăсĕ тухрĕ—
Пăравус ларма чĕнет.

Хатĕр вăйлă пăравусĕ,
Умăнта сан çутă çул.
Сывă пул, йуратнă тусăм,
Сывă пул та паттăр пул!

*ПР. САТУР*

## ПИРĔН УЙАВ

Кĕркунне. Тулта октабĕр.
Çĕршывра пайан уйав.
Урамсем тумланнă капăр,
Кашни çурт çинче йалав.

Уйавлат колхозлă йалăм,
Уйавлат çĕршыв-анне
Çамрăксенĕн чи мухтавлă,
Чи хаваслă уйавне.

Ретĕн-ретĕн, килĕшӳлĕ
Çамрăк çар утса иртет.
Пурте епĕр хĕпĕртӳлĕ,
КИМ палли умра çиçет.

Çут хĕвелĕмĕр, çулпусĕ—
Аслă Сталин пирĕнпе,
Ачаран пăхса ӳстерчĕ,
Çитĕнтерчĕ вăл пире.

Комсомол хĕрсех ĕçлерĕ,
Вăл кĕрешрĕ çирĕм çул.
Çĕнтерӳ палли—ик орден,
Кĕрешӳ татах темчул.

Комсомоли паттăрлантăр,
Чыслă пултăр тĕнчипе!
Йурă, йурă йанăратăр
Комсомоли йачĕпе!

---

*ЕНШЕЙ*

## ТЕЛЕЙЛĔ ÇАМРĂКЛĂХ

Çитĕнетпĕр, пĕр çемйе пек, епĕр пинĕпинĕпе,
Çитĕнетпĕр ырă, çутă, тулăх пурнăç чĕрçинче.
Саванса, хавас ӳсетпĕр, çурхи йешĕл чечек пек
Савăнăçлă та телейлĕ Советсен çĕршывĕнче.

Ӳстерет пире çĕршывăм—хамăрăн тăван анне,
Кăмăллат пире çĕршывăм, халалат хăй пурлăхне.
Вĕрентет пире çĕршывăм пурăнма та ĕçлеме,
Вĕрентет пире çĕршывăм кĕрешме те çĕнтерме.

Пирĕн çамрăклăх хаваслă пулĕ ĕмĕрĕмĕрех,
Ма тесен, йуратнă Сталин йалан пирĕнпе пĕрле.
Çĕнтерме çуралнă епĕр çак чечеклĕ çĕршывра.—
Çитĕнетпĕр епĕр паттăр, харсăр геройсем пулма!

*Е. АБАКШИН*

# ПУРНАҪ СЫПĂКĔ

*КАЛАВ*

Ҫу иртĕ. Хĕвел тухаҫа шупкарах кĕрен тĕслĕ сăрсемпе сăрласа илемлетет. Сулхăн. Тўлек... Меркулăв хула хĕррине уҫăлса ҫўреме тухрĕ. Кăшт уткаласа ҫўресен, вăл чăнкă ҫыран хĕррине пырса тăчĕ. Ун умĕнче анлă Атăл йалкăшса выртать. Отпуска килнĕренпе кашни ир тенĕ пекех Атăл хĕррине тухать вăл. Анлă Атăл ҫине пăхать те вара, тĕлĕрнĕ пек пулса, шухăша кайать. Ун куҫĕ умне час-часах хăй ĕҫлекен савăтри (сыхлăх тĕлĕшĕпе ĕҫлекен савăтри) йулташĕсем, хăй пекех ҫамрăк инженерсем тухса тăраҫҫĕ. Таҫта та ҫитсе ҫапăнаҫҫĕ ун шухăшĕсем кун пек самантсенче. Пайан ир те вăл, иртнĕ ирсенчи пекех, Атăл ҫине пăхса шухăша кайрĕ. „Отпускран таврăнсан ман проект пурнăҫа кĕрессех паллă пулать. Анчах мĕнле кĕтсе илĕҫ-ши ăна йулташăмсем?" — терĕ вăл, хăй ăссĕн мăкăртатса.

Ҫав хушăрах вăл ҫыран хĕррипе тăсăлакан симĕс карлăка куҫĕсемпе виҫсе тухрĕ. Хăйĕнчен инҫех те мар пĕр ҫамрăк хĕр тăнине асăрхарĕ те, ун ҫине тинкерсе пăхма пуҫларĕ. Хĕр пĕр хускалмасăр Атăл тăрăх анатала пăхса тăрать. Те пăрахут килессе кĕтет вăл, те Атăл илемне пăхса киленсе тăрать. Ҫине сенкер кĕпе тăхăннă. Ҫўҫĕсем, ункăнункăн йавăнса, чипер хулпуҫҫийĕсем ҫинеле усăнса анаҫҫĕ. Кĕлетки — пиҫĕ хăва хулли пек йаштака. Анатран хăпаракан пăрахут пристăнь патнеле ҫывхарма пуҫласан, хĕр Меркулăв ҫинеле ҫаврăнса пăхрĕ.

—„Илемлĕ хĕр!—шухăшларĕ Меркулăв. Вăл ун ҫине тата тинкеререх пăхса илчĕ.—Ăҫта курнă еп ăна?" Тем чухлĕ шухăшласан та аса илеймерĕ вăл ҫак хĕре ăҫта курнине. Пĕрре ку хĕре савăтра ĕҫленĕ чухне, кинона кайсан курнă пек, тепре—отпуска килнĕ чух, пăрахут ҫинче тĕлпулнă пек туйăнчĕ. Анчах ку шухăшсем ҫирĕпленеймерĕҫ ун пуҫĕнче. Лайăхах асăрхайман ҫав вăл ăна, астусах ҫитерейместь вăл ку хĕре ăҫта тĕлпулнине. Ҫапах та... вăл чăтса тăраймарĕ, хĕр илемлĕхĕ илĕртрĕ ăна, вăл ун патне пырса сăмах хушрĕ:

— Атăл илемĕ сире те йăпатать пулмала?—терĕ вăл, ун ҫумнерех тăрса.

Хĕр ҫаврăнса пăхрĕ. Ачаш, ҫемҫе кулă чупса иртрĕ ун питĕнче. Меркулăв тарăн ҫăл пек таса кăвак куҫсене, тўрĕ, илемлĕ куҫхаршисене курчĕ.

— Кимĕпе ҫўреме аван пулмала пайан,— терĕ хĕр, Атăл ҫинче ишсе ҫўрекен шап-шурă тумлă ҫамрăксем ҫинеле пăхса.

— Кама та пулин кĕтетĕр пулĕ-ха есĕр?—терĕ Меркулăв, хĕр кăмăлне ытарайманăр сассине ҫемҫетсе.

— Йулташсем килме пулнăччĕ те, килеймерĕҫ-ха...

— Пĕрле кĕтĕпĕр еппин, чăрмантармастăп пулсан,—терĕ Меркулăв.

— Ҫук, мĕн чăрмавĕ пултăр, пĕччен кичемрехчĕха мана...—терĕ те хĕр, Меркулăв ҫине тыткăна илекен куҫĕсемпе тинкерсе пăхрĕ, хăй ҫав хушăрах йăл-л кулса илчĕ.

— Каҫарăр, сирĕн йатăра ыйтса пĕлме йурать-и?

— Мĕн тăватăр есĕр ман йатпа?

— Ахаль... „ей", тесе чĕнме аван мар...

— Пĕлесех тетĕр пулсан, калам еппин, паллашăпăр, Клара,—терĕ хĕр, чипер аллине тăсса.

— Гриша!—терĕ Меркулăв, унăн пĕчĕк аллине чăмăртаса.

— Кунтисемех-и есĕр?

— Ҫук, кунтисем мар, отпуска, хам ҫывăх йулташ патне килтĕм. Пайанхипе тăваттăмĕш кун ĕнтĕ... Есĕр кунтисем-и?

— Ҫук, епĕ пичче патне килнĕ. Пĕр ерне ĕнтĕ... Кайма та вăхăт ҫитет...

— „Ҫук, йăнашрăм пулас, курман пулĕ еп ку хĕре", терĕ Гриша хăй ăссĕн, хĕр ҫине тинкererех пăхса.

Вĕсем калаҫнăҫемĕн калаҫса кайрĕҫ. Меркулăв хĕр ăҫта ĕҫленине ыйтса пĕлчĕ. Куҫа илĕртекен хĕр ҫар пĕрлешĕвĕн штабĕсенчен пĕринче бухгалтĕр пулса ĕҫлет, имĕш.

Хула ҫыннисем Атăл леш йенне васкаҫҫĕ. Атăл варне ҫитме ĕлкĕрнĕ паром ҫинче хаваслă йурă йанăрать. Аван ҫав канмали кунсенче!.. Пурте таса тумланнă, ытарма ҫук хитре хĕрсем чĕрене ирĕлтермеле пăхса иртеҫҫĕ.

— Кларă,—терĕ Гриша, Атăл леш йенне каҫакан паром ҫинчен куҫне илсе,—кайар мар-и епĕр те... Йулташусем леш йенче те шыраса тупĕҫ.

Кларă турткаланса тăмарĕ, килĕшрĕ. Вара вĕсем, леш йенчен килекен паром ҫине ларса кайма ĕлкĕрес тесе, хăвăртрах ҫыр хĕррине анчĕҫ. Ҫапла вăл ҫамрăклăх! Кайала таврăннă чух вĕсем алла-алăн тытăнса таврăнчĕҫ.

* * *

Тĕрĕссипе каласан, Гриша чĕринче йурату тейекен сисĕм вăранма ĕлкĕреймен-ха. Темшĕн ҫапла вăл? Те ачаранпах ĕҫпе вĕренӳ йеннеле ытларах туртăннăран вăл? Пĕлме ҫук, пулĕ те. Темскер пур ун ăшĕнче, анчах паллă мар-ха, те йурату вăл, те йулташла кăмăллани ҫеҫ?.. „Кларă кĕҫех кайать, уйăрлатпăр пĕр-пĕринчен, тен, урăх нихҫан та тĕлпулаймăпăр", терĕ вăл пĕрре, Кларă ҫинчен шухăшланă хушăра. „Мĕнех пултăр пирĕн хушăра, маншăн вăл ҫывăх палланă хĕр ҫеҫ"... Чăн та, вĕсем йурату темине хускатман, кирек хăҫан та ҫĕршыв ҫинчен, ҫамрăксен пурнăҫĕпе вĕренӳ ҫинчен, курнă кино-картинăсемпе вуланă кĕнекесем ҫинчен калаҫнă. Сахал-и калаҫмали темăсем?

Меркулăв нихăҫан та Кларă умĕнче хăйĕн ҫекретлă ĕҫĕсем ҫинчен калаҫман. Хăш чухне Кларă пуҫарса йарать унпек калаҫăва, анчах Меркулăв вăл калаҫăва вăхăтра пăрса йарать.

Кларă ун ҫине йулташла ҫеҫ мар, темскерле урăхларах, ăшăрах кăмăлпа пăхма пуҫланине Гриша часах туйса илчĕ. Кларă хăйĕн илемлĕ те ачаш, куларах тăракан куҫĕсемпе, Гриша ҫине вăтанса пăхать. Йе ҫыран хĕрринеле аннă чухне, майĕпен, Гриша ҫумне ҫыпҫăнать. Хăш чухне унăн чăп-чăмăр кăкăрĕ Гриша ҫумне сĕртĕнсе илет, ун пек чухне, Гриша сисет, унăн ҫан-ҫурăмĕ сăрлатса илет.

— Гриша,—терĕ пĕрре Кларă,—пирĕн кĕҫех уйăрлмала пулать. Пĕрле иртternĕ кунăмăрсене асаилмелĕх, пĕр-пĕрин адрĕсне илсен аван пулĕччĕ. Пĕрпĕрин патне ҫыру ҫырса тăрăпăр. Тен, кăмăлăр пулсан, хăвăрăн сăн-ӳкерчĕкне паратăр?

Гриша килĕшрĕ. Вăл ăна пĕр ҫырман блок-нот каларса пачĕ.

Тепĕр кунне Кларă блок-нота кайала тавăрса пачĕ.

—Пĕччен чухне ҫеҫ уҫса пăхăр,—терĕ вăл.

Гриша килне кайсан вăл блок-нота уҫса пăхрĕ. Чăн пирвайхи страница ҫине Кларă хăйĕн сăн-ӳкерчĕкне ҫыпăҫтарса хунă. Питĕ илемлĕ ӳкерчĕк! Гриша ун ҫине ытараймасăр пăхса тăчĕ. Шалти страницăсем ҫинче йурату сăввисем, адрĕс. Мĕн ку? Гриша темле ҫутă хутпа чĕркесе хунăскерне сӳтсе пăхрĕ. Ак йапала! Хут ăшĕнче пĕр пайăрка кăтра ҫӳҫ, Кларă ҫӳҫĕ!

— Неушлĕ йуратаҭ вăл мана?—ыйтрĕ Гриша хăйĕнчен хăй.

Чăн малтан вăл хăй Кларăна йуратма пуҫланине сисрĕ. Пуҫра ҫап-ҫутă ĕмĕтсем ҫитĕнме пуҫларĕҫ. Чи малтанхи йурату кирек хăҫан та ҫавăн пек пулаҭ вăл, ҫавтери хĕрӳ, ҫавтери ăшă, телейлĕ.

Ҫак кунран пуҫласа вăл Кларăна сăнама пуҫларĕ, ун ҫине ĕлĕкхинчен ăшшăнтарах пăхрĕ. Йулашкинчен вăл Кларă умĕнче хăй мĕн-мĕн чăтса ирттернине пытарса тăмарĕ. Анчах Кларă, темшĕн, унăн сисĕмне ăшшăн йышăнмарĕ: вăл сăмаха сирсе йама тăрăшнă пек туйăнчĕ.

Ҫакăн хыҫҫăн Гриша Кларăна манма тăрăшрĕ. Анчах Кларă хăш чухне каллех ҫывăх, ачашланаҭ, вăтанса пăхаҭ. Тепĕр чухне сивĕ. Мĕне пĕлтеретши ку? Меркулăв Кларă ҫапла хăтланнине курах-и тен, пуҫшех йуратма пуҫларĕ Кларăна, тĕрĕсрех каласан, Кларă хăйне йураттарчĕ. Хăш каҫ, киле таврăннă чух, Кларăна курмасан ăшра темĕскер ҫитмен пек туйăнаҭ. Кларăпа час-час тĕлпулас киле пуҫларĕ. Ҫак кунсенче вăл виҫĕ кун хушши Кларăна курмарĕ. Мĕнле-ха капла? Виҫĕмкун каҫ ăна театртан ăсатнине аса илчĕ вăл. Кларă, темшĕн, сивĕнчĕ, сахал калаҫрĕ. „Паллах, ку ахаљ мар. Тен, йурату ҫинчен сăмах хускатнăшăн ҫиленнĕ вăл? Тен, вăл урăххине саваҭ?“ Ҫак шухăшсемпе вăл ҫыру ҫырма ларчĕ.

„Кларă!

Есĕр мана хăвăра йураттартăр. Хаљ.. есĕр манран хăратăр, манран пăрăнма тăрăшатăр. Хăш чухне кăмăллă... Мĕне пĕлтерет вăл? Епĕ сире кӳрентересшĕн мар. Ыранах епĕ кунтан кайатăп. Антив, ман тивĕҫсĕр йурату ахалех сӳнсе ҫухалтăр. Гриша“.

* * *

Пăрахут ҫинчен темле ҫын анчĕ. Сăнран вăл пĕр вăтăр ҫулта, вăтам пӳлĕ ҫын. Аллинче ун кивĕрех портфĕл. Кларă ăна кĕтсе илчĕ. Вĕсем Атăл хĕрринчен ҫӳлеле хăпарчĕҫ, анчах хулана кĕмерĕҫ, сылтăмала пăрăнса, Атăл хĕррипе утрĕҫ.

— Ну, мĕнле?—ыйтрĕ палламан ҫын, Кларă ҫине шăтарасла пăхса.

— Шанчăк пур,—терĕ Кларă.

— Вăраха йаратăр...

— Вăл хаљ мана йуратаҭ... Анчах ыран тухса кайасшăн вăл. Кĕҫĕр хамăр пата чĕнĕпĕр. Калаҫтарма тăрăшăпăр. Епĕ ун патĕнче темиҫе хут та пултăм. Анчах вăл та шансах ҫитерейместь, хучĕсене тирпейлĕ тыткалаҭ, асăрханаҭ пулас. Вăл вĕсене портфĕлĕнче усраҭ, портфĕлне чемоданне питĕрсе хураҭ. Ыран епĕр пăрахут ҫинче пĕрле пулма тивĕҫ... Пĕр сăмахпа каласан, тăрăшса пăхăп.

— Апла...—терĕ хайхи ҫын, шухăша кайса.—Май килмесен, мĕн тумала вара?

— Шанса тăрăр, вăл хутсем ман аллăра пулаҫҫĕ,—терĕ Кларă.

— Йураҭ, хаљ кайар.

Вĕсем ик йеннеле уйăрăлса хулана кĕчĕҫ.

* * *

Гриша каҫ пулас умĕн кăвак конвертлă ҫыру илчĕ. Вăл ăна хăвăрт-хăвăрт вуласа тухрĕ.

„Гриша!

Каҫарăр, епĕ чирлĕ пулнă пирки сирĕнпе курнăҫаймарăм. Кĕҫĕр пирĕн пата килĕр. Калаҫмалисем нумай.

Кĕтетĕп. Салампа Кларă“.

Тата тепĕр хут вуласа тухрĕ вăл ҫырăва. Ҫук, нимех те ҫырман.

— Йурĕ, кĕҫĕр йулашки хут курнăҫатăп та... Сывă пул!—терĕ Гриша хăй ăсĕн.

Вăл ҫырăва сĕтел ҫине хучĕ, пӳлĕм тăрăх каллемаллĕ утса ҫаврăнчĕ, чӳречене уҫрĕ. Айалта хула. Савăнăҫлă пурнăҫпа пурăнаҭ хула.

Калана вăхăтра вăл Кларă патне ҫитрĕ. Хăнасем чылай пухăннă иккен. Ыран Кларă хăй вырăнне ĕҫлеме кайаҭ. Ăна ăсатас йатпа вечĕр тăваҫҫĕ. Сĕтел ҫинчи патефон темле шăмшака ҫемҫетекен ҫемҫе кĕвĕлĕ „ваљс“ выљаҭ.

Кларă Гришăна хирĕҫ тухса илчĕ.

— Каҫарăр, Гриша, епĕ сире килмест пуљ тесе,—терĕ те вăл, малала иртме сĕнчĕ.

Кларă ăна хăнасемпе, пайан килнĕ „пиччĕшĕпе“ паллаштарчĕ те сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ. Хăнасем пурте «ответлă ĕҫре» ĕҫлекенсем иккен, Гришăна вĕсем хаваслăн йышăнчĕҫ. Сĕтел ҫине хĕрлĕ ерехсем тухса ларчĕҫ.

Калаҫу пуҫланчĕ. Кам мĕнле ĕҫре, мĕн ĕҫлени ҫинчен, мĕнле ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем туни ҫинчен калаҫса кайрĕҫ. Меркулăва та калаҫăва хутшăнтарма пуҫларĕҫ. Вăл кунта ытлашши калаҫнине сисрĕ. „Пулаҫҫĕ тăпсасăр ҫăварсем“, терĕ вăл хăй ăшĕнче. Кларăна киле кайма хатĕрленни ҫинчен каларĕ. Кăшт ларсан Гриша, пуҫ ыратни ҫине персе, кунтан тухрĕ. Ăна чарасшăн пулчĕҫ, анчах вăл итлемерĕ.

Кларă ăна ăсатма тухрĕ. Нумайччен калаҫмасăр пычĕҫ вĕсем. Пĕр касă сулхăн ҫил вĕсен пичĕсене ҫупăрласа иртрĕ. Ытарма ҫук илемлĕ каҫ!

— Кларă!—терĕ Гриша.

— Епĕ,—ҫыпҫăнчĕ ун ҫумнерех Кларă.

— Мĕншĕн есĕр манпа паллашрăр? Мĕне кирлĕ пулчĕ сире манпа вăхăт ирттерме? Тен, сире ҫав кăна кирлĕ пулнă та. Тен, есĕр ман йуратуран хăраса, мана систермесĕрех тарма шутлатăр?

— Гриша! Мĕншĕн ӳпкелешетĕр? Куратăр пуљ... сире... йуратаҭăп епĕ.. Тарса мар епĕ, ман ĕҫе тытăнмала. Тепĕр икĕ кунтан ман унта пулмала. Дисциплинă мĕн иккенне хăвăрах пĕлме тивĕҫ.

Меркулăв, ним калама аптраса, Кларăн чăмăркка кĕлеткине хăй ҫумне хытăрах чăмартарĕ.

— Итлĕр-ха,—пуҫларĕ каллех Кларă,—сирĕн те час отпуск пĕтет пулас. Пирĕн пĕр йеннелех каймала. Пĕрле кайма шутламастăр-и?

Меркулăв ку сĕнӳпе хаваслансах килĕшрĕ. Вĕсем хăйсем ăҫтала кайнине те асăрхаймарĕҫ, анчах та урасем хăйсемех Атăл хĕррине илсе ҫитерчĕҫ. О, ҫĕрлехи Атăл! Мĕн чухлĕ ҫутă! Айакра, Атăл леш йенче, уйăх ҫекленчĕ. Ҫĕр кĕмĕл тĕслĕ ҫутăпа ви-

тĕнчĕ. Тĕлĕнмеле каç! Тĕнче сывлаť, тутлă та сулхăн сывлăшпа сывлаť. Лăпчăнса ларнă айакри вăрмансем пĕр хускалмасăр тĕлĕреççĕ. Атăл сарлака, сатсем те шăп—хушăран çеç çулçăсем сас парса илеççĕ, ахăрнех лăпкă çил килсе чуптăвасса кĕтеççĕ пулĕ. Çулте уçă, йанкăр пĕлĕт.

Сасартăк пурте кисренсе илчĕç—вăрман та, Атăл та! Шăпчăк илемлĕ йуррине сапса йачĕ. Уйăх çуттипе хула тата илемлĕрех пек курăнаť. Чĕре тапаť, темĕн чухлĕ тутлă ĕмĕтсем çитĕнеççĕ пуçра. Таврари йапаласем шурă тĕтре ăшне путаççĕ. Икĕ çын çаплах Атăл хĕрринче калаçаççĕ. Айакран, Атăл леш йенчен, шурăмпуç илемлĕн çĕкленет.

* * *

Вĕсем пăрахут çине ларчĕç. Пăрахут анатала хускалчĕ. Айакра—инçе-инçе Атăл кăваккăн сарăлса выртаť. Пăрахут йарăнаť çеç. Çырансем йерипе шăваççĕ, чупаççĕ çырансем.

Кларăпа Гришă пĕррремĕш клас столовăйĕнче хире-хирĕç пăхса ларса пыраççĕ. Гришă чÿречe витĕр пăха-пăха илет, йаланах улшăнса пыракан картинăсене сăнаť. Гришă, темшĕн, те хĕртен уйăрлас килменнипе хуйхăрса, ытларах ĕçрĕ. Çитменнине, Кларă хăй сĕннĕ пирки, ун кăмăлне татас килмерĕ. Çавăнпа та ун пуçне сăра та, Кларă та чылай çавăрчĕç пулас. Вăл нумай калаçакан пулчĕ.

Хăй пăрахут çинче çÿренĕ чух Кларă йапаласем патĕнче ларчĕ. Йулашкинчен вăл, ним шухăшламасăрах, хăйĕн портфĕлне (ăна вăл аллинчен йаманччĕ) хăй буфета кайсан самантлăха Кларăна тыттарчĕ.

Ун Кларăран маларах анмала. Акă анмали пристăнђ. Сывпуллашрĕç. Çыру йарса тăма пулчĕç. Пăрахут хускалчĕ. Гришă палубă çинче тăрса пыракан Кларăна чылайччен ал сулса ăсатрĕ.

* * *

Кунсем иртеççĕ. Васкаççĕ кунсем. Халђ Гришă сыхлăх ĕçĕшĕн татах та паллă йапала шутласа кăларас тĕлĕшпе ĕçлет. Çак çĕршывра ĕçлеме те хаваслă. Сан ĕçне хаклаççĕ, йуратаççĕ сана. Йепле-ха хăвна пăхса ÿстернĕ çĕршывшăн тăрăшас мар? Кĕтÿçчĕ, тăлăхчĕ—çак çĕршыв вĕрентсе ÿстерсе инженер турĕ. Кашни кун хĕрÿ ĕçре иртет.

Пĕрре вĕсен савăтне çĕнĕ инженер килчĕ. Килсен иккĕмĕш куннех вăл Меркулăв патне пычĕ. Каçхинеччĕ. Гришă хăйĕн кабинетĕнче темĕскер ĕçлесе ларать.

— Иураť-и?—ыйтрĕ инженер.

— Пожалуйста, кĕрĕр, акă пукан.

— Меркулăв Григорий, есĕр пулатăр-и?

— Епĕ.

— Апла Кларăран салам сире.

Меркулăв ăнланмасăр пăхса илчĕ. Меркулăв сăмах чĕниччен хайхи инженер каллех калаçма пуçларĕ.

— Тен, есĕр тĕлĕнетĕр пулĕ, анчах та Кларăна епĕ лайăх пĕлетĕп. Нумай калаçмасăрах паллашар: епĕ сирĕн проектăра тата ытти çекретлă хутăрсене те пĕлетĕп...

Гришă хытах тĕлĕнчĕ. Вăл тĕссĕрленсе кайрĕ. Леш малала калаť:

— Епĕ сире тыттарасшăн мар. Малашне йулташлă пулăпăр.

— Тÿррипе каласан, есĕр йутçĕршыв разведкинче ĕçлетĕр? Çапла-и?—ыйтрĕ çиллĕн Гришă.

— Ăнланатăр пулас. Епĕр Кларăпа пĕр ĕçре...

— Ха... апла иккен!

— Çаплах... есĕр те шпион.

— Ăçтан епĕ шпион?!

— Есĕр çекретлă хутăрсене хăвăр паман-и вара?—йĕрĕнчĕклĕн кулчĕ инженер...

— Çук, епĕ паман, вăл... çырса илнĕ апла ..—тата темĕскер каласа йама тытăнчĕ Меркулăв, анчах чарăнса тăчĕ.

— Анчах та кам ĕненĕ сире? Тĕрĕссипе, хирĕçмели те çук. Сирĕншĕн апла лайăхах пулас çук. Сирĕн, паллах, кайса ларас килмест. Çавăнпа та еп ыйтнă çведенисене парасси сире нимех те мар. Йе сире çийĕнчен ылттăн кансĕрлет-и? Сире çак панă çведенисемшĕн виçĕ пин тенкĕ тивет. Ăна епĕ ыранах тÿлĕп.

Шурса кайнă Гришă пĕр чĕнмесĕр шухăша кайнине курсан, хайхи инженер, ĕç тухаť, терĕ пулас.

— Есĕр халђ пăлханатăр. Кайран кĕрсе тухăп... Пĕччен чухне шухăшласа пăхма меллĕрех пултăр, епĕ кайатăп. Ыран килĕп, калаçăпăр,—терĕ те инженер, Гришă тепре сăмах чĕниччен калла тухса кайрĕ.

Гришă пĕччен йулсан, мĕнле шухăшсем ăшне путнине каласа пама хĕн. Ăна ку хыпар аптратса йачĕ. Вăл нумайччен хускалмасăр ларчĕ. Капла пуласса шутланăччĕ-и вăл? Вăл тăшмансене хăй пăвса пăрахма хатĕрччĕ. Вăт мĕн иккен вăл сисĕмлĕхе çухатни! Кам шухăшланă-ха Кларă унпек çын тесе? Ăнланчĕ вăл. Кларă ăна тахçантанпах сăнаса çÿренине чухласа илчĕ. Кинора курнă хĕр те, пăрахут çинче тĕлпулнă хĕр те Кларă пулнă мĕн. Вăл йурийех ун хыççăн пынă, йурийех унпа паллашнă, хăйне йураттарнă. Тĕрĕссипе вăл—çĕлен пулнă. Мĕнле вĕсем тÿрĕ çынсене ерешмен карти ăшне кĕртсе ÿкереççĕ! Çук, пулмасť вăл! Нихçан та пулмасť!

Вăл шухăша кайрĕ. Ăна телейсĕр, тĕксĕм çамрăклăхĕ аса килчĕ. Амăшĕ унăн çамрăклах вилет, вĕсем ашшĕпе çеç йулаççĕ. Ашшĕ шуррисемпе çапăçнă çĕрте вилет... Вăл тăлăх... Тертлĕ пурнăç, çăкăр татăкĕ ыйтса çÿренĕ вăл пĕр хушă. Пуйан патне кĕрет. Унтан та хăваласа йараççĕ. Ача çурчĕ. Комсомол—вăлах ун ашшĕ те, амăшĕ те.

Çаксене йăлтах аса илчĕ Меркулăв. Çĕре пĕр куç хупмасăр ирттерсе йачĕ. Ир йенне хут тĕслĕ пулса кайрĕ. „Çук,—шутларĕ вăл,—епĕ нихçан та хама ÿстернĕ çĕршывăн тăшманĕ пулас çук. Антив, мана кирлĕ пек айăплаччăр, епĕ хам тимсĕрлĕхе пула çав айăпа тивĕçлĕ".

Вăл ирхине ирех НКВД оргăнне кайса пурне те, пĕр сăмах пытармасăр каласа пачĕ. Йулашкинчен, Кларă сăн-ÿкерчĕкне çыпăçтарса хунă блок-нотне сĕтел çине кăларса хучĕ.

Çапла вара Меркулăв тискер тăшмансен танатинчен çийĕнчех хăтăлчĕ.

• ◆ •

*А. ВАÇИЛЙĔВ*

## ХĔЛ САВВИСЕМ

### МАЛТАНХИ ЙУР

Патăртататă çĕнĕ йур,
Хĕл килнине систерсе.
Çапах кĕрхи илем пур,
Чăрăшсем ав—симĕсех!

Пĕчĕккĕнех ирĕлеç
Çăлтăр пек йур пĕрчисем.
Кăнтăр йеннеле вĕçеç
Йулашки хуркайăксем.

Часах тепĕр уйăхран
Вăрман, сăртсем, çарансем
Илемленĕç катаран,
Йурпа-пăрпа витĕнсе.

○ ◇ ○

### КĂМĂЛ

Тӳпе тăп-тăрă, йанкăр.
Çĕр пичĕ—шап-шурах.
Часрах, йулташ, вăран та,
Кайатпăр сунара.

Çанталăкăн илемĕ
Йумахри пек пайан.
Тăрат, хăйпе килленнĕн,
Лăс çулçăлă вăрман.

Умри çул вăрăм, пысăк.
Утатпăр ĕмĕтпе
Мулкач йĕррийĕ хыççăн
Телей йĕрленĕ пек.

Курнаççĕ тĕллĕн-тĕллĕн
Сарăлнă çулçăсем.
Сайра-ха сивĕ хĕлĕн
Кичемлĕ паллисем.

Хĕлле, часрах çывхарччĕ,
Тултарччĕ кăмăла!
Часрах анса йарнасчĕ
Çут пăрлă Çавала.

○ ◇ ○

### ХĔЛЕ КĔНИ

Кĕрекере пайан Йакур
Ларат тивлетлĕн йурласа.
Илемлĕ, аслă çĕнĕ пӳрт
Хĕлле пек çутă та таса.

Йуман сĕтелĕ авăнат
Тем-тĕрлĕ çимĕç айĕнче.
Сӳнми хаваслăх курăнат
Тулли, хĕрелнĕ питсенче.

Чашлат, йурланăн сăмавар,
Йăлтăртататă анис улма.
Тултар-ха, тусăмçăм, тултар:
Пире хаваслă пурăнма!

Хĕл ситрĕ. Чунăм хĕпĕртет!
Йур çурĕ темĕн çӳлийех...
Пайан кĕрет çĕнĕ пӳрте
Пĕр шутлă, ĕмĕтлĕ çемйе.

# „АРÇУРИ“ ПОЕМĂН АЛÇЫРĂВĔ

Хĕрĕх çул ĕлĕкрех Археологипе Истори тата Етнографи обшчĕствин сотрудникĕ Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхин словарĕ валĕҫи материалсем пухма тытăннă. Çак пысăк ĕçе пĕр хăй-халлĕнех тума пулас çуккине шута илсе, Н. Ашмарин чăваш халăхĕпе, унăн чĕлхипе, кулҫтурипе, йăлисемпе интересленекенсем патне чăваш халăхĕн сăмах пуйанлăхне мĕнле майпа пухасси çинчен кăтартса çырусем салатнă. Çав çырусем вырăнсене çитнĕ хыççăн Н. И. Ашмарин патне чăвашсем пурăнакан тĕрлĕ вырăнсенчен чăнахах та темĕн чухлĕ материалсем—йурăсем, сăвăсем, йумахсем, ваттисен халлапĕсем т. ыт. те пухăнма тытăннă. Материалсене пухса паракансем пуринчен ытла чăваш вĕренекенĕсем, учитĕлĕсем, тата тĕрлĕ ĕçлĕ вырăнсенче тăракан служăшчисем пулнă. Н. И. Ашмарин хăй патне пыракан корреспонденцисене пĕтĕмпех тĕплĕн йĕркелесе, уйрăм томсемпе пĕр çĕре çĕле-çĕле пынă. Çапла майпа 35 çул хушшинче унăн архивĕнче 20 тома йахăн алçыру материалĕсем пухăннă.

Çав материалсем профессăр Ашмарин вилнĕ хыççăн пĕтĕмпех Чăвашсен Кулҫтурăн Наукăпа Тĕпчев Институтне куçрĕç. Вĕсемпе паллашнă чухне епĕр, Ив. Ивникпа иксĕмĕр, М. Федăрăв çырнă „Арçури“ поемăн алçырune тĕлпултăмăр. Малтанах епĕр ку алçырune М. Федăрăв хăй мар, кам та пулин урăх çын çырса йанă пулҫ тесе шутланăччĕ, анчах та ăна тишкеререх вуланă хыççăн тата поемăн халҫхи варианчĕпе танлаштарса пăхнă хыççăн, ăна урăх çын мар, М. Федăрăв хăйех çырса йани курăнчĕ.

Мĕнле тĕслĕхсем тивĕç параççĕ-ха çапла калама? Акă мĕнле тĕслĕхсем:

1. „Арçури“ поемăн алçырăвĕ Ашмарин патне 1900-мĕшпе 1902-мĕш çулсем хушшинче лекнĕ. Чăнахах та, алçырăвĕ хыçĕнче нимĕнле датă та çук, анчах та çав томри материалсенех нумайĕшне 1900 — 1902 çулсем хушшинче датăланă. Ашмарин хăй патне пыракан материалсене вĕсем мĕнле йĕркепе пырса тăнă пекех çĕлесе пыни курăнат. Апла пулсан „Арçури“ алçырăвĕ 1901-мĕш çулта çулла йе кĕркунне лекнĕ тесе шутламала, мĕншĕн тесен ун умĕнхи материалне 1901 çулта май уйăхĕнче тăратнă пулнă.

Чăваш литературин историкĕсем кăтартнă тăрăх, М. Федăрăв „Арçури“ поемăна 1898 ç. çырма тытăннă. 1908-мĕш çулччен вăл ниçта та пичетленсе тухман, çавăнпа та Ашмарин аллине, çынсем çырса йанипе мар, хăй урлă хăвăртрах лекме пултарнă.

2. Чăваш çырулăхне йуратакансем хушшинче „Арçури“ поемă пичетрен тухиччен те нумай сарăлнă тесе калаçаççĕ. Çакăн пирки хăшĕ-пĕрисем Ашмарин материалĕсем хушшинчи алçырune те списăк урлă лекнĕ тесе шухăшлама пултараççĕ. Апла пулсан, поемăн списăксемпе саланнă варианчĕсемпе пичетре çирĕпленсе йулнă халҫхи текст хушшинче ытлашши пысăк уйрăмлăхсем, творчĕствăлă тĕп уйрăмлăхсем пулма тивĕçлĕ мар. Анчах та, çак асăннă икĕ варианта пĕр-пĕринпе йунашар хурса танлаштарса пăхсан, епĕр вĕсем хушшинче питĕ пысăк уйрăмлăх пуррине куратпăр. Ку уйрăмлăх ахалҫ сăмах улшăнăвĕсене, сăмах çаврăнăшсен улшăнăвĕсене анчах тивмест, поемăн уйрăм вырăнĕсен творчĕствăлă, структурăлă улшăнăвĕсене те тивет. Ехер те, çав уйрăмлăхсем поемăна çырса илекенсен кăмăлĕнчен килнĕ тесе шутлас пулсан, çав çырса илекен çынни хăй пысăк поет пулнă тесе шутлама тивнĕ пулĕччĕ; вара çавна пула çĕнĕрен хушнă вырăнсем поемăпа органикăлă çыханайман та пулĕччеç и тен.

Çаксене пурне те шута илсен, каллех çавнах калама тивет: епĕр тишкерекен алçырăвĕ чăнахах та М. Федăрăв хăй аллипе хăй çырса йанăскер çеç пулма пултарат.

Мĕнле уйрăмлăхсем пур-ха „Арçури“ поемăн халҫ тупнă алçырăвĕпе пичетре çирĕпленсе йулнă текст хушшинче? Вĕсене иккĕшне танаштарса пăхсассăн, çакăн пек уйрăмлăхсем куратпăр.

Поемăн алçырăвĕ нимĕнрен малтан хăйĕн пысăкăшĕпе пичетри вариантран уйрăм: алçырăвĕнче пĕтĕмпе 184 йĕрке, пичетре тухнă вариантра—174, вунă йĕрке кайарах. Кăна автăр йурийех çапла тунă, мĕншĕн тесен, пичете парас умĕн вăл поемине тата тепĕр хут пăхса тухса, чылай вырăнсене тӳрлетсе аванлатнă, чылай вырăнсенчи ытлашши йĕркесене пачах кăларса пăрахнă. Ăна епĕр тĕплĕрεххĕн кăтартса пама тăрăшăпăр.

Поемă алçырăвĕ (11-мĕш йĕркерен пуçласа):

Тӳркĕллине тӳрлетме
Тыха тытса пусмала, терĕ.
Киремете килĕшмен,
Çырмаранах çырлахман.
Хур-кăвакал тумасан,
Хĕл-çăвĕпех хĕн курăн.

Пичетри вариант:

Тӳркĕллине тӳрлетме
Тыха тытса пусмала, терĕ.
Арăм сывмар, суйа мар,
Хĕл-çăвĕпех хĕн курат, терĕ

Автăр поемăн малтанхи редакцийĕнчен виçĕ йĕрке кăларса пăрахса, арăм сывмарри çинчен пĕр йĕрке кĕртсе хурат те строфана конкретлăрах, витĕмлĕрех туса хурат, ма тесен, малтанхи редакци тăрăх, мĕншĕн тӳркĕлли тӳрлетме кирли, мĕншĕн тыха пусма кирли татăклă паллă мар. Çапла тунипе М. Федăрăв Карчăк Микулин действине сăлтавлантарат, вулакан патне ĕнентерӳллĕн илсе çитерет.

Малала:

22. Хура пĕлĕтсем тухаççĕ,—
Çăва панчен килеççĕ,
Хăйамата кайаççĕ.

Пичетри вариант:

20. Хура пĕлĕтсем чупаççĕ,
Çăва патĕнчен тухаççĕ,
Хăйаматала кайаççĕ.

Кунта малтанхи йĕркери „тухаççĕ" сăмаха „чупаççĕ" сăмахпа, иккĕмĕш йĕркери „килеççĕ" сăмаха „тухаççĕ" сăмахпа улăштарнă. Ăна акă мĕн пирки тунă тесе шутламала: пĕр йенчен „тухаççĕ"-пе „килеççĕ" сăмахсем туллин рифмăланмаççĕ, тепĕр йенчен, иккĕмĕш варанчĕ действийе ытларах вăйлăлатать, сăнлăха динамикăларах тăвать.

25. Хура вăрман хумханать,—
Хура лаша хартлатать.
Хурамаран ма хăран?

Пичетри вариант:

23. Хура вăрман хумханать,
Хура лаша хартлатать.
—Хура лаша, ан хартлат,
Хурамаран ма хăран?

Йулашки редакцине пĕр йĕрке çĕнĕрен хушса хунă; капла тунипе йулашки ыйтулă пуплев хура лашапа çыхăннине конкретлăн кăтартнă.

35. Сулахайра сулăн пур,
Сылтăм йенче çырма пур,—
Ик айкки те тăвайкки,
Ăста пур-ши сĕвекки?

Пичетри вариант:

34. Сулахайра сулăн пур,
Сылтăм йенче çырма пур,
Хура утпа иксĕмĕр
Çырма хĕрне çитрĕмĕр,
Тăвар-варĕ тăвайкки,
Ăста пур-ши сĕвекки?

Каллех улшăнусем куратпăр. Иккĕмĕш вариант действийе конкретлăлантарать. „Ик айкки те тăвайкки" тенĕ йĕрке шалти рифмăсемпе çыхăннă. Ун вырăнне автăр йанравлăрах сăмахсем тупса, аллитерацилĕ йĕрке кĕртсе хăварать („Тăвар варĕ тăвайкки").

52. Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Ури вăрăм, куç чармак;
Урхас Кушăк вăрманче
Урлă-пирлĕ уткалать,
Урнă йыт пек тулашать,
Вĕрет, сурать, пусмăрлать,
Кăтăкласа вĕлерет.

Пичетри вариант:

53. Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Çавра çил пек çаврăнса,
Çĕмĕртсене çĕмĕрсе,
Сикрĕ тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хусрĕ çурмаран;
Ват çын пекех шур сухаллă,
Качака пек майракалă,
Ури вăрăм, куçĕ чармак,
Урхас Кушăк вăрманĕнче

тата малала та.

Кунта вара автăр çĕнĕрен 6 йĕрке хушса хунă. Малтанхи варианта М. Федăрăв, çителĕклĕ образ паман пирки, арçури йепле „çаврăçил пек сикке тухса" асар-писер инкеклеме тытăннине çавтери ăстан сăнласа кăтартса, йулашки редакцинчи вариантне темиçе хут та ытларах вăйлатать. Кунсăр пуçне вăл арçурич сăнарне те тĕплĕнех сăн-сăпатласа кăтартать („ватă çын пек шур сухаллă, качака пек майракаллă, ури вăрăм, куçĕ чармак").

63. Ах турă çырлах, турă, ан пăрах!
Ху етемне ху упрах!
Çултах вилес пулĕ-и-ха?
Киле çитсе вилесчĕ,
Ыр вилĕмпе вилесчĕ.

Пичетри вариант:

70. —Ах, турă, çырлах, турă, ан пăрах,
Ху етемне ху упрах!
Пире пăхан пихампар,
Ху йыттуна хăвах чар.
Çултах вилес пулĕ-и-ха?
Киле çитсе тăрасчĕ,
Ыр вилĕмпе вилесчĕ.

Каллех йулашки редакцинче икĕ йĕрке çĕнĕрен кĕртнĕ — вăл вăхăтри чăвашăн тĕшмĕшлĕхне, унăн ĕненÿне, йăлине уçса паракан йĕркесем.

78. Хуњăм хĕрĕ хура хĕр,
Хурлăх курма вăл йулать.
Арăм сыв мар, суйа мар,
Хĕлĕ-çупе хĕн курать.
Ачам-пăчам пит айван,
Халиччен суха пуç тытайман.

Пичетри вариант:

87. Хуњăм хĕрĕ хура хĕр,
Хурлăх курма вăл йулать.
Ачам-пăчам пит айван,
Халиччен суха тытайман.

Малтанхи танлаштарусенче епĕр М. Федăрăв хăйĕн поемин иккĕмĕш вариантне çĕнĕрен йĕркесем хушнипе лайăхлатса, вăйлатса, витĕмлентерсе пынине куртăмăр пулсан, кунта вăл ыглашши сăмахсене, поемăпа уйăрлми çыхăнайман йĕркесене йепле кĕскетнине, вĕсене поемăран пачах кăларса ыватнине куратпăр. Чăнахах та, кунта икĕ йĕрки („Арăм сыв мар, суйа мар, хĕлĕн-çавĕн хĕн курать") пит кирлех те мар, мĕншĕн тесен ун çинчен поема пуçламĕшĕнчех пĕрре каланă. Çавăнпа ку йĕркесене поемăран кăларса пăрахнă та М. Федăрăв.

95. Виснер хĕрне çитсессĕн
Вилнĕ карчăк пулчĕ кайрĕ.

Пичетри вариант:

96. Виснер хирне çитсессĕн
Вилнĕ карчăк пулчĕ выртрĕ.

„Хĕрне" сăмаха „хирне" сăмахпа улăштарни кунта автăра „Виснер" тенĕ вырăн чăнахах та хир иккенне хытăрах палăртма кирлĕ пулнă; апла туман пулсан, вулакан Виснере тĕрлĕрен ăнланнă пулĕччĕ: те çырма йачĕ вăл, те хир йачĕ, те вăрман йачĕ? Иккĕмĕш йĕркинче йулашки сăмахне те М. Федăрăв пĕлсе улăштарнă („кайрĕ" вырăнне „выртрĕ"). Паллах, пĕр вилнĕ карчăк кайма пултараймасть, çавăнпа „вилнĕ карчăк пулчĕ выртрĕ" тени кунта вырнаçуларах.

102. Арман патне çитсессĕн
Арман айне кĕрех кайрĕ.
Автан автать, тул çуталать,
Праскав инке çăнăх алать,
Петр пичче çиллене.
Лапка-лапка йур çăвать,
Мулкач сикет йĕр тăвать.

Пичетри вариант:

109. Арман патне çитсессĕн
Арман айне кĕрех кайрĕ.
Лапка-лапка йур çăвать,
Мулкач сикет йĕр тăвать.

Малтанхи вариантран каллех виçĕ йĕркине кăларса пăрахнă, м. т. вĕсем ни поемăн çужетне вăйлатма, ни поемăри геройсен действийĕсемпе характĕрĕсене кăтартса пама тивĕçлĕ таран пултараймаççĕ, çав майпала, вĕсене çаплипех хăварнă пулсан, вĕсем поемăна йăвăрлатса кăна тăнă пулĕччĕç.

121. Пилĕк йуплĕ пилеш пур,
Пилĕк çулхи пулин те
Сенĕк тума пит селĕм.

Пичетри вариант:

125. Пилĕк йуплĕ пилеш пур,
Сенĕк тума пит селĕм.

Автăр кунта сенĕк тума миçе çулхи пилеш йурăхлине ăнлантарса пани кирлех мар тесе шутланă пулас, çавăнпа та „пилĕк çулхи пулин те" тенĕ йĕркине поемăн йулашки вариантне кĕртмен те.

Алçырăвĕн 133-мĕш йĕркинче М. Федăрăв „Паљук" вырăнне Йакур тунă. Кăна вăл сăмах йанравлăхĕшĕн çавăн пек тунă пулмала („Йакур" „Паљук"-ран йанравлăрах).

138. Каç пулттипе сиккипе
Ыраш пусси хĕррипе
Хыт чуптарса пынă чух

Пичетри вариант:

141. Каç пулнипе сиккипе
Ыраш пусси хĕррипе
Çавра-çил пек пынă чух

Малтанхи йĕркери сăмаха автăр хăй улăштарнă тесе шутлама хĕнтерех, мĕншĕн тесен, кунта „каç пулттипе" тени „каç пулнипе" тенинчен вырăнлăрах; ку йĕрке поемăна редакцилекенсен ирĕкĕпе улшăнма пултарнă. „Хыт чуптарса пынă чух" вырăнне „çавра çил пек пынă чух" тенине, паллах автăр хăйех тунă,—йулашки вариант лашалă çын йепле вĕçтерсе хăварт чуптарса пынине картинлăн кăтартса парать.

Арçури мĕнтен пулса кайни çинчен калакан вырăн поемăн пичетре тухнă текстĕнче çапла йĕркесемпе пĕтет:

147. Пыран ута курмасăр
Йытă вилĕмпе вилнĕ, тет.
Леш ухмаххи пулнă, тет.
Мĕн шыраса каçпала
Çав таранччен çÿрес-ши?

Малтанхи вариант тăрăх ку вырăн пачах урăхла. „Леш ухмаххи пулнă, тет" текен йĕрке хыççăн автăр тата сакăр йĕрке кĕртнĕ пулнă. Акă вĕсем:

146. Леш ухмаххи пулнă тет.
Енри канри йĕм канри,
Пушăт чĕлли, хуп татки;
Йалан йалтан тухсассăн,
Çырма урлă каçсассăн,—

Тапхӑр-тапхӑр тапратаҫ,
Ҫӗр чӗтретсе кӑшкӑраҫ,
Хура халӑха хӑратаҫ.
Пирӗн йалти—хыҫалти—
Мӗн шыраса каҫпала
Ҫав таранччен ҫӳрес-ши?

Анчах та поемӑна пичете валҫҫи редакциленӗ чух автӑр ку йӗркесене, кӑштах улӑштаркаласа, поемӑ хыҫне кайса лартнӑ. Алҫырӑвӗ тӑрӑх „Арҫури“ ҫак йӗркесемпе вӗҫленет:

172. Ачасене йуратса,
Вӑрӑм йумаха кӗскетсе,
Йури сыртӑм йурлама
Качча кайас хӗрсене,
Питӗ хӳхӗм вулама
Хут вӗреннӗ ҫынсене,
Урнӑ йыт пек улама
Улах ларан хӗрсене.
Епӗ сыртӑм сӑввине,
Есӗр тупӑр йурррине.
Атӑл хушшинче анатра
Хӑмӑш йурлаҫ, хурланаҫ.
Вайлӑ ҫилпе хумханаҫ.

Ку йӗркесенчен епӗр автӑр хӑйӗн поемнче калас шухӑшсене пӗтӗмпех калаласа пӗтерейменнине куратпӑр. Вӑл хӑйӗх кун ҫинчен уҫҫӑнах систерсе хӑвараҫ: „Вӑрӑм йумаха кӗскетсе йури сыртӑм йурлама качча кайас хӗрсене“... Автӑрӑн планӗ питӗ сарлака та тарӑн пулнӑ, имӗш. Вӑл „Арҫури“ поемине пысӑк произведенийех тума шухӑш тытнӑ мӗн, унӑн пуҫӗнче вӑл произведени планӗсем те пӗтӗмӗшпех йӗркеленсе ҫитнӗ мӗн. Анчах та ҫав пулас пысӑк произведенин ку пайне М. Федӑрӑв „вӑрӑм йумаха кӗскетсе“, йатарласах „качча кайас хӗрсене йурлама“ ҫырнӑ иккен. Вӑл ӑна пролог вырӑнне туса, йурлама та, вулама та йурӑхлӑ пултӑр тенӗ пулмала, сӑвӑнпа та йулашкинчен: „Епӗ сыртӑм сӑввине, есӗр тупӑр йуррине“, тесе пӗлтерет хӑйӗн шухӑшне.

Пулас пысӑк поемӑн малтанхи кӗске вариантне пичете парас умӗн М. Федӑрӑвӑн шухӑшӗ пӑртак улӑшӑннӑ пулас та, вара вӑл ҫак кӗске вариантах литературӑлӑ произведени пек туса кӑларма шут тытнӑ пулас. Ҫавӑн пирки вӑл поемине алҫырӑвӗнчи пек мар, урӑхларах вӗҫлентерет:

167. Ентри кантри йӗм кантри,
Пушӑт чӗлли, хуп татки:
Йалан йалтан тухсассӑн,
Ҫырма урлӑ каҫсассӑн,
Тапхӑр-тапхӑр тапранаҫ;
Ҫӗн уйӑха кӗрсессӗн
Ҫӗр чӗтретсе кӑшкӑраҫ,
Хура халӑха хӑратаҫ.

Ҫапла ӗнтӗ, „Арҫури“ поемӑн алҫырӑвӗпе пичетре тухнӑ текст хушшинче питӗ пысӑк уйрӑмлӑхсем пур. Ку алҫырупе поемӑн иккӗмӗш, йе виҫҫӗмӗш варианчӗ тесе шутламала. Кунсӑр пуҫне ҫак алҫырӑвех М. Федӑрӑв „Арҫури“ поемӑна анлӑ планпа ҫырма ӗмӗтленни ҫинчен кӑтартса параҫ. Вӑл ҫав ӗҫе тунӑ та-и тен, анчах поетӑн материалӗсене пухас тӗлӗшпе кирлӗ таран ӗҫлекенсем пулман пирки епӗр ун ҫинчен нимӗн те пӗлместпӗр. Ҫавна малала тӗпчесе пӗлме кирлӗ.

И. ТУКТАШ.

## ПЙЕСӐСЕН КОНКУРСӖН ИТОГӖ

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Искусствӑ ӗҫӗсен комитечӗ иртнӗ ҫулта пуҫарса йанӑ пйесӑсен конкурсӗ пулса иртрӗ. Декабӗрӗн 13-мӗшӗнче конкурс комиҫҫийӗ йулашки заседани туса иртерчӗ. Конкурса мӗнпурӗ 32 пйеса килнӗ. Комиҫҫи вӗсенчен тӑваттӑшӗн автӑрӗсене преми памала турӗ.

Преми илме тивӗҫлӗ пулнисем: П. Н. Оҫипӑв—„Кӑкламан тымарсем“ пйесӑшӑн—пӗрремӗш преми, 2.500 тенкӗ.

Н. Айзмӑн—„Утне ҫитмен туртине“ комедишӗн—иккӗмӗш преми, 1.500 тенкӗ.

Тихӑн Петӗркки—йатсӑр пйесӑ—иккӗмӗш преми, 1.500 тенкӗ.

Ф. Вукӑлӑв—„Хӑрушӑ каҫ“ пйесӑшӑн—виҫҫӗмӗш преми, 1.000 тенкӗ.

Кунсӑр пуҫне 6 пйесӑна: В. Ваҫилйӗвӑн—„Ултавлӑ шав“, Г. Федӑрӑвӑн—„Маскирующийся враг“ (вырӑс чӗлхипе ҫырнӑ), Семенӑвӑн — „Сатра“ пйесӑсене, авторӗсене 200-шер тенкӗ пулӑшу памала туса, тата Мраҫкан—„Тупа“, Тихӑн Петӗрккин—„Кӗрешӳ“, Ф. Трофимӑвӑн—„Савӑнӑҫ“ пйесисене, автӑрӗсем йусанӑ хыҫҫӑн, пичете пама сӗннӗ.

Преми илнӗ тата пичетлеме сӗннӗ пйесӑсене пурне те 1939 ҫулта тухакан „Сунтал“ журнал ҫине пичетлесе пыраҫҫӗ.

## ХРОНИКӐ

* Кӑҫалхи октабӗрӗн 23-мӗшӗнче Чӑваш совет писатӗлӗсен Сойузӗн правленийӗ ҫумӗнче Чӑваш республикинчи вырӑс писатӗлӗсен секцине организацилерӗҫ. Секци хӑйӗн ӗҫне, Шупашкарти пединститутпа Порецкри районсем ҫумӗнче литературӑ кружокӗсем организациленипе пуҫарса йачӗ. Секци бӳроне секцин организацилӗ пухӑвӗ йышӑннипе, Чиҫтаков, Макарӑв, Бусыгин тата Ведерникӑв йулташсем кӗчӗҫ.

Кунсӑр пуҫне правлени ҫумӗнче чӑваш поечӗсен, прозаикӗсен тата драматургӗсен секцийӗсене организациленӗ. Секцисен пухӑвӗсенче чӑваш писатӗлӗсен ҫӗнӗ произведенийӗсене, литературӑ теори ыйтӑвӗсене тата уйрӑм писатӗлсен творчӗствине сӳтсе-йаваҫҫӗ.

* Кӑҫалхи декабӗрӗн 4-мӗшӗнче пулса иртнӗ Чӑваш совет писатӗлӗсен Сойузӗн правлени заседанийӗнче Украинӑ аслӑ поечӗ Т. Г. Шевченко вилни 125 ҫул тултарнӑ йатпа йубилей иртерме комиҫҫи суйларӗ. Комиҫҫине Уйап Мишши (комиҫҫи председателӗ), Ҫ. В. Елкер, Иван Ивник, Чиҫтаков, Усли Ваҫлейӗ йулташсем кӗчӗҫ. Ҫак заседанирех правлени Т. Г. Шевченко сӑввисене чӑвашла куҫарма Иван Ивникпа Усли Ваҫлейне пӗрер уйахлӑх творчӗствӑ отпускӗ пама йышӑнчӗ.

## ЧӐВАШ ПИСАТӖЛӖСЕН ПРОИЗВЕДЕНИЙӖСЕНЕ ВЫРӐС ЧӖЛХИ ҪИНЕ КУҪАРАҪҪӖ

„ССР Сойузӗнчи халӑхсен творчӗстви“ альманах редакцийӗ ыйтнипе, чӑваш писатӗлӗсен чи лайӑх произведенийӗсене вырӑс чӗлхи ҫине куҫарма Мускавран В. Дубровинпа А. Миних писатӗлсем килчӗҫ. Чӑваш писатӗлӗсем хӑйсен произведенийӗсене вырӑс чӗлхи ҫине куҫарас ӗҫе пысӑк хавасланӑхпа, активлӑн хутшӑнчӗҫ. Альманах валҫҫи П. Оҫипӑв, Ҫ. Елкер, Уйап Мишши, Иван Мучи, Ухсай, Йанкас, Ӗҫхӗл, Ивник, Алга, Малгай, Тукташ, Йалавин, Пайраш, Чулкаҫ, М. Йастран, М. Чалдун, Усли Ваҫлейӗ, П. Митта ҫырнӑ чи лайӑх произведенисене суйласа илме палӑртнӑ.

Хакĕ 1 тенкĕ

## ЖУРНАЛТА ПУРРИ:


Стр.

Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII мĕш сиесĕнче И. В. Сталин йулташ ССРС Конституци проекчĕ çинчен доклад тăват (фото-ӳкерчĕк) . . . . . 1
Марксисăм-ленинисăм теорийĕпе çирĕппĕн хĕçпăшалланар . . . 2
Александр Алка—Ман чĕрере чи ырă йурă (сăвă) . . . . . 3
Валерий Павлăвич Чкалăв . . . . . 4
Иван Ивник—Чкалăва асăнса (сăвă) . . . . . 4
В. Йеремейĕв—Валерий Чкалăв (сăвă) . . . . . 4
Çергей Миронăвич Кирăв (Зверĕв художник картинĕ) . . . . . 5
Леонид Агакăв—Çунатлă хĕр (калав) . . . . . 5
Нестĕр Йанкас сăввисем . . . . . 16
М. Кипек—Курсант Цыганок (калав) . . . . . 17
А. Кăвиҫ, Гаврил Мысҫар сăввисем . . . . . 19
Аркади Еçхĕл—Çĕнĕ сăвăсем . . . . . 20
Иван Малгай—Çĕнĕ сăвăсем . . . . . 22
Ф. Хĕлкей—Çĕнĕ пурнăçшăн (калав) . . . . . 23
Николай Мишен, Арç. Орлов, Пр. Сатур, Еншей сăввисем . . 27
Е. Абакшин—Пурнăç сыпăкĕ (калав) . . . . . 28
А. Васимĕв—Хĕл сăввисем . . . . . 31
Ил. Тукташ—„Арçури“ поемăн алçырăвĕ . . . . . 31
Литературă хыпарĕсем.
Обложкăн 1-мĕш страницинче: Совет Сойузĕн Геройĕ, аслă лейтенант В. П. Винокурăв.



**СУНТАЛ № 12 (164) ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЖУРНАЛ ЛИТЕРАТУРЫ, КРИТИКИ И ИСКУССТВА, ОРГАН СОЮЗ ЧУВАШСКИХ СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ. ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШГИЗ.**

**Редколлегия: С. В. Эльгер, М. Н. Данилов-Чалдун, М. Д. Шумилов (Уйăп М.), Г. С. Семенов.**

Послано в производство 5/XII—1938 г. Подписано к печати 11 I—39

Уполн. Чувашглавлита № 1183. Об'ем 4,25. Формат бумаги 62×94. Доля листа 1/8. Заказ № 887. Тираж 1800 эк

Адрес редакции и издательства: г. Чебоксары, Чувашская АССР, Володарского, 5. Дом печати.

Отпечатано в типографии № 1 НКМП ЧАССР.